**А.А. Ядрицова, И.В. Ядранская**

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

**Вырăс шкулĕн**
**8-мĕш класĕ валли**

# Йышăннă паллăсем:

 — хăвăра тĕрĕслĕр (проверьте себя)

 — ыйтусемпе ĕçсем (вопросы и задания)

 — кăткăс ыйтусемпе ĕçсем (вопросы и задания повышенной сложности)

 — итлев-тăнлав (фонохрестоматия)

 — илемлĕ вулама хăнăхатпăр (учимся читать выразительно)

 — литература теорийĕ (теория литературы)

 — ӳнер тата сăмах тĕнчи (изобразительное искусство и литература)

 — культурăсен çыхăнăвĕ (диалог культур)

 — пултарулăх ĕçĕ (е проект) (творческое задание (или проект))

 — словарь ĕçĕ (словарная работа)

 — халăх ăс-хакăлĕ (народная мудрость)

**Чăваш литератури:** Вĕренӳпе вулав кĕнеки. 8-мĕш класс валли / А.А. Ядрицова, И.В. Ядранская çырса-пухса хатĕрленĕ. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2019. — … с.

Вĕренӳпе вулав кĕнекине пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче усă курма Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ.

# ХАЛĂХ CĂMAХЛĂХĔ — УСТНОЕ НАРОДНОЕ ТВОРЧЕСТВО

## ХАЛĂХ ЮРРИСЕМ - НАРОДНЫЕ ПЕСНИ

Чăваш çĕр-шывĕ пирки çĕр пин сăмах, çĕр пин юрă çĕр-шывĕ теççĕ. Чăнах та, халăхра пĕр ĕç те, пĕр йăла-йĕрке те сăвă-юрăсăр иртмен. «Юрăсăр мĕнле пурăнан: пурнăç çук, савăнăç çук» — тенĕ чăваш ваттисем.

Чăнах та, юрă çынна пурнăç тăршшĕпех пулăшса пырать: йывăр чухне те, лайăх чухне те. Ача çуралать — ăна юрăпа çывратнă. Салтака та юрăпах ăсатнă. Улахра та, кĕрекере те юрă-ташă хуçаланнă.

**Народная песня** — фольклорное произведение, которое сохраняется в народной памяти и передаётся из уст в уста, продукт коллективного устного творчества народа.

**Виды (жанры) народных песен:** плясовые, хороводные, календарно-обрядовые, частушки, колыбельные, трудовые, исторические, рекрутские...

**Халăх юрри** — халăх сăмахлăхĕн чи вăйлă аталаннă жанрĕ; унта халăх кун-çулĕ, йăли-йĕрки, кăмăл-туйăмĕпе шухăш-ĕмĕчĕ, савăнăçĕпе тарăхăвĕ сăнарланнă.

**Халăх юррин ушкăнĕсем:** вăйă, улах, йăла-йĕрке, туй, асăну, ĕçкĕ-çикĕ, бурлак, такмаксем, сăпка, ĕç, истори, салтак …

Юрă — чăваш халăхĕн анлă сарăлнă пысăк пуянлăх.

Халăх юррине кам хывни паллă мар. Халăх юррисене хăçан, ăçта, мĕн тĕллевпе юрланине кура тĕрлĕ ушкăна пайлама пулать.

**Ĕç юррисем** ĕçлекенсен хусканăвĕсене кирлĕ пек йĕркелеме, ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшнă. Вĕсен шутне ака-суха тăвакансен, ниме юррисем, авăн çапакансен, утă çулакансен, пир çапакансен юррисем кĕреççĕ.

**Йăла-йĕрке юррисем** авалхи савăнăçлă е хурлăхлă йăласемпе çыхăннă. Чăвашсен çулсеренирттерекен йăласем те пулнă: Сурхури, Çăварни, Калăм, Çимĕк, Кĕр сăри…

**Кулленхи йăла юррисем** туй йĕркипе, салтака ăсатнипе, вилнисене асăннипе çыхăннă.

Халăх юррисем темăпа тата шухăшпа çеç мар, сăнлăх мелĕсемпе те пуян: сасăсен янравлăхĕпе, сăнарлă чĕлхепе.

Чăваш çырулăхĕ аталаннă май халăх юррисене пухма, тĕпчеме, илемлетме тытăннă. XX ĕмĕрте çак ĕçе Степан Максимов, Фёдор Павлов, Василий Воробьев, Герман Лебедев, Григорий Хирпю, Филипп Лукин хастар хутшăннă.

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Халăх юррисене кам хывни паллă-и?
2. Чăваш халăх юррисен мĕнле ушкăнĕсене пĕлетĕр?
3. Халăх юррисем мĕнпе пуян?
4. Чăваш халăх юррисене кам-кам пухнă? Вĕсене мĕн тĕллевпе пухнă-ши?

5. Чăваш халăхĕ юрăпа ăçта-ăçта усă курнă? Юрă çынсене мĕнле пулăшса пынă?
6. Мĕншĕн Чăваш çĕр-шывĕ пирки çĕр пин сăмах, çĕр пин юрă çĕр-шывĕ теççĕ?

## АЛРАН КАЙМИ АКИ-СУХИ

Алран кайми аки-сухи!
Асран кайми атти-анни!
Ая-ай-ай, ая-ай-ай.

Асран кайми пĕлĕш-тантăш!
Пуринчен пахи ял-йыш, пускил!
Ая-ай-ай,ая-ай-ай.

Ай ĕçер-и, ай çиер-и,
Виличчен пĕрле ай пурнар-и?
Ая-ай-ай, ая-ай-ай.

Алран кайми аки-сухи!
Асран кайми атти-анни!
Ая-ай-ай, ая-ай-ай.

### Словарь ĕçĕ

**ака-суха** — плуг и соха
**пускил (кӳршĕ)** — сосед
**пĕлĕш-тантăш** — знакомые, ровесники

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Юрра мĕнле кăмăл-туйăмпа юрламалла? Савăнăçлă-и? Е хурлăхлă-и? Мĕншĕн?
2. Ку юрра хăçан юрланă?
3. Ĕç тунине юррăн хăш йĕркисем кăтартаççĕ? Вĕсене тепĕр хут илемлĕ вуласа парăр.
4. Тăванлăха тата туслăха хăш йĕркесем кăтартаççĕ?
5. Мĕншĕн çак юрра чăваш халăх гимнĕ теççĕ?

## УЙ ВАРРИНЧЕ

Уй варринче, лаштра юман,
Атте тесе, ай, кайрăм та.
Килех ывлăм, ай, темерĕ,
Чун, хурланчĕ, макăртăм та.

Уй варринче, чечен çăка,
Анне тесе, ай, кайрăм та.
Килех ывлăм, ай, темерĕ,
Чун, хурланчĕ, макăртăм та.

Уй варринче, шурă хурăн,
Савни тесе, ай, кайрăм та.
Килех савни, ай, темерĕ,
Чун, хурланчĕ, макăртăм та.

### Словарь ĕçĕ

**лаштра юман** — развесистый, раскидистый, с густой кроной
**чечен** — красивый, изящный, очаровательный
**хурлан (кулян)** — печалиться, горевать, грустить, расстраиваться
**чун** — душа

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Юрăра аттене (аннене, савнине) мĕнле йывăçсемпе танлаштарнă? Мĕншĕн?
2. Мĕнле шутлатăр, çак юрра хăçан тата кам юрланă?
3. Чăваш энциклопедийĕнче çак юрра рекрут юрри тесе палăртнă. Кам вăл рекрут?
4. Интернет уçлăхĕнчи Чăваш энциклопедийĕнчен (http://enc.cap.ru/) юрă пирки тĕплĕн вуласа пĕлĕр.

## ВĔÇ-ВĔÇ КУККУК

Вĕç-вĕç куккук, вĕç куккук
Вăрман хĕрне çитиччен.
Вăрман хĕрне çитсессĕн
Юман çине ларса кан.

Чăт-чăт тăван, чăт тăван
Эпир тухса кайиччен.
Эпир тухса кайсассăн
Кĕрекене ларса кан.

Вĕç-вĕç шăпчăк, вĕç шăпчăк
Вăрман хĕрне çитиччен.
Вăрман хĕрне çитсессĕн
Чăрăш тăрне ларса кан.

Чăт-чăт тăван, чăт тăван
Эпир тухса кайиччен.
Эпир тухса кайсассăн
Тӳшек çине выртса кан.

### Словарь ĕçĕ

**кĕреке** — передний, красный угол (в избе)
**тӳшек** — перина

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Юрă сăмахĕсене тепĕр хут вулăр, унăн çаврисем еплерех вырнаçнине сăнăр, тишкерĕр.
2. Ку юрра хăçан тата мĕнле кăмăл-туйăмпа юрланă? Мĕншĕн?
3. Юрăри повтор мелне тупса палăртăр. Вĕсене мĕн тĕллевпе усă курнă-ши?

### Итлев-тăнлав

«Алран кайми аки-сухи», «Уй варринче», «Вĕç-вĕç куккук» халăх юррисене итлĕр. Юрăсем мĕнле туйăм çуратрĕç? Юрă сăмахĕсемпе кĕвви пĕр килет-ши? Каласа парăр.

### Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Халăх юррисенчен пĕрне пăхмасăр юрлама вĕренĕр. Хăвăр итленĕ юрă çеммине (ритма) тĕрĕс юрласа пама тăрăшăр.

### Культурăсен çыхăнăвĕ

Вырăс халăх юррисенчен пĕрне итлесе пăхăр. Чăваш халăх юррисемпе танлаштарăр. Мĕнле уйрăмлăх калама пултаратăр?

## Фёдор Павлов
## (1892 – 1931)



***Федор Павлович Павлов*** *— чăваш сăвăçи, драматургĕ, композиторĕ, дирижёрĕ, чăваш драматургийĕн тата профессилле музыкин никĕсĕсене хываканĕсенчен пĕри. Вăл Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьел ялĕнче çуралнă. Ялти шкулта, Иккассинчи икĕ класлă шкулта, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче, миравай судьяра, псалом вулаканĕнче ĕçленĕ. Унăн пултарулăхĕ пысăк, анлă. Ф. Павлов чăвашла тата вырăсла лирика сăввисем, драма, камит, калавсем, фельетонсем, статьясем çырнă. Çыравçă ĕçĕпе пĕрлех музыка енĕпе те ĕçленĕ, Чăваш патшалăх капеллин дирижёрĕ пулнă. Унăн ячĕпе Шупашкарти музыка училищи хисепленсе тăрать.*

*Ф. Павловăн паллăрах ĕçĕсем: «Ялта» (В деревне) драма, «Сутра» (На суде) камит, «Сăрнай» (Сырнай) юрă пуххи. Вĕсем чăваш литературипе музыкин ылтăн пуянлăхĕ шутланаççĕ.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Федор Павловăн пултарулăхĕ чăннипех те анлă пулнине тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.
2. Çыравçăн паллăрах ĕçĕсене калăр.
3. Федор Павлов ăçта-ăçта пĕлӳ пухнă?
4. Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн Шупашкарти музыка училищи Федор Павловăн ячĕпе хисепленсе тăрать?

## ВĔЛЛЕ ХУРЧĔ

Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
Мĕншĕн эсĕ нăрлатăн?
Сарă чечек тăрринче
Çавăрăнса çӳретĕн?

Сарă чечек тăрринче
Пыллă карас терĕн-им?
Шанса каяс илемне
Çутă сывлăм терĕн-им?

Ах, шухăшăм, шухăшăм!
Мĕншĕн эсĕ пăтранан?
Сарă хитре хĕрĕшĕн
Мĕншĕн ăша çунтаран?

Сарă хĕрĕн илемне
Хĕвел çутти терĕн-им?
Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,
Шав нăрлатать, çаврăнать —

Ман ăшра та çавăн пек
Тĕрлĕ шухăш пăтранать,
Хитре сарă хĕрĕшĕн
Çамрăк ăша çунтарать...

### Словарь ĕçĕ

**вĕлле хурчĕ** — пчела
**нăрлат (нăрăлтат)** — жужжать
**çавăрăнса çӳретĕн** — кружишь
**пыллă карас** — сотовый мёд
**шухăш** — мысли, думы
**шухăш пăтранать** — мысли путаются

**Авторские песни (профессиональные песни)** — музыкальные произведения композиторов на стихи поэтов.

**Литература юррисем** — поэтсен сăввисем тăрăх композиторсем кĕвĕленĕ юрăсем.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Юрăри ыйтусене тепĕр хут вуласа парăр. Вĕсене автор мĕншĕн кĕртнĕ? Хуравĕсене юрăри сăмахсенче тупăр.
2. *«Ах, шухăшăм, шухăшăм!*
   *Мĕншĕн эсĕ пăтранан?»*, — юрă йĕркисене мĕнле ăнланатăр?
3. Ф.П. Павлов юррине мĕнле кăмăл-туйăмпа юрламалла? Савăнăçлă-и? Е хурлăхлă-и? Мĕншĕн?

## Итлев-тăнлав

Ф. Павлов çырнă «Вĕлле хурчĕ» юрра итлесе пăхăр та юрласа пăхăр. Юрă мĕнле туйăм çуратрĕ?

### Илле Тукташ
### (1907 – 1957)



***Илле Тукташ (Илья Семенович Семенов)*** *— чăваш сăвăçи, прозаикĕ, фольклорисчĕ, куçаруçă. Вăл Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялĕнче çуралнă. Ялти пуçламăш, Хĕрлĕ Чутайри сакăр çул вĕренмелли шкулсенче, совпартшкулта вĕреннĕ. Элĕк вулăсĕн комсомол комитечĕн секретарĕнче, «Çамрăк хресчен» хаçатпа, «Хатĕр пул» журнал редакцийĕсенче, Самар хулинчи «Колхозник» хаçат редакцинче, Чăваш кĕнеке издательствинче, чăваш ăслăлăх тĕпчев институтĕнче ĕçленĕ. 1942 - 1944 çулсенче фронтра дивизи хаçачĕн корреспонденчĕ пулнă. Вăрçăран таврăнсан ăна Чăваш çыравçисен пĕрлешĕвĕн председателĕ пулма суйланă.*

*Сăвăçăн пултарулăхĕ пысăк. Вăл лирика сăввисем çырнă, чăваш фольклорне пухса кăларас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Чăваш композиторĕсем унăн сăввисемпе чылай юрă хывнă. Çавăн пекех вăл «Слово о полку Игореве», М.Шолоховăн «Тихий Дон», «Поднятая целина» романĕсене, У. Шекспирăн сонечĕсене, В. Лебедев-Кумачăн юррисене чăвашла куçарнă.*

*И. Тукташăн паллăрах кĕнекисем: «Вăкăр çырми» (Бычий лог), «Хура кушак» (Черная кошка), «Телей чечекĕ» (Цветок счастья), «Çĕр хуçисем» (Хозяева земли). Вĕсем чăваш литературин ылтăн пуянлăхĕ шутланаççĕ.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Чăваш Республикин гимнĕ мĕн ятлă? Унăн авторĕсем камсем?
2. Илле Тукташ литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
3. Çыравçă Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă-и?
4. Илле Тукташ камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?

## ХĔЛЛЕХИ ИЛЕМ

Вăш-вăш, вăш-вăш ай çил вĕрет.
Каш-каш, каш-каш вăрман
кашлать,
Шап-шур сухаллă Хĕл Мучи
Питрен-куçран, ай, хыпашлать.
Ух! шеремет.

Çил ачисем сиккипеле
Кĕртсем тăрăх чупкалаççĕ.
Мĕн пур хăрăк туратсене
Турта-турта хуçкалаççĕ.
Шарт! тутараççĕ.

Армак-чармак ват юманĕ
Шухă çилпе, ай, тавлашать;
Чĕрик-чĕрик чĕриклетсе
Аллисемпе сулкалашать.
Ух! тăрмашать.

Ешĕл тумтирлĕ чăрăшĕ
Вăш-вăш çилпе авкаланать,
Шап-шур пĕркенчĕк юр çине
Кĕмĕл укçа, ай, сапалать.
Их! сапалать.

Тулли уйăх пĕлĕт çине
Хуллен-хуллен шуса тухать.
Лăпкă-лăпкă ялсем çине
Ылтăн-кĕмĕл пĕрчи тăкать.
Эх! тăкать.

### Словарь ĕçĕ

**вăш-вăш** — подражание шуму, шороху ветра
**каш-каш** — подражание шуму леса,
**хыпашла** — щупать, ощупывать шарить
**шеремет** — бедняжка, бедняга
**çил ачи** — ветерок
**кĕрт** — сугроб
**хăрăк турат** — сухая ветка
**шарт** — подражание треску, хрусту
**армак-чармак** — растопыренный
**шухă çил** — резвый ветер
**чĕрик-чĕрик чĕриклет** — подражание скрипу
**сулкала** — размахивать
**тăрмаш** — возиться
**сапала** — раскидывать, разбрасывать
**тулли уйăх** — полная луна

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăра çулталăкăн хăш вăхăтне сăнланă? Хурава сăвă йĕркисемпе çирĕплетĕр.
2. Сăвăра Хĕл Мучи (Çил ачисем, юман, чăрăш, уйăх) çинчен мĕн каланă?
3. Сăвăра кашни çаврарах автор евĕрлев сăмахĕсемпе тата междометисемпе усă курать. Вĕсене автор мĕншĕн кĕртнĕ? Хăвăр шухăша сăвăри йĕркесемпе усă курса ăнлантарăр.

XX ĕмĕрте чăваш юррине çĕнĕ сăн кĕртме пулăшнă поэтсем хушшинче Илле Тукташ, Иван Ивник, Василий Давыдов-Анатри, Иван Ивник, Юрий Сементер палăрнă. Аристарх Орлов-Шуçăм Филипп Лукин, Григорий Хирбю, Юрий Кудаков, Александр Васильев композиторсем вĕсен сăввисем тăрăх çĕр-çĕр юрă хывнă. Сăвă тата кĕвĕ ăстисем хăйсен пултарулăхĕнче халăх юррисене ырă тĕслĕх выранне хурса вĕсемпе час-час усă курнă, çак жанра малалла аталантарнă.

## Итлев-тăнлав

И. Тукташ çырнă «Хĕллехи илем» сăвă сăмахĕсемпе А. Орлов-Шуçăм композитор хывнă юрра итлесе пăхăр та юрласа пăхăр. Юрă мĕнле туйăм çуратрĕ?

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Илле Тукташăн «Хĕллехи илем» сăввине Александр Пушкинăн «Зимний вечер» сăввипе танлаштарăр, пĕр пеклĕхпе уйрăмлăхсем тупса палăртăр.

**Зимний вечер**

Буря мглою небо кроет,
Вихри снежные крутя;
То, как зверь, она завоет,
То заплачет, как дитя,

То по кровле обветшалой,
Вдруг соломой зашумит,
То, как путник запоздалый,
К нам в окошко застучит.

*А. Пушкин*

### Аристарх Орлов-Шуçăм
### (1914 - 1996)



***Аристарх Гаврилович Орлов-Шуçăм*** *— композитор, дирижĕр, Чăваш Республикин искусство тава тивĕçĕ ĕçченĕ, чăваш халăх артисчĕ, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Вăл Çĕрпӳ районĕнчи Уйкасси ялĕнче çуралнă. Чăваш музыкăпа театр техникумĕнче, Ленинградри консерваторире вĕреннĕ. Чăваш юрăпа ташă ансамблĕнче, Чăваш республикин халăх пултарулăхĕн çурчĕн пуçлăхĕнче вăй хунă. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче çар пултарулăх ансамблĕн пуçлăхĕ пулнă.*

*Композитор музыка комедийĕсем, такмаксем, опереттăсем, оперăсем çырнă. Вăл ытларах чăваш халăх юррисене илемлетнĕ.*

*А. Г. Орлов-Шуçăм А. Алга, И. Тукташ, М. Волкова, А. Пономарев, С. Баранова, Ю. Петров, В. Давыдова-Анатри, А. Лукин тата ытти çыравçăсен сăввисемпе юрăсем хывнă. Унăн паллăрах хайлавĕсем: «Кĕтнĕ хăна юрри» (Песня желанного гостя), «Авăнмасăр, вăй хумасăр» (Не приложив силы), «Хĕл илемĕ» (Зимняя краса) юрăсем, «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» (Когда расцветает черёмуха) музыка комедийĕ, «Çăлтăр витĕр çул» (Звёздный путь) опера, «Шупашкарта» (В Чебоксарах) оперетта.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. А. Г. Орлов-Шуçăм хăш çыравçăсен сăввисемпе юрăсем хывнă? Композиторăн паллă хайлавĕсене калăр.
2. Вăл Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă-и?

## ПĔЛĔВЕ СУТĂН ИЛЕЙМĔН — ЗНАНИЕ ЗА ДЕНЬГИ НЕ КУПИШЬ

### Спиридон Михайлов-Янтуш
### (1821 - 1861)



***Спиридон Михайлович Михайлов-Янтуш*** *— чăвашран тухнă чи пирвайхи çыравçă, фольклорист, этнограф тата историк. Вăл Муркаш районĕнчи Юнкăпуç ялĕнче çуралнă. Ашшĕ ăна Чикме хулине Михеев сутăç патне вĕренмешкĕн янă. Унта вăл чиркӳ азбукине тата тĕн кĕнекине вулама хăнăхнă, хăй тĕллĕнех хут ĕçне хăнăхса пынă. Вырăс тата чăваш халăх историйĕпе интересленнĕ. Вăл тĕрлĕ вулăс правленийĕсенче, земство полицийĕнче, Чикмери земство сучĕн куçаруçинче ĕçленĕ. Ытларах этнографи, истори, географи тата статистика тĕлĕшĕнчен статьясемпе заметкăсем çырнă, калав жанрĕнче ĕçленĕ. С. М. Михайлов чăваш калавĕн жанрне пуçарса яраканĕсенчен пĕри.*

*Наукăпа тĕпчев, литературăпа публицистикăри ĕçсемшĕн Раççейри географи пĕрлешĕвĕн кĕмĕл медальне илме тивĕçлĕ пулнă.*

*Çыравçăн паллăрах ĕçĕсем: «Чăваш кĕвви-çемми çинчен» (О чувашской музыке), «Чăваш туйĕсем» (Чувашские свадьбы) очеркĕсем, «Чее кушак» (Хитрая кошка) калавĕ, «Чăваш юррисемпе каларăшсем» (Чувашские песни, пословицы, приметы) кĕнеки.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Спиридон Михайлов-Янтуш ăçта вĕреннĕ? Унăн вĕрентекенĕ кам пулнă?
2. С. Михайлов-Янтушăн пултарулăхĕ чăннипех те анлă пулнине тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр. Вăл чăваш литературинче хăш жанра пуçарса яраканĕ шутланать?
3. Çыравçăн паллăрах ĕçĕсем чăваш халăхĕн пурнăçĕпе çыхăннине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парăр.

### ХУТЛА ВĔРЕНЕС КИЛЕТ
*«Хам çинчен» очерк сыпăкĕ*

Эпĕ пилĕк çултаччĕ. Манăн питĕ хутла вĕренес килетчĕ. Хам пĕр сас палли те палламан. Çапах та кĕнекесене уçкаласа ларма кăмăллаттăм. Вăл кĕнекесем маншăн питĕ асамлăччĕ.

Хутла вĕренес килнипе эпĕ хӳмесем çине тĕрлĕ эрешсем ӳкерме юрататтăм. Пĕррехинче ун пек аппаланнăшăн атте мана хытă ятланăччĕ. Анчах манăн хутла вĕренес кăмăлăм ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ.

— Хутла вĕренес килет! Хутла вĕрент-ха, — тесе хытă макăраттăм.

Анчах атте мана пулăшма пултарайман çав. Ман вăхăтра чăвашсем хушшинче хутла вĕреннĕ çынсем питĕ сахалччĕ. Пуррисене те салтака тыта-тыта янă.

Пĕррехинче атте Чикме хулине Михеев купса патне кайма пуçтаранчĕ. Хăйпе пĕрле мана та илме пулчĕ. «Ну халĕ хутла вĕренетĕпех», — шутлатăп эпĕ.

## Словарь ĕçĕ

**хутла вĕрен** — обучаться грамоте
**сас палли палла** — знать буквы
**уçкаласа лар** — перелистывать
**асамлă** — волшебный (-ая, -ое, -ые)
**аппалан** — заниматься
**ятла** — ругать
**Чикме хули** — город Козьмодемьянск
**салтака тыта-тыта янă** — отправляли в солдаты

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Вуланă очерк сыпăкĕн темине палăртăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕн вăл очерк? Вуланă очерк сыпăкĕнче автор кам çинчен çырнă?
2. Автор мĕн-мĕн тума юратнă?
3. Мĕншĕн вăл хӳмесем çине тĕрлĕ эрешсем ӳкернĕ?
4. Ашшĕ ятланă хыççăн авторăн хутла вĕренес кăмăлĕ пĕтнĕ-и?
5. Ăна ашшĕ хутла вĕрентме пултарнă-и? Мĕншĕн?
6. Авторăн хутла вĕренес кăмăлĕ хăçан пурнăçланнă-ши?
7. С.М. Михайлов очерк сыпăкĕнче чăвашсен хăш вăхăтĕнчи пурнăçне кăтартса панă?

**Очерк** — малый литературный жанр, основанное на фактах, документах, наблюдениях автора.
**Очерк** — эпика литературин пĕчĕк формин тĕсĕ. Очерк чăн пулăмсене тĕпе хурать, чăн çынсене сăнласа парать.

## Культурăсен çыхăнăвĕ

1. Ытти халăх çыравçисен очерк жанрĕпе çырнă хайлавĕсене аса илĕр. Очерксен авторне тата темине палăртăр.
2. М. Ломоносовăн ачалăхри пурнăçĕн тапхăрне аса илĕр. Унăн ашшĕ кам пулнă? Вăл вĕренме ăçта тухса кайнă? Унта вăл мĕнле майпа лекнĕ? М. Ломоносов пурнăçĕн çак тапхăрне С. Михайлов-Янтушăн пурнăçĕнчи ачалăх тапхăрĕпе танлаштарăр, пĕр пеклĕхпе уйрăмлăхĕсене тупса палăртăр.

## Ӳнер тата сăмах тĕнчи

6-мĕш класс валли хатĕрленĕ «Чăваш литератури» вĕренӳпе вулав кĕнекинчи Н. Овчинниковăн «И.Н.Ульянов тата И.Я. Яковлев чăваш шкулĕнче» картинине аса илĕр. Унта художник камсен сăнарĕсене

кăтартнă? Ачасем мĕн тăваççĕ? Н. Овчинников картинипе С.Михайлов-Янтуш çырнă очерк сыпăкĕ мĕн енчен тӳр килеççĕ?

## Пултарулăх ĕçĕ

Хăвăр аслаçăр е асаннĕр (кукаçăр е кукамăр) пурнăçĕ çинчен пысăках мар очерк çырăр. Очерка ят парăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вырăсла куçарăр е тӳр килекен вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Ăса мул тумасть, мула ăс тăвать.
2. Вĕреннĕ çын вĕренерен те хурама тăвĕ.
3. Вĕреннĕ çын виçĕ айванран ирттерет.
4. Вĕреннĕ çынна виçĕ айван вĕрентес çук.
5. Вĕреннĕ çын – тăвата çын.
6. Вĕрентекене аçу-аннӳне хисепленĕ пек хисепле.

### Иван Яковлев
### (1848 - 1930)



*__Иван Яковлевич Яковлев__ — чăваш халăхне çутта кăларакан ĕ, чăваш çырулăхне йĕркелекенĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçаканĕ. Вăл 1848 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче хальхи Тутар Республикине кĕрекен Кăнна-Кушки ятлă чăваш ялĕнче çуралнă. Шкулта, çĕр виçекен шкулта, Чĕмпĕр гимназийĕнче, Хусан университетĕнче вĕреннĕ. Çĕр виçекенре, Чăваш шкулĕн инспекторĕнче, Чĕмпĕр чăваш шкулĕн ертӳçинче ĕçленĕ.*

*Хусан университетĕнче И.Я. Яковлев Н.И. Ильминский профессорпа паллашать. Профессора вăл хăй чăвашсене çутта кăларасси çинчен ĕмĕтленнине пĕлтерет. Ильминский унăн ĕмĕтне ырлать, ăна виличченех пулăшса пырать. Хăй никĕсленĕ Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче Иван Яковлев Ильминский системипе ĕçлет, малтан ачасене хăйсен тăван чĕлхипе вĕрентет, ун хыççăн кăна вырăс чĕлхи çине куçать. Профессор пулăшнипех Иван Яковлев чăвашсем валли çĕнĕ алфавит тунă.*

*И.Я. Яковлев ачасем валли кĕске калавсем, хайласем (притчăсем) çырнă. Чăваш просветителĕ куçаруçă ĕçĕнче те вăй хунă. Вăл Л.Н. Толстой калавĕсене, Библин Çĕнĕ халалне чăвашла куçарнă.*

*Хăйĕн пурнăçĕ тăршшипе Яковлев чăвашла 100 ытла кĕнекепе брошюра кăларнă. Вĕсенчен чи палли — «Чăваш халапĕсем» (Сказки и предания чуваш).*

*Паллă просветитель 1930 çулта вилнĕ. Ăна Мускавра Ваганьково масарĕнче пытарнă.*

*Хальхи вăхăтра Чăваш патшалăх педагогика университечĕ И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленсе тăрать. И.Я. Яковлев палăкĕ Шупашкарта Чăваш наци библиотеки умĕнче вырнаçнă. Кунсăр пуçне И.Я. Яковлев музейĕ Шупашкар хулинче те, тăван ялĕнче те, Чĕмпĕрте те пур.*

**Духовное завещание** — предсмертные нравственные и духовные заветы, пожелания и просьбы о совершении благих действий, адресованные как правило не наследникам, а другим людям, общественным, политическим, творческим и иным деятелям, социальным группам, всему обществу.

**Халал** — аслă çын кĕçĕннисене, ятлă-сумлă çын тăван халăха ырлăх-сывлăх сунса, малашлăхра йĕркеллĕ пурăнма халалласа каланă сăмах, пил, пехил.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Чĕмпĕрти чăваш шкулне кам уçнă?
2. И.Я. Яковлев ăçта çуралнă? Вăл çуралнă вырăна карта çинче тупăр.
3. Иван Яковлев Ильминский системипе ĕçленĕ. «Ильминский системи» тени мĕне пĕлтерет?
4. Чăваш халăхне çутта кăларакан литературăра мĕнле ĕçсемпе палăрса юлнă?
5. И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленсе тăракан мĕнле объектсем пур?

## ЧĂВАШ ХАЛĂХНЕ ПАНĂ ХАЛАЛ

*Халал сыпăкĕ*

Вĕренсе çутăлма телей тупнă чăвашсене калам тата. Ас туса тăрăр! Пайсăр тăрса юлнă хăвăрăн мĕскĕн чăваш тăван халăхăра эсир пулăшса пурăнмалла; вĕсене ăçтан та пулин катаран пулăшу килĕ-ха тесе тăмалла мар. Ан манăр! Вĕсене вĕрентсе çутăлтарас ĕç пуринчен ытла сирĕн çинче пулмалла. Эсир вĕсен хушшинчен тухса çутăлнă çынсем. Вĕренӳлĕх пĕлсе тăракан пурлăха пуçтарса, эсир хăвăрăн тăван халăхăр патне таврăнăр, вара патшалăхра чăн лайăх этем мĕнле пулмалли çинчен вĕсене каласа ăнлантарăр; закон çинчен тата халăх хушшинче пулмалли тӳрĕлĕх çинчен вĕрентĕр. Çакăншăн тăрăшассине эсир хăвăр çине илмелле: эсир çав халăх хушшинчен тухнă çынсем. Тăван халăхăрăн çуклăхĕнчен, начарлăхĕнчен, вăл тĕттĕмре пурăннинчен ан вăтанăр: эсир вĕсен хушшинчен тухнă, ĕçлессе те вĕсемшĕн ĕçлемелле. Çапла вара эсир халăх вăйĕпе хăвăршăн пуçтарнă ăсăршăн вĕсене парăм тӳлерĕр пулать. Кĕçĕн тăванăрсем умĕнче эсир хăвăр парăмăра манманшăн халăх кăмăлĕ сире кирлĕ таран тавăрĕ. Ан манăр, çакна ас туса тăрăр! Эсир хăвăр халăхăрăн чĕлхине тирĕс тăмасан, халăх кăмăлне пĕтĕмпех хăвăр аллăрта тытса тăрăр.

## Словарь ĕçĕ

Интернет уçлăхĕнче панă сыпăкпа тӳр килекен сыпăка «Духовное завещание чувашскому народу» вырăсла вариантра тупăр. Словарь ĕçĕнче панă сăмах майлашăвĕсене ăнланăр.

**вĕренсе çутăлма телей тупнă —**
**пайсăр тăрса юлнă —**
**ăçтан та пулин катаран пулăшу килĕ —**
**вĕрентсе çутăлтарас ĕç —**
**вĕренӳлĕх пĕлсе тăракан пурлăха пуçтар —**

**чăн лайăх этем мĕнле пулмалли çинчен —**
**халăх хушшинче пулмалли тÿрĕлĕх çинчен —**

**ан вăтанăр —**
**парăм тÿлерĕр пулать —**
**халăххăрăн чĕлхине тирĕс тăмасан —**

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕн вăл халал? Халал сăмахăн синонимне тупăр?
2. Халала И.Я. Яковлев хăш халăха «панă»?
3. И.Я. Яковлев çырнă халал сыпăкĕ мĕн çинчен?
4. *«Пайсăр тăрса юлнă чăвашсем»* тени мĕне пĕлтерет?
5. Пайсăр тăрса юлнă чăвашсене камсен пулăшса пурăнмаллине палăртать чăваш халăхне çутта кăлараканĕ?
6. Вĕреннĕ чăвашсен вĕренмен чăвашсене мĕн каласа ăнлантармалла, мĕн вĕрентмелле?
7. Мĕншĕн И. Яковлев тăван халăхăн çуклăхĕнчен, начарлăхĕнчен, вăл тĕттĕмре пурăннинчен вăтанма хушмасть?
8. Вĕренме тÿр килнĕ чăвашсем хăйсен парăмне мĕнле майпа тÿлесе татма пултараççĕ-ши?
9. И.Я. Яковлев вĕренмен чăвашсене вĕреннĕ чăвашсен «кĕçĕн тăванĕсем» тесе палăртать. Мĕншĕн-ши?

## Итлев-тăнлав

И.Я. Яковлев çырнă халал сыпăкне актер вуланине итлесе пăхăр. Актер мĕнле майпа пайсăр тăрса юлнă чăвашсене вĕренме тÿр килнĕ чăвашсене пулăшса пурăнмалли çинчен калакан автор шухăшне тĕрĕс палăртать?

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Халал сыпăкне илемлĕ те палăртуллă вулама вĕренĕр. Интонаципе тĕрĕс усă курса автор шухăшне тĕрĕс палăртăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

Вĕренме чĕнсе хăвăр юлташăрсем патне калăпăшĕпе пысăках мар халал çырăр. Халала ят парăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

1. *Панă сăмахсенчен ваттисен сăмахĕ пуçтарăр.*
Ăса, мула, ăс, тумасть, тăвать, мул.

2. *Вĕренÿ çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене аса илĕр.*

# ЧĔМПĔРТИ ЧĂВАШ ШКУЛĔ —
# СИМБИРСКАЯ ЧУВАШСКАЯ ШКОЛА


Иван Юркин


Трубина Мархви


Константин Иванов


Тайăр Тимкки


Никифор Охотников


Николай Шупуççынни


Ваççа Аниççи

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Сăн ÿкерчĕксене тимлĕн пăхса тухăр. Мĕнле шухăшлатăр, çак çынсене мĕн пĕрлештерсе тăрать-ши?
2. Константин Иванов, Трубина Мархви çинчен эсир илтнĕ-и? Вĕсем вĕреннĕ шкула кам уçнă?
3. Иван Яковлев хăш Республикăра çуралса ÿснĕ? Вăл çуралнă вырăна карта çинче тупăр.
4. Литература пултарулăхĕнче чăваш халăхне çутта кăларакан ытларах хăш жанрта ĕçленĕ?
5. *«Ĕçлесе çисен çăкăр та тутлă, тăрансан пыл та йÿçĕ»* текен шухăш Иван Яковлевăн хăш хайлавĕнчен?

## ЧĂВАШ ХАЛĂХНЕ ПАНĂ ХАЛАЛ
*Халал сыпăкĕ*

Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан хытă

тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьенĕн лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар. Ӳтĕре ясарпа ан варлăр, ӳсĕртекен, астаракан япаларан шикленĕр. Çемйĕре сыхă усрасан, ачăрсене чипер упраса пурăнсан, килĕштерсе лăпкă ĕçлесе пурăнма хăвăр валли тĕреклĕ чарак лартса хурăр.

## Словарь ĕçĕ

Интернет уçлăхĕнче панă сыпăкпа тӳр килекен сыпăка «Духовное завещание чувашскому народу» вырăсла вариантра тупăр. Словарь ĕçĕнче панă сăмах майлашăвĕсене ăнланăр.

**халăх чаракĕ —**
**патшалăх чаракĕ —**
**ваттисем каланă сăмах —**
**пурнăç хыттинчен хӳтĕле —**
**тĕреклĕ тăракан çемье —**
**катаран килекен пурнăç синкерĕ —**
**хытă тытса тăнă —**
**сыхласа пурăнăр —**
**ӳсĕртекен, астаракан япаларан шиклен —**
**сыхă усра —**
**чипер упра —**
**килĕштерсе лăпкă ĕçлесе пурăн —**
**тĕреклĕ чарак лартса хур —**

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Вуланă халал сыпăкĕн темине палăртăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. И.Я. Яковлев çырнă халал сыпăкĕ мĕн çинчен?
2. Чăваш халăхне çутта кăлараканĕ çемьене мĕнпе танлаштарать?
3. Çемьене И. Яковлев мĕн тесе палăртать?
4. Çемьен лăпкă пурнăçĕ мĕнрен хӳтĕлесе тăрать?
5. *«Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар»,* — тенине мĕнле ăнланатăр? Мĕншĕн килĕштерекен çемьешĕн пурнăç синкерĕсем хăрушă мар?

## Итлев-тăнлав

И.Я. Яковлев çырнă халал сыпăкне актер вуланине итлесе пăхăр. Актер мĕнле майпа çемьене сыхă усрасси çинчен калакан автор шухăшне тĕрĕс палăртать?

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Халал сыпăкне илемлĕ те палăртуллă вулама вĕренĕр. Интонаципе тĕрĕс усă курса автор шухăшне тĕрĕс палăртăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

«Çемйĕре сыхлăр» темăпа чĕнсе калăпăшĕпе пысăках мар халал çырăр.

## Ӳнер тата сăмах тĕнчи

Шупашкар хулинче И.Я. Яковлева халалласа лартнă палăксем пур. Вĕсен авторĕсем камсем? Çак палăксем Шупашкарăн хăш районĕнче вырнаçнă? Интернет уçлăхĕнче палăксем вырнаçнă районсене тупăр, каласа пама хатĕрленĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Халалăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр:*

1. Алăра ĕç пултăр, пуçра ăс пултăр.
2. Атте-аннерен хакли никам та çук çак тĕнчере.
3. Ĕç тăрантарать, кахал пăсать.
4. Çын шывсăр та, сывлăшсăр та пурăнаймасть.
5. Çынна ан тирке, хăвна та тиркемĕç.
6. Иван Иваншăн тăрăшать, Ванюшка — хăйшĕн.

# ТĂВАН КИЛ — ЫЛТĂН СĂПКА —
# РОДНОЙ ДОМ — ЗОЛОТАЯ КОЛЫБЕЛЬ

## Васлей Давыдов-Анатри
## (1917-2010)



***Василий Иванович Давыдов-Анатри*** *— чăвашсен паллă сăвăçи, куçаруçă. Вăл Чăваш Республикин Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ялĕнче çуралнă. Республикăри хаçат шкулĕнче, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика училищинче вĕреннĕ. 1940-1941 çулсенче Хĕрлĕ Çарта хĕсметре тăнă. Унтан таврăнсан Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат редакторĕнче, КПСС Чăваш обкомĕн инструкторĕнче, Чăваш АССР Министрсен Совечĕн Радиоинформаци комитечĕн тĕп редакторĕнче, кĕнеке издательствин редакторĕнче, писательсен союзĕн илемлĕ литература пропагандăлакан бюро пуçлăхĕнче ĕçленĕ.*

*В.И. Давыдов-Анатри Раççей Федерацийĕн культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш халăх поэчĕ, халăхсен Туслăх орденĕн кавалерĕ. Вăл Шупашкар хулин хисеплĕ çынни.*

*Сăвăçăн пултарулăхĕ анлă, пысăк. Вăл сăвăсем, халапсем, поэмăсем çырнă. Чăваш композиторĕсем унăн сăввисемпе 500 юрă, юрăпа ташă сюитисем, ораторисемпе кантатăсем, опера çырнă. Çавăн пекех вăл Муса Джалиль, Шаукат Галиев, Махмуд Хусаин сăввисене чăвашла куçарнă.*

*В. И. Давыдов-Анатри 50 ытла кĕнеке авторĕ. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Сăвăсем» (Стихи), «Сатин кĕпе» (Сатиновая рубашка), «Чеменпе Мерчен» (Чемень и Мерчень), «Асатте парни» (Подарок дедушки), «Юррăмсем –çунатăмсем» (Песни мои - крылья мои), «Сăввăмсем – чун парнисем» (Стихи от всей души).*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Василий Давыдов-Анатри литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
2. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем мĕнле хайлавсем çырнă?
3. Сăвăçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.
4. Василий Давыдов-Анатри камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?

## САС ПАРАКАН ПУЛМАРĔ

Ял хушшине кĕтĕм те
Ачалăха шырарăм.
Сас паракан пулмарĕ, —
Çав териех хурлантăм.
Ах, ял-йышăм, ял-йышăм,
Мана манса кайрăн-шим?
Ах, ял-йышăм, ял-йышăм,
Эп кунти çын пулман-шим?

Кил хушшине кĕтĕм те,
Атте, сана шырарăм.
Сас паракан пулмарĕ,
Çав териех хурлантăм.
Ах, аттеçĕм-аттеçĕм,
Мана манса кайрăн-шим?
Ах, аттеçĕм-аттеçĕм,
Эп сан ачу пулман-шим?

Пӳрт алӑкне уҫрӑм та,
Анне, сана шырарӑм.
Сас паракан пулмарӗ,
Ҫав териех хурлантӑм.
Ах, аннеҫӗм-аннеҫӗм,
Мана манса кайрӑн-ши?
Ах, аннеҫӗм-аннеҫӗм,
Эп сан чуну пулман-шим?

Лупас айне кӗтӗм те,
Тур лашана шырарӑм.
Сас паракан пулмарӗ, —
Ҫав териех хурлантӑм.
Ах, тур лашам, тур лашам,
Мана манса кайрӑн-ши?
Ах, тур лашам, тур лашам,
Эп выртмара пулман-шим?

Каҫ чаршавне карчӗ те,
Вӑйӑ тӗлне шырарӑм
Сас паракан пулмарӗ, —
Ҫав териех хурлантӑм.
Ах, яш-кӗрӗм, яш-кӗрӗм,
Мана манса кайрӑр-шим?
Ах, яш-кӗрӗм, яш-кӗрӗм,
Эп ҫамрӑк ҫын пулман-шим?

## Словарь ӗҫӗ

**лупас ай** — поветь, навес
**тур лаша** — гнедая лошадь
**каҫ чаршавӗ** — ночная завеса
**вӑйӑ** — игра, хоровод, игрище
**яш-кӗрӗм** — молодые люди

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Сӑвӑҫӑ ачалӑхне (ашшӗне, амӑшне, тур лашана, ҫамрӑклӑхне) ӑҫта-ӑҫта шырать?
2. Унӑн чунӗ мӗншӗн хурланать?
3. Мӗнле шутлатӑр, В. Давыдов-Анатри «Сас паракан пулмарӗ» сӑвва ҫамрӑк чухне ҫырнӑ-и? Е ватӑлсан ҫырнӑ-и?

## Итлев-тӑнлав

В. Давыдов-Анатри ҫырнӑ «Сас паракан пулмарӗ» сӑвӑ сӑмахӗсемпе В. Адюков композитор хывнӑ юрра итлесе пӑхӑр. Юрӑ сӑмахӗсемпе кӗвви тӳр килет-и? Юрӑ мӗнле туйӑм ҫуратрӗ?

## Халӑх ӑс-хакӑлӗ

*Ваттисен сӑмахӗсене вырӑсла куҫарӑр е тӳр килекен вырӑсла ваттисен сӑмахӗсене тупӑр:*

1. Ватти вӗрентмесӗр ҫамрӑка ӑс кӗмест.
2. Аннесӗр кил-ҫурт ӑшши ҫук.

## Пултарулӑх ӗҫӗ

*Панӑ ӗҫсенчен пӗрне суйласа илӗр:*

1. «Манӑн анне — чи илемли» темӑпа хайлав ҫырӑр.
2. «Манӑн атте — чи ӗҫчен» темӑпа хайлав ҫырӑр.

# ТĂВАН ЧĔЛХЕ — ЭС ЧИ ПАХИ —
# РОДНОЙ ЯЗЫК — ТЫ САМЫЙ ЦЕННЫЙ

## Çеçпĕл Мишши
## (1899 - 1922)



***Çеçпĕл Мишши (Михаил Кузьмич Кузьмин)*** *— чăваш литературин классикĕ, сăвă ăсталас реформаторĕ, прозăçă, драматург, тăлмач, патшалăх тата пĕрлĕх ĕçченĕ. Вăл 1899 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче хальхи Канаш районĕнчи Касакасси Шĕкĕр (халĕ Çеçпĕл) ялĕнче çуралнă. Теччĕри учительсен семинарийĕнче вĕренсе тухнă. Чăваш облаçĕн ревтрибунал ертӳçенче тата ĕç тăвакан комитечĕн юстици пайĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ. Элеке пула тĕрмене лекнĕ, юлташĕсем тăрăшнипе темиçе уйăхран ирĕке тухнă. 1921 çулта сывлăхне çирĕплетме Крыма тухса кайнă.*

*Чăваш литературин классикĕн пурнăçĕ 1922 çулта Украинăра татăлнă.*

*Çеçпĕл Мишшин пултарулăхĕ пысăк. Вăл поэзире кăна мар, прозăра та, драматургире те, публицистикăра та анлă ĕçленĕ. Çавăн пекех вăл Т. Шевченко, М. Лермонтов, Л. Толстой хайлавĕсене чăвашла куçарнă.*

*Сыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Хурçă шанчăк» (Стальная вера), «Чăваш ачине» (Чувашскому юноше), «Чăваш чĕлхи» (Чувашский язык), «Чăваш! Чăваш!..» (Чуваш! Чуваш!), «Эпĕ вилсен…» (Как умру…), «Тинĕсе» (К морю), «Или! Или! Лима савахвани…» (Или! Или! Лима савахвани…) сăвăсем, «Чăваш сăмахĕ» (Чувашское слово), «Сăвă çырассипе ударени правилисем» (Стихосложение и правила ударения) статьясем.*

*Литературăпа культурăри чи лайăх хайлавсемшĕн 1990 çулччен Çеçпĕл Мишши премие парса чысланă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Çеçпĕл Мишши ăçта çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
2. Чăваш литературин классикĕ ăçта-ăçта ĕçленĕ?
3. Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕ ăçта татăлнă?
4. Литературăн хăш жанрĕсемпе сăвăç тухăçлă ĕçленĕ?
5. Сыравçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ —
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!

Миçе ĕмĕр витĕр асаппа тухмарăн,
Миçĕ çичĕ ютăн мăшкăлĕ пулса…
Çапах паттăр юлтăн, вăйна çухатмарăн,

Халь те пулин çивĕч, кăвартан таса.

Йывăр асапран та, тимĕр сăнчăртан та
Эсĕ парăнмасăр хăтăлтăн пулсан, —
Пулас пурнăçра та çивĕчпе хăватлăх
Ют чĕлхесенчен те кая пулмĕ сан.

Кăмăллă çĕр-шывăн кăмăллă чĕлхиçĕм!
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху:
Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă, çунтаракан çиçĕм,
Вĕри вутлă çулăм эсĕ пулăн ху.

Аслă Атăл урлă, Атăл шывĕ майĕ,
Вăрман витĕр кайĕ мухтавлă яту;
Кĕсле кĕвви саслă янраттарса кайĕ,
Уйăхăн-хĕвелĕн çунĕ хăвату.

Атăл хумĕсенĕн шавланисене те,
Хăвна та ӳстернĕ ват Шупашкара,
Ирĕклĕ çĕршывăн ырă ирĕкне те
Юрă хывса мухтăн асăнса вара.

Сана шанаканĕ, çакна çыраканĕ
Çĕр айĕнче выртĕ тăлăххăн ун чух,
Хăй çиййĕнчи çĕрĕ ăна пусса анĕ,
Сан чапна курмашкăн тăма пулас çук.

Ун çинче чăвашăн чĕлхи чапĕ пулĕ,
Тăпри çинче янрĕ ирĕклĕх юрри, –
Вара вилнĕскерĕ канлĕ-канлĕ выртĕ,
Канлĕ, çăмăл пулĕ çиййĕнчи тăпри.



## Словарь ĕçĕ

**тĕнчене тасат** — очистить мир
**ирĕк вут-кăварĕ** — пламя свободы
**мăшкăл иртсе кайрĕ** — прошли обиды, оскорбления
**ирĕке тух** — освободиться
**ĕмĕр витĕр** — сквозь века
**çичĕ ют** — чужой
**çивĕч** — острый
**кăвартан таса** — чище огня
**тимĕр сăнчăртан** — железные оковы
**хăватлăх** — сила, мощь
**канлĕ-канлĕ выртĕ** — будет лежать спокойно
**ют чĕлхе** — чужой (не родной) язык
**иртнĕ хурлăхушăн** — за прошедшее горе
**хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă** — накаленная сталь
**çунтаракан çиçĕм** — сверкающая молния
**вĕри вутлă çулăм** — огненная пламя
**кĕсле кĕвви саслă** — звон гуслей
**сана шанаканĕ** — тот, кто верит тебе
**тăлăххăн** — сиротливо
**янрĕ ирĕклĕх юрри** — зазвучит свободы песнь

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвă мĕн çинчен?
2. Çеçпĕл Мишши чăваш чĕлхине мĕнле майпа «ирĕке тухрăн» тесе палăртать?
3. Пулас пурнăçра чăваш чĕлхин çивĕчлĕхĕпе хăватлăхĕ мĕнлерех пулмалла? Мĕншĕн? Сăвă йĕркисемпе хуравлăр.
4. Чăваш чĕлхин мухтавлă ячĕ ăçта çити çитмелле?
5. *«Кăмăллă çĕр-шывăн кăмăллă чĕлхисĕм! Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху»,* — сăвă йĕркисене мĕнле ăнланатăр? Мĕнле иртнĕ хурлăх çинчен çырать-ши сăвăçă?
6. Автор мĕншĕн хăйĕн пирки «канлĕ-канлĕ выртĕ», — тесе çырать?
7. «Чăваш чĕлхи» ăнлава автор мĕнлерех ăнланать? «Чăваш чĕлхи» пĕлтерĕшпе автор вулакана мĕн калать-ши?
8. П. Хусанкай куçарнă сăвă сыпăкне вулăр. Чăваш чĕлхин вăйне литературăри мĕнле мелсемпе палăртнă куçаруçă?

**Чувашский язык**

По широкой Волге, по волнам-бурунам.
По лесам, долинам ты, язык родной,
Зазвенишь, подобно гуслям златострунным,
Заиграешь разом солнцем и луной.

Ты прославишь в песнях край наш обновленный,
Светлую свободу сердцем возлюбя.
Ты прославишь Волги плеск неугомонный,
Шубашкар, что нежно вынянчил тебя.

*Перевод Петра Хузангая*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?*

**...** — образ, выражающий смысл какого-либо явления в предметной форме.

**...** — çут çанталăк е япала сăнарĕ урлă, этем пурнăçĕн, ĕçĕ-хĕлĕн е шухăшĕн паллине сăнлакан нумай пĕлтерĕшлĕ куçăмлă ăнлав.

## Итлев-тăнлав

Çеçпĕл Мишши çырнă «Чăваш чĕлхи» сăвва актер вуланине итлесе пăхăр. Актер «анне чĕлхи чи хăватли» текен сăвăç шухăшне тĕрĕс палăртма пултарчĕ-и? Мĕнле майпа?

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăвва илемлĕ те палăртуллă вулама вĕренĕр. Интонаципе тĕрĕс усă курса автор шухăшне тĕрĕс палăртăр.

**Эпитет** — художественно-образное определение, подчеркивающее наиболее существенный в данном контексте признак предмета или явления.

**Олицотворение** — изображение неодушевленных предметов как одушевленных, при котором они наделяются свойствами живых существ: даром речи, способностью мыслить и чувствовать.

**Эпитет** — пĕр-пĕр япалана е пулăма хитрелетсе сăнлакан унăн хăйне евĕр уйрăмлăхне кăтартакан палăрту сăмахĕ.

**Сăпатлантару** — япаласемпе çут çанталăк пулăмĕсене чĕрĕ чунлă туса сăнлани.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Çеçпĕл Мишши çырнă «Чăваш чĕлхи» сăвăри эпитетсене тата сăпатлантарусене (олицотворения) тупăр. Мĕнле шутлатăр, автор вĕсене мĕнле тĕллевпе усă курнă-ши?
2. Сăвăри «çичĕ ют», «тĕттĕм» мĕне символлаççĕ-ши?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене çыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр:*

| | |
|---|---|
| 1. Ăсли ăсласа иличчен … | а) сăмах вĕçерĕнет – тыттармасть. |
| 2. Ырă калаçнă çĕре çу тумлать, … | ă) ухмаххи персе янă тет. |
| 3. Сăмах … | б) ылтăнпа пĕр. |
| 4. Ырă хыпар – ырхан лаша çинче, … | в) усал калаçнă çĕре юн тумлать. |
| 5. Ут вĕçерĕнет – тыттарать, … | г) усал хыпар – урхамах çинче. |

### Митта Ваçлейĕ
### (1908-1957)



***Митта Ваçлейĕ (Василий Егорович Митта)*** *— чăваш сăвăçи, çыравçи, очеркисчĕ, тăлмачă. Вăл Патăръел районĕнчи Аслă Арапуç (Первомайски) ялĕнче çуралса ӳснĕ. Аслă Арапуçĕнчи шкулта, Республикăри хаçат шкулĕнче, Чĕмпĕрти педагогика техникумĕнче вĕреннĕ. Патăръел район хаçатĕнче, Çĕмĕрле районĕнчи Хутар шкулĕнче, Чăвашрадио комитетра, Чăваш кĕнеке издательствинче, «Тăван Атăл» журналта ĕçленĕ. 1937 çулта ăна репрессиленĕ. Таса ятне 1956 çулта тавăрнă.*

*Çыравçăн пултарулăхĕ анлă, пысăк. Вăл сăвăсем, поэмăсем, очерксем, статьясем çырнă. Çавăн пекех вăл А.С. Пушкинăн «Борис Годунов», «Песнь о вещем Олеге» трагедисене, М. Горькин «Фома Гордеев» романне, С. Есенин, Н. Островский, М. Джалиль, Г. Гейне, Л. Кассиль тата ытти çыравçăсен хайлавĕсене чăвашла куçарнă.*

*Сăвăçăн паллăрах хайлавĕсем: «Пит маттур-çке Иванов бульварĕ...» (Бульвар Иванова), «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем…» (Родной язык), «И мĕн пуян...» (Чем будешь богат), «Çĕр-шывăм, çĕр-шывăм, мĕн кирлĕ сана» (Родина) сăвăсем, «Тайăр» (Таэр) сăвă ярăмĕ.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Митта Васлейĕ ăста çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
2. Литературăн хăш жанрĕсемпе сăвăç тухăçлă ĕçленĕ?
3. Вăл камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?
4. 1937 çулта Митта Васлейне айăпсăрах тĕрмене хупса лартнă. Унăн таса ятне хăçан тавăрнă-ши?

### ТĂВАН ЧĔЛХЕМ! ТАСА ХĔЛХЕМ…

*«Тайăр» сăвăсен ярăмĕн сыпăкĕ*

Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем
Парсам пăлхавлă чунăма.
Пар чăнлăх, савăнăç, илем,
Пар ирĕк — çутăрах çунма.

Ĕшеннисемшĕн çул çинче
Эс — шанчăк çăлтăрĕ ялан.
Тискер тăманлă каçсенче
Йыхравлă чан пек янăран.

Çунат паратăн çамрăка,
Ватта чун канăçĕ кÿрен.
Сÿнсе кĕлленнĕ кăмрăка
Вут кайăк сывлăшĕ кĕртен.

Хыпса çунан çĕр-шывăма,
Чĕлхем, сипетлĕ çумăр яр.
Хĕвел хĕм панă сывлăма
Мана та пĕр тумлам сыптар.

Сĕткенÿпе шăварăнса
Шаланкă евĕр çĕкленем.
Çÿлте çуйхавлăн ярăнса
Этемшĕн савăнăç чĕнем.

## Словарь ĕçĕ

**таса хĕлхем** — светлая искра
**пăлхавлă чунăм** — неспокойная душа
**чăнлăх** — истина, правда
**ирĕк** — свобода
**çутăрах çун** — гори ярче
**ĕшеннисем** — уставшие
**шанчăк çăлтăрĕ** — звезда надежды
**чун канăçĕ кÿр** — приносишь спокойствие души
**йыхравлă чан** — зовущий колокол
**сÿнсе кĕлленнĕ кăмрăк** — истлевшие угли
**вут кайăк** — птица феникс
**хыпса çун** — возгораться
**сипетлĕ çумăр** — благодатный дождь
**сывлăм** — роса
**пĕр тумлам** — капля
**шаланкă евĕр** — как коршун (канюк)
**çуйхавлăн ярăнса** — парить с пронзительным криком

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Сăввăн темине палăртăр.

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр, пăхмасăр калама вĕренĕр.

## ЫIйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăç хăйĕн тăван чĕлхинчен мĕн-мĕн пама ыйтать?
2. Çул çинче ĕшеннĕ çынсемшĕн тăван чĕлхе мĕн пулса тăрать?

3. Çамрăксемпе ватăсене тăван чĕлхе мĕн парать?
4. «Çунакан» çĕр-шыва сăвăç мĕн яма ыйтать?
5. Тăван чĕлхе «сĕткенне» илсе сăвăç мĕн тăвасшăн?

## Пултарулăх ĕçĕ

1. Интернет уçлăхĕнче вут кайăк (феникс) çинчен вуласа пĕлĕр. Мĕнле енсемпе палăрса тăрать вăл?
2. Çеçпĕл Мишши çырнă «Хурçă шанчăк» сăввине вуласа тухăр. Сăвăри *«Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,*
   *Ан юлăр кун-çул уттинчен»*, — тесе камсене чĕнсе калать Çеçпĕл Мишши?

**Сравнение** — сопоставление двух предметов или явлений с целью прояснить один из них при помощи другого.

**Танлаштару** — пĕр япалана е пулăма тепĕр япалапа е пулăмпа çывхартса сăнара ăнлантарса кăтартни; ытларах кунта *пек, евĕрлĕ, майлă* сăмахсемпе усă кураççĕ.

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Митта Ваçлейĕн «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем» сăввине Габдула Тукайăн «Тăван чĕлхе» сăввипе танлаштарăр, пĕр пеклĕхпе уйрăмлăхсем тупса палăртăр.

**Родной язык**

Родной язык — святой язык, отца и матери язык,
Как ты прекрасен! Целый мир в твоем богатстве я постиг!
Качая колыбель, тебя мне в песне открывала мать,
А сказки бабушки потом я научился понимать.

Родной язык, родной язык, с тобою смело шел я вдаль,
Ты радость возвышал мою, ты просветлял мою печаль.
Родной язык, с тобой вдвоем я в первый раз молил творца:
— О боже, мать прости, прости меня, прости отца.

*Г. Тукай*

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупăр.*

1. …, виçĕ чĕлхе — виçĕ ăс.
2. …, çывăхра пурăн.
3. … — пурнăçла.
4. … усал калаçнă çĕре юн тумлать
5. … сăмах вĕçерĕнет – тыттармасть.

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ, ЙĂЛИ-ЙĔРКИ — ОБЫЧАИ И ТРАДИЦИИ ЧУВАШСКОГО НАРОДА

## Михаил Фёдоров
## (1848 – 1904)



***Михаил Фёдорович Фёдоров*** *— пултаруллă вĕрентӳçĕ, чăваш этнографĕ, çыравçи. Вăл хальхи Чăваш Республикин Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хурапха ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкулта, Шĕнерпуçĕнчи икĕ кластă шкулта, Самарти учительсем хатĕрлекен семинарире, Хусанти учительсем хатĕрлекен семинари çумĕнче икĕ тата виçĕ кластă хула училищисем валли учительсем хатĕрлекен курсра вĕреннĕ. Кун хыççăн Шĕнерпуçĕнчи шкулта, Шупашкарти виçĕ кластă училищĕре, Царевококшайскри (Йошкар-Ола) икĕ кластă шкулта вăй хунă. Ĕçленĕ хушăра И.Я. Яковлевпа тачă çыхăну тытнă.*

*Михаил Фёдоров пултарулăхĕ анлă, пысăк. Вăл «Арçури» поэмăсăр пуçне чăваш халăх сăмахлăхне, историне тĕпченĕ, аваллăх халапĕсем, калавсем, сăвăсем çырнă, вырăс поэзине чăвашла куçарнă. «Арçури» поэма XIX ĕмĕр вĕçĕнче ал çыру вĕççĕн халăхра сарăлнă. Малтанхи хут поэма 1908 çулта И.Я. Яковлев хатĕрленĕ «Чăваш халапĕсем» кĕнекере пичетленнĕ. Чăваш литературинче «Арçури» поэмăн вырăнĕ пысăк. Çак поэма К.В. Иванова «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» балладăсем, «Икĕ хĕр» юмах çырма хавхалантарнă.*

*Çыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Хурапха» (Итяково), «Туппай юмçă» (Юмзя Туппай), «Чиртен сыватни» (Способы лечения болезней) этнографиллĕ очерксем.*



### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Михаил Фёдоров литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
2. Чăваш литературин ылтăн çӳпçине унăн хăш хайлавĕ кĕрсе юлнă?
3. М.Ф. Федоровăн «Арçури» поэми К.В. Иванова мĕнле хайлавсем çырма хавхалантарнă?
4. «Арçури» поэма малтанхи хут хăш кĕнекере пичетленсе тухнă?

## АРÇУРИ
*Поэма сыпăкĕ*

Хĕвел ансан Хĕветĕр
(Эсир ăна пĕлетĕр)
Хĕвне çăкăр чикрĕ те,
Лаша кӳлсе ларчĕ те
Тухрĕ кайрĕ вăрмана
Хăрăк турат пуçтарма…

Хура утпа иксĕмĕр
Çырма хĕрне çитрĕмĕр.
Йĕп чиксе те куç курмасть.

Те арçури, те шуйттан,
Те ыр-усал, те вăр-хурах,
Те çул маяк, тем амак?
Чун шикленет, ăш вăркать,
Пуç тӳпинчен сĕрĕм тухать.

Шĕвик! Шăхăрать çын пекех,
Мăкăл-мăкăл юмахлать,
Шăтăр-шатăр тутарать;
Юмах ярать, юптарать,

Йăнăш çулпа чуптарать,
Чике тăршшĕ ларттарать.

Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ:
Çавраçил пек çавăрса,
Çĕмĕртсене çĕмĕрсе,
Сикрĕ тухрĕ çырмаран,
Пĕкке хуçрĕ çурмаран, —
Ват çын пекех шур сухаллă,
Качака пек майракаллă,
Ури вăрăм, куçĕ чармак,
Урхас Кушкă вăрманĕнче
Урлă-пирлĕ уткалать,
Урнă йыт пек тулашать:
Вĕрет, сурать, пусмăрлать,
Кăтăкласа вĕлерет.
Лаша кӳлсе ларать те,
Тутар ямшăк пулать те
Çĕр çĕмĕрсе чуптарать,
Çĕр чĕтретсе кăшкăрать…

Ах, Турă, çырлах, Турă, ан пăрах,
Ху этемне ху упрах!
Пире пăхан Пихампар,
Ху йыттуна хăвах чар.
Çултах вилес пулĕ-и-ха,
Киле çитсе ӳкесчĕ,
Ыр вилĕмпе вилесчĕ,
Йӳтичченех пурнасчĕ,
Тӳшек çинче вилесчĕ.

Ыр вилĕмпе вилсессĕн —
Кушак çури мар тесе,
Хуллен-хуллен, ерипе
Авалхи çынсен йăлипе
Тирпейлесе пытарĕç…

Арман патне çитсессĕн
Аран юлчĕ арçури.
Тарăн вара çитсессĕн
Таркăн салтак пулчĕ кайрĕ,
Виснер хĕрне çитсессĕн,
Вилнĕ карчăк пулчĕ выртрĕ,
Çурма çула çитсессĕн,
Çурхи сурăх пулчĕ кайрĕ.
Хайхи-майхи арçури
Кайран кая юлчĕ те,
Анчăк çури пулчĕ те,
Арман патне çитсессĕн,
Арман айне кĕрех кайрĕ.

Мĕнрен пулнă арçури
Ял хыçĕнчи çырмари?
Асаттесем ас тăваççĕ:
Арçынтанах пулнă, тет,
Энтри ятлă çынтан, тет.

Якур пичче çулпала
Пушкăрт лаши кӳлнĕ те,
Те çуркунне, те çулла
Яртлаттарса чуптарнă.
Каç пулттипе сиккипе
Ыраш пусси хĕррипе
Çавра çил пек пынă чух
Пĕр ăстарик вăрманта
Чĕлĕм чĕртме тапратнă;
Куç витĕрех мар пирки,
Пыран ута курмасăр,
Йытă вилĕмĕпе вилнĕ, тет.

## Словарь ĕçĕ

**юмахла** — разговаривать
**çавра çил** — ураган
**çĕмĕртсене çĕмĕрсе** — ломая черемухи
**çурмаран** — напополам
**куçĕ чармак** — глаза вытаращены
**урнă йытă** — бешеная собака
**пусмăрла** — насиловать
**кăтăкласа вĕлер** — защекочет до смерти
**çĕр çĕмĕрсе** — сотрясая землю
**çĕр чĕтретсе** — кричит во весь голос
**турă, çырлах** — господи, помилуй
**упра** — хранить
**пихампар** — название духа, наделяющего людей добрыми качествами
**таркăн салтак** — беглый солдат
**анчăк çури** — щенок

**çурма çул** — половина дороги
**хайхи-майхи** — тот самый
**яртлаттарса** — свободно, легко
**сиккипе** — галопом

**чӗлӗм чӗрт** — прикуривать
**каç пулттипе** — вечером, после захода солнца
**куç витӗрех мар** — плохое зрение

## Итлев-тӑнлав

М. Федоровӑн «Арçури» поэма сыпӑкне актер вуланине итлесе пӑхӑр. Актер мӗнле майпа арçури сӑнарне тӗрӗс палӑртма пултарчӗ?

## Ыйтусемпе ӗçсем:

1. Хӗветӗр каçа хирӗç вӑрмана мӗн тума «тухса кайрӗ»?
2. Çырма хӗрне çитсессӗн Хӗветӗр мӗн курать?
3. Арçури мӗн пек? Тупса вулӑр.
4. Ӗçсем хӑш вӑрманта пулса иреççӗ?
5. Тӗп сӑнар мӗн çинчен ӗмӗтленет?
6. Арçури ӑçта çухалать?
7. Арçури мӗнрен пулнӑ тесе ӑнлантарать автор?
8. Арçури мӗнле майпа пулнӑ? Çав вырӑна тупса вулӑр.
9. *«Йытӑ вилӗмӗпе вилнӗ»,* — тени мӗне пӗлтерет? Автор ӑстарике мӗншӗн «йытӑ вилӗмӗпе вилнӗ» тесе çырать?

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

*Ӑнлава малалла тӑсӑр.*

**Сравнение** – это ... .
**Танлаштару** тесе … .

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

1. Михаил Фӗдоров çырнӑ «Арçури» поэмӑри танлаштарусене тупӑр. Мӗнле шутлатӑр, автор вӗсене мӗнле тӗллевпе усӑ курнӑ-ши?
2. *«Кашкӑртан хӑраса вӑрмана ан кай»,* — тенине мӗнле ӑнланатӑр? Вырӑсла вӑл мӗнле пулать? Хӗветӗре мӗншӗн арçури тӗрлӗ сӑнарсем пулса курӑнать? Ӑнлантарӑр.

**Поэма** — крупное стихотворное произведение с сюжетно-повествовательной организацией.
**Баллада** — повествовательная песня с драматическим развитием сюжета, основой которого являются необычный случай, один из видов лиро-эпической поэзии.
**Поэма** — калуллӑ е лирикӑллӑ, анлӑ сюжетлӑ сӑвӑласа çырнӑ пысӑк хайлав.
**Уйланӑш (баллада)** — çыравçӑ сюжета истори событийӗпе, харпӑр хӑй инкек-синкекӗпе, фантастка пулӑмӗпе çыхӑнуллӑн йӗркеленӗ май, персонажсене лирикӑпа эмоции тӗлӗшӗнчен хак парать; унӑн никӗсӗнче — усӑ тата вӑрттӑн диалогсем.

## Культурăсен çыхăнăвĕ

М. Фёдоровăн «Арçури» поэмине А. Пушкинăн «Бесы» поэмипе танлаштарăр, пĕр пеклĕхпе уйрăмлăхсем тупса палăртăр.

**Никифор Охотников**
**(1860 – 1992)**



***Никифор Михайлович Охотников*** *— чăваш çыравçи, этнографĕ, просветителĕ, математик. Вăл хальхи Тутар Республикине кĕрекен Чистай районĕнчи Чăваш Шупашкарĕ ялĕнче хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Ялти шкулта, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, И.Я. Яковлевăн вĕренекенĕ пулнă. И.Н. Ульянов пулăшнипе гимназире вĕренсе тухнă, Хусан университечĕн физикăпа математика факультетне вĕренме кĕнĕ. Университета вĕренсе пĕтерме тӳр килмен, юлашки курсра ӳпке чирĕпе чирлесе вилнĕ. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче пулас учительсене математика вĕрентнĕ. Вăл пĕтĕм тĕнчери астрономсемпе математиксен конгресĕнче çĕнтерпĕ, ылтăн медаль илме тивĕçнĕ.*

*Никифор Охотников пултарулăхĕ анлă. Вăл математикăпа кăна мар, историпе, чăваш этнографипе, чăваш фольклорĕпе кăткăсланнă.*

*Унăн паллăрах ĕçĕсем: «Мана пăхса ӳстерни» (Записки чувашина о своем воспитании), «Чăвашсене хутла вĕрентни» (Грамота среди чувашей), «Атăлçи чăвашĕсем» (Приволжские чуваши).*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Никифор Охотников ăçта çуралнă? Вăл çуралнă вырăна карта çинче тупăр.
2. Вăл ăçта-ăçта пĕлӳ пухнă?
3. Хусан университетне вĕренме кĕме ăна кам пулăшнă?
4. Литературăн хăш жанрĕсемпе вăл тухăçлă ĕçленĕ?
5. Мĕнле ĕçшĕн Никифор Охотников ылтăн медаль илме тивĕç пулнă?
6. Никифор Охотниковăн паллăрах ĕçĕсене каласа тухăр.

### СĔТЕЛ ХУШШИНЧЕ

*Очерк сыпăкĕ*

Каçхи апата эпир кĕл тумасăрах ларатпăр. Никам та сăх сăхмасть. Эпир хамăр ăшăмăрта çапла калатпăр: «Турă, ан пăрах». Ларасса эпир икĕ сĕтелпе ларатпăр. Пысăк сĕтелĕ тавра — арçынсем, пĕчĕкки тавра — хĕрарăмсем.

Сĕтел тавра çак йĕркепе ларатпăр. Кил-йыш пуçĕ, асатте, тенкел çине ларать. Эпир вара сак тăрăх вырнаçса тухатпăр. Аттепе юнашар эпĕ, чи кĕçĕнни, ларатăп. Унтан — пичче, малалла тарçăсемпе ют çынсем (апат тĕлне пулсан). Чăвашсен йăла пур: апат çинĕ чух килсе кĕнĕ çынна сĕтел хушшине лартмаллах. Çынсен çиесси килмесен те астивсе пăхмаллах. Астивсе пăхнă

хыҫҫӑн вӑл аяккарахри сак ҫине кайса ларать. Кил хуҫине те, хуҫа арӑмне те вӑл нихӑҫан та алӑ памасть. Алӑ парасси-тытасси чӑваш йӑли мар.

Сӗтел хушшинче ларса тухсан атте ҫӑкӑр касать. Ҫӑкӑр сӑмсине вӑл хӑй валли хӑварать. Сӑмси хыҫҫӑнхи, ташӑ чӗлли, мана тивет, иккӗмӗшӗ — пиччене. Малалли — ытти ҫынсене. Хӑш чухне эпӗ ҫӑкӑр сӑмсине ыйтса пӑхатӑп та — мана памаҫҫӗ. «Юрамасть, арӑмун сӑмси пысӑк пулӗ», — теҫҫӗ.

Малтан пире йывӑҫ чарапа купӑста яшки е кӗрпе яшки антарса параҫҫӗ, ашне памаҫҫӗ-ха. Ҫав яшканах тепӗр чарапа антарса ашӗпе пӗрле ҫитереҫҫӗ.

Апат вӑхӑтӗнче калаҫма та, кулма та юрамасть. Хӑш чухне эпир кӑнтӑрла пулнӑ тӗрлӗ кӑсӑклӑ мыскарана аса илсе ирӗксӗрех кулма пуҫлатпӑр. Вара аттепе асатте пире хытӑ вӑрҫса тӑкаҫҫӗ. «Мӗн шӑл йӗрсе ларатӑр сӗтел хушшинче?» — теҫҫӗ. Хӑш чухне ҫамкаран кашӑк лекни те пулать.

## Словарь ӗҫӗ

**кӗл ту** — молиться
**тенкел** — скамейка
**икӗ сӗтелпе** — в два стола, два приёма
**сак** — лавка вдоль стены
**тарҫӑ** — слуга
**апат тӗлне пулсан** — если пришли во время еды
**астив** — попробуй, пробуй
**ҫӑкӑр сӑмси** — горбушка
**аш-какай** — мясо
**чара** — чашка, блюдо
**вӑрҫса тӑк** — отругай
**кӑсӑклӑ мыскара** — интересный случай
**шӑл йӗр** — скалить зубы, смеяться

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Очерк сыпӑкӗ мӗн ҫинчен?
2. Апат ҫиме ларас умӗн чӑвашсем мӗн тунӑ?
3. Апат сӗтелӗ тавра чӑвашсем мӗнле йӗркепе ларса тухнӑ?
4. Чӑвашсем апат ҫинӗ чух килсе кӗнӗ ҫынна хӑйсен йӑлипе мӗн тунӑ? Ҫак йӑла халӗ упранса юлнӑ-и?
5. Ҫӑкӑр татӑкӗсене (чӗллисене) еплерех йӗркепе валеҫнӗ-ши?
6. Апат вӑхӑтӗнче мӗнле пулмалла?
7. Йӗркене пӑссан мӗн «лекме» пултарнӑ?
8. Паянхи кун апат хушшинче мӗнлерех лараҫҫӗ-ши? Очеркра ҫырса кӑтартнӑ пек йӗрке паян сыхланса юлнӑ-и?
9. Н.Охотников ҫырнӑ очеркра мӗнле пуян та паха материал упранать?

## Пултарулӑх ӗҫӗ

Хӑвӑр килӗрте сӗтел хушшинче мӗнлерех йӗркепе ларни ҫинчен пысӑках мар очерк ҫырӑр. Очерка ят парӑр.

## Халӑх ӑс-хакӑлӗ

*Очерк сыпăкĕн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр:*

1. Сĕтел хушшине ыттисенчен маларах ларма ан васка.
2. Кушак çук çĕрте шăши те патша.
3. Паттăрсем çапăçура çуралаççĕ.
4. Апат çинĕ чух ан калаç.
5. Пуртти пулсан аври тупăнать.
6. Аслисемпе сывлăх суннă чухне аллуна малтан ан тăс, тăхта.

## Николай Никольский
## (1878 – 1961)



***Николай Васильевич Никольский*** *— «Хыпар» хаçата никĕслекенĕ, чăваш чĕлхи тĕпчевçи, чăваш этнографĕ, истори ăслăхĕсен тухтăрĕ, профессор. Вăл хальхи Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи Купăрля ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Шăматри земство училищине пĕтерне хыççăн, ашшĕ хистенипе, Шупашкарти тĕн училищинче вĕреннĕ. Унтан Хусанти тĕн академинче пĕлӳ пухнă. Вĕреннĕ вăхăтра вăл историпе, этнографипе кăсăкланма тытăннă, ялсене тухса çӳренĕ. Библиотекăра, архивра ларса историпе, этнографипе, фольклорпа нумай материал пухнă. Вĕренсе тухнă хыççăн Хусанти тĕн академийĕ çумĕнчи миссионерсен курсĕнче вĕрентнĕ, Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарире преподавательте, библиотекарьте вăй хунă, «Хыпар» хаçатăн редактор-издателĕ пулса ĕçленĕ.*

*Педагогикăра, куçарупа издательство, общество ĕçĕнче тăрăшнă пулсан та Н. Никольский хăйĕн тĕп тивĕçне наукăра курнă: XVIII ĕмĕрти чăваш çырулăхĕн палăкĕсене тĕпченĕ, лексикографи ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ.*

*Н. В. Никольский — чăвашра профессор ятне тивĕçнĕ пĕрремĕш çын.*

*Тĕпчевçĕн чи паллă кĕнекисем: «Конспект по грамматике чувашского языка», «Русско-чувашский словарь», «Краткий чувашско-русский словарь».*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Кам вăл Николай Никольский?
2. Вăл ăçта тата хăçан çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
3. Пулас тĕпчевçĕ ăçта-ăçта пĕлӳ пухнă?
4. «Хыпар» хаçатăн малтанхи номерĕ хăçан тата хăш хулара тухнă?

## ЧĂВАШ ХАРАКТЕРĔ
*Очерк сыпăкĕ*

Пуçарулăх — чăваш характерĕнчи чи паллă уйрăмлăхсенчен пĕри. Хыт кукарлăх мар, пуясшăн çунни мар, хытса пурăнни мар. Чăваш, никама та пăхăнас марччĕ тесе, перекетлĕ пулма тăрăшать.

Чăваш çынни хăй нумай хушă вăй хурса ĕçленине ахаль салатса пĕтересшĕн мар, унпа ăслăн-тĕплĕн усă курасшăн, тирпейлĕ пурăнасшăн.

Чăваш вăхăта ахаль сая ярасшăн мар. «Ахаль лариччен кĕрĕк аркине те пулин йăвала», — теççĕ чăваш ваттисем.

## Словарь ĕçĕ

**пуçарулăх** — инициатива, активность
**хыт кукарлăх** — жадность
**ăслăн-тĕплĕн усă курасшăн** — стремится использовать с умом

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?*

**…** — малый литературный жанр, основанное на фактах, документах, наблюдениях автора.
**…** — эпика литературин пĕчĕк формин тĕсĕ. Вăл чăн пулăмсене тĕпе хурать, чăн çынсене сăнласа парать.

### ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ
*Очерк сыпăкĕ*

Чăваш хăйĕн арăмĕпе çемйине юратса пурăнать. Вăл хăйĕн арăмне питĕ хисеплет, сума сăвать. Арăмĕ вара çавăншăн ырăпа тавăрас тесе килте питĕ тăрăшса, тӳсĕмлĕн ĕçлет. Чăваш хăй арăмне лайăхрах тумлантарас тесе укçине пачах та шеллемест.

Ытти тĕрĕк халăхĕсен теологийĕпе мифологине тĕпчесен арçын кăна турă шутланнине куратпăр. Чăвашсен вара хĕрарăм турăсем те пур. Вăйăсенче, йăла-йĕркере пур чухне те хĕрарăмсем тĕп вырăн йышăннă.

## Словарь ĕçĕ

**сума сăвать** — уважает
**тӳсĕмлĕн** — терпеливо
**турă** — бог

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Чăваш характерĕнчи уйрăмлăхсене тупса вуласа тухăр.
2. Чăваш мĕншĕн перекетлĕ пулма тăрăшать?
3. Чăваш çемйинче килĕшӳ, пĕр-пĕрне хисеплени очеркри хăш йĕркесенче курăнать?
4. Очерк сыпăкĕсенчен чăваш çынни ĕçчен пулнине çирĕплетекен предложенисене тупса вуласа парăр.
5. Чăваш туррисем çинчен мĕн пĕлтĕр? Ытти халăхсен туррисем çинчен мĕн калама пултаратăр?
6. Эсир Н. Никольскийăн «Чăваш характерĕ» тата «Чăваш хĕрарăмĕ» очерк сыпăкĕсене вуласа тухрăр. Çак очерксене мĕнле очерксем

теме пулать? Истори очеркĕ-и? Этнографи очеркĕ-и? Е çул çӳрев очеркĕ-и? Мĕншĕн?
7. Маларах вуланă С. Михайлов-Янтушăн «Хутла вĕренес килет» тата Никифор Охотниковăн «Сĕтел хушшинче» очерксене хăш очерксем шутне кĕртме пулать-ши?

## Ӳнер тата сăмах тĕнчи

А.И. Пиотровскийăн «Чăваш хĕрĕн портречĕ» картинипе паллашăр, ыйтусем лартса ун тăрăх калаçу тăвăр.



А.И. Пиотровский. Чăваш хĕрĕн портречĕ

## Пултарулăх ĕçĕ

*Панă ĕçсенчен пĕрне суйласа илĕр:*

1. Хăвăр юлташăрăн характер уйрăмлăхĕ çинчен пысăках мар очерк çырăр. Очерка ят парăр.
2. «Пирĕн кӳршĕсен çемйи» ятлă пысăках мар очерк çырăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Очерк сыпăкĕн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр:*

1. Васкакан суккăр пулнă.
2. Çывăракан тилĕ чăх тытмасть.
3. Хĕрарăмсăр кил — çулăмсăр вучах, ар çынсăр кил — хĕвелсĕр кун.
4. Ĕçне кура кашăк шыра.
5. Туслă çемье — пурнăç никĕсĕ.
6. Кивĕ тус икĕ çĕнĕ тусран хаклăрах.

**Алексей Талвир**
**(1909 – 1979)**

***Алексей Филиппович Талвир (Башкиров)*** *— чăваш çыравçи. Вăл хальхи Чăваш Республикин Патăрьел районĕнчи Аслă Патăрьел салинче çуралнă. Мускав патшалăх университетĕнче вĕренсе тухнă. Вăрçăччен СССР халăхĕсен Тĕп издательствинче, ВЛКСМ ТК инструкторĕнче ĕçленĕ.*



*Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă, взвод командирĕ, рота политрукĕ, «Комсомольская правда» хаçат корреспонденчĕ пулнă. Вăрçă хыççăн «Коммунизм ялавĕ» хаçатра, Чăваш Республикин Писательсен союзĕн ертӳçинче ĕçленĕ.*

*Хĕрлĕ Çăлтăр орденне, пархатарлă ĕçĕшĕн Халăхсен туслăхĕн орденне, медальсене, Чăваш Енĕн Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ.*

*Çыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Пăва çулĕ çинче» (На Буинском тракте) повесть, «Никĕс» (Фундамент) роман.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Алексей Талвир ăçта тата хăçан çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
2. Литературăн хăш жанрĕсемпе вăл тухăçлă ĕçленĕ?
3. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.

## ВЫРТМАРА

*«Пăва çулĕ çинче» повесть сыпăкĕ*

Эпир, ача-пăчасем, масар çывăхĕнчи улăхра лаша çитереттĕмĕрччĕ те, пурте Ухике пытарнă çĕре пухăнтăмăр. Хĕвел анас умĕнхи лăпкă та ăшă çанталăкра çĕре кĕрекен çын тупăкĕ умĕнче эпир те ыттисемпе пĕрле пуçа усса тăтăмăр, унăн хупăннă куçĕсем çине пăхса илтĕмĕр. Пуçĕ вĕçне, чăваш йăлипе, шĕшлĕ (леш тĕнчере çăпата тума), кашăк (апат çиме), чаплашка, эрех тултарнă çур штоф кĕленчипе купăсне ури вĕçне хунă (кăна амăшĕ çапла хушнă: «Ку тĕнчере ялан тарçăра пурăнчĕ, хурлăх нумай курчĕ, леш тĕнчере пурте çителĕклĕ пултăр, савăнса пурăнтăр», — тенĕ тет).

— Эх, Ухик, ирхине çеç купăс каласа çӳреттĕн, — пысăк çын пек сăмаха тăсса каларĕ Эçук, масар çинчен тухсан, — ытла та кĕске пулчĕ-çке ĕмĕрӳ.

Масар çинчен çынсем саланса пĕтсен, эпир, выртмана килнĕ ачасем, улăхри лашасене тĕрĕслесе тухрăмăр та кăвайт умне пухăнса лартăмăр. Пурте пуçĕсене салхун уснă, ĕлĕкхи пек калаçакан та, юптаракан та, кулакан та, ташлакан та çук. Паян эпир хĕвел аннă-анманах çывăрса каякансене уraран чĕлпĕрпе кăкарса сĕтĕресси çинчен те шухăшламастпăр. Чĕнмесĕр ларатпăр. Шăп. Улăхри лашасем сĕтеклĕ курăка шăтăрт-шăтăрт туртса çини илтĕнет.

**Повесть** — средний (между рассказом и романом) эпический жанр, в котором представлен ряд эпизодов из жизни героя (героев).

**Повесть** — эпикăлла проза жанрĕ; калăпăшĕпе романпа калав хушшинче тăрать.

Масар леш енче çур тырри пусси. Хăш-пĕрин лашисем иртĕнме те тытăннă, çур тырри анисем çине кĕрсе кайнă, тин çеç пуç сăхнă сĕлле васкаса

çиеççĕ, ахăртнех, хăваласа кăларасса сисеççĕ. Кăвайт умĕнче сĕнксе ларакансенчен пĕри, аслăраххи, пирĕн пек пĕчĕккисем çине пăхса кăшкăрса пăрахать, çур тырри пуссине таптасран сыхлама хушать.

Эпир паян пĕччен-иккĕн çÿреме шикленетпĕр. Ушкăнĕпе, çиччĕн-саккăрăн тăрса утатпăр. Хамăртан ик çĕр утăмри масар çине те пăхмастпăр. Ухике хамăр куç умĕнчех çĕр айне пытарчĕç пулсан та, халĕ эпир унăн вилли тытасран хăратпăр. Пуçа асанне каланисем, вилнĕ çын шăтăкĕнчен чунилли, эсрел тухать, вăл пытарма килнĕ çынсем хыççăн пырать тенисем аса килеççĕ. Эсрел çип тăрăх çÿрет, тет. Çавăнпа Ухике пытарнă хыççăн пире пурне те пĕрер сĕвем çĕлен çип валеçсе пачĕç. Темиçе çынри çип сĕвемĕсем пĕр вĕçĕм пулаймаççĕ. Вара вилĕм валеçекен эсрел те хăйĕн çулĕ татăлнипе аптăрать, çын хыççăн пыраймасть.

Кăвайт çĕрĕпех çунать. Эпир çине-çинех турпас таткисемпе хăва çапписем хурсах тăратпăр. Автансем хăçан авăтса ярĕç-ши? Эсрел автан авăтнинчен хăраса шăтăка пытанать тет.

Сасартăк масар енчен Ухик сасси илтĕннĕ пек туйăнчĕ. Турра асăнас. Эпĕ сăх сăхма хăтлантăм, сылтăм алла çамка патне çĕклерĕм те — те хăранипе, те тĕлĕннипе — алă хытса ларчĕ. Хĕрес те хываймарăм. Ухик сассине Эçук та, ытти ачасем те илтрĕç. Пĕр сывламасăр ларатпăр.

— Тиххăн! Ăçта каятăн? Пур пĕрех палларăм вĕт! — тесе кăшкăрса ячĕ вилнĕ Ухик сасси.

Унччен те пулмарĕ — масар çинчен купăс каласа виçĕ çын тухрĕç. Ыталаннă. Пирĕн еннеле утаççĕ. Эпир кăвайт патĕнчен чăл-пар саланса пĕтрĕмĕр. Хăшĕ ялалла, хăшĕ хирелле, хăшĕ Пăла хĕрринелле чупрĕç.

## Словарь ĕçĕ

**выртмана килнĕ ачасем** — дети в ночном
**хĕвел аннă-анманах** — сразу же после захода солнца
**иртĕн** — шалить
**çур тырри анисем** — поля, засеянные весной
**тин çеç пуç сăхнă сĕлĕ** — овес, взошедший на днях
**сĕнксе лар** — клевать носом
**шиклен** — робеть
**унăн вилли тытасран хăратпăр** — боимся, что его труп скрутит
**чун илли** — душегуб
**эсрел** — дух, раздающий людям смерть
**пĕрер сĕвем çĕлен çиппи** — по одному куску (вязке) суровой нитки
**татăл** — обрываться
**сăх сăх** — перекрестись
**хăтлан** — пытаться
**хĕрес хываймарăм** — не смог перекреститься

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Ача-пăчасем аслисемпе пĕрле ăçта пухăннă?
2. Чăваш йăлипе Ухик пуçĕ вĕçне мĕн-мĕн хунă?
3. Масар çинчен çынсем саланса пĕтсен выртмана килнĕ ачасем ăçта пухăнса ларчĕç?
4. Масар ачасенчен инçе-и?
5. Вĕсем паян мĕншĕн салхуллă?

6. Ачасем мĕнрен хăраççĕ?
7. Ваттисем эсрел çинчен мĕн калаççĕ? Çав вырăнсене тупса вулăр.

8. Ачасем кăвайт патĕнчен мĕншĕн пăрăнасшăн мар?
9. Анчах та вĕсем кăвайт патĕнчен мĕн пирки саланса пĕтеççĕ?

## ВЫРТМАРА

*«Пăва çулĕ çинче» повесть сыпăкĕ. Малалли*

Эпир Эçукпа иккĕн, пирĕн киле хашкаса çитрĕмĕр те чӳрече янахне шаккама тытăнтăмăр. Ман сасса илтсен, атте çара уранах чупса тухрĕ, мĕн пулчĕ, тесе ыйтрĕ. Эпир нимĕн те чĕнейместпĕр, иксĕмĕр те йĕрсе ятăмăр. Атте пире пӳрте илсе кĕчĕ, аннепе шăллăм та вăранчĕç. Эпĕ шăла шаккаса тăнă çĕртех атте кăкăрĕ çумне лăпчăнса пуçа пытаратăп, куçа хуплатăп.

— Тихаллă лашасем патне кашкăр пынă пуль, — тет анне.

— Çук, кашкăр мар, — ĕсĕклесе хуравлать Эçук.

— Апла пулсан, лаша вăррисем пынă ĕнтĕ, эй, пăшалччĕ вĕсене, мур илесшĕсене, ачасене хăратса çӳреççĕ!

— Вăрă та мар.

— Мĕнрен хăраса ӳкрĕр вара, арман хуçи лашăрсене тытса кĕмерĕ пуль вĕт? — ман пуçран шăлса ыйтать атте.

Эпĕ аран-аран сывлăш çавăрса илтĕм.

— Ухик хăратрĕ.

— Вилнĕ çынран мĕн хăрамалли пур, вăл çĕр айĕнче вĕт, — тесе, пире лăплантарать атте.

— Масар çывăхне каймалла та мар, кĕтӳ кĕтмелле те, ĕçĕ те пĕтнĕ, выртма çӳремешкĕн Йӳçлĕх улăхĕ пур, Палăк çаранĕ те аптрамасть. Хурамара та кăçал курăкĕ лаша хăлхи таран ӳснĕ.

— Ухик масар çинчен купăс каласа тухрĕ, — персе ярать Эçук, ĕсĕклеме чарăнса.

— Пытарнă çын епле-ха шăтăкран тухтăр, — мана çурăмран лăпкаса илет атте, — хăранипе куçа курăннă ĕнтĕ вăл. Эккей, айвансем...

Анне турăш хыçĕнчен çветтуй шывĕ тултарнă çур штоф антарать, унпа пире пĕрĕхсе илет те хĕрес хывать, турра асăнать. Эпир Эçукпа иксĕмĕр те турăш умне тăрса пĕтĕм вăйпа сăх сăхатпăр, анне хыççăн сасăпах кĕл тăватпăр. Анне шучĕпе, çӳлти турра çеç асăнни çителĕклĕ пулмарĕ имĕш, кăмака шăтăкĕнчен вăл типĕ кăмпа туртса кăларчĕ те аттене тивертме хушрĕ. Сăмсана ĕнĕк шăрши çапрĕ. Анне, иксĕмĕре те алăк патĕнчи кĕтесе тăратса, ăвă пек çунакан кăмпапа темле усал-тĕселтен тĕтĕрме тытăнчĕ: «Тухтăр, тухтăр!» — тет.

Урамра каллех Ухик купăсĕн сасси илтĕнсе кайрĕ. Атте чӳрече патне пырса пăхрĕ, анне, тĕтĕрме пăрахса, урамра çынсем шавланине итлесе тăчĕ, унăн чĕтрекен аллинчи кăмпа урайне персе анчĕ.

Çĕрлехи урамра çав-çавах купăс сасси янăрататать.

Такам пирĕн чӳречерен шаккарĕ:

— Лука пичче килте-и?

Атте урамри çынна палларĕ:

— Тиххăн, эсĕ мар-и?

— Эпĕ, Лука пичче, уç-ха, санпа канашласа пăхас тетпĕр.

— Кĕрĕр. Кампа эсир?

Пÿрте виççĕн кĕрсе тăчĕç. Чи малтан тĕпеле Лăриван иртсе ларчĕ. Ун хыççăн — Тиххăн. Виççĕмĕш çын урай варрине ярса пусрĕ те сылтăм аллине, хĕç тытнă пек, сулмаклăн сулса çапла каларĕ:

— Леш тĕнчерен таврăнатăп!

## Словарь ĕçĕ

**чÿрече янахĕ** — подоконник
**шăл шакка** — стучать зубами (сильный испуг)
**çара уран** — босиком
**чĕн** — звать
**лăпчăн** — прильнуть
**ĕсĕклесе хуравла** — отвечать всхлипывая
**мур илесшĕ** — чёрт побери
**лăплантар** — успокаивать
**сурăмран лăпкаса ил** — приголубить
**турăш хыçĕнчен çветтуй шывĕ** — святую воды из-за иконы
**пĕрĕхсе ил** — обрызгивать
**темле усал-тĕселтен тĕтĕрме тытăн** — окуривать, изгоняя нечистые силы
**хĕç тытнă пек** — словно с саблей
**сулмаклăн сул** — размахивая

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Повесть сыпăкĕнчи ашшĕпе амăшĕн тата Эçукпа автор калаçăвĕн партитурине тăвăр, рольпе илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Эçукпа автор ăçталла чупса тарчĕç?
2. Вĕсене хирĕç кам чупса тухрĕ?
3. Ачасем мĕншĕн йĕрсе ячĕç?
4. Ашшĕпе амăшĕ ачасене мĕнле ыйтусем пачĕç? Çав ыйтусене тупса вуласа парăр.
5. Ачасене мĕн хăратнă?
6. Ашшĕпе амăшĕ шучĕпе вилнĕ çын хăратать-и? Мĕншĕн?
7. Амăшĕ мĕнле йăла-йĕрке туса иртterет? Çав вырăна тупса вулăр. Мĕнле тĕллевпе тăвать-ши çак йăлана амăшĕ?
8. Амăшĕ усал-тĕселтен тĕтĕрнĕ вăхăтра урамран мĕн сасси илтĕнсе каять?
9. Пÿрте камсем кĕрсе тараççĕ?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Выртмара тени мĕне пĕлтерет?
2. Алексей Талвир çырнă повесть сыпăкĕ мĕншĕн «Выртмара» ятлă?
3. Ĕлĕк ачасене мĕншĕн выртмана янă?

**Габдула Тукай**

## (1886 - 1913)



***Габдулла Мухамедгарифович Тукай*** *— тутар сăвăçи, литература тишкерӳçи, публицисчĕ, тăлмач. Вăл Хусан кĕпернийĕн Кушлавăш ялĕнче çуралнă. Ача чухнехи пурнăçĕ Кушлавăш çывăхĕнчи Кăрлай ялĕнчи Сахти çĕр ĕçтешĕ патĕнче иртнĕ. Кунта Габдулла çĕр ĕç-пуçне туханать, хавас та курать, хуйхă та тӳсет, вĕренме тытăнать. Уральск хулинче медресере вĕренет, вырăс класне те çӳрет, вĕренӳре хăйĕн пултарулăхне палăртать. Хусанти «Яшен» («Çиçĕм»), «Ялт-юлт» («Зарница») сатирăпа юмор журналĕсенче ĕçленĕ.*

*Сăвăçăн пултарулăхĕ анлă, пысăк. Вăл сăвăсем, поэмăсем, очерксем, публицистика статйисем çырнă. Çавăн пекех вăл Крыловăн юптарăвĕсене, А. Кольцовăн сăввисене тутарла куçарнă.*

*Унăн паллăрах хайлавĕсем: «Мăшăр лаша» (Пара лошадей), «Тăван çĕре» (Родной земле), «Каймаспăр!» (Не уйдем!) сăвăсем, «Шурале» (Шурале) поэма.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Габдулла Тукай хăш халăх сăвăçи?
2. Литературăн хăш жанрĕсемпе сăвăç тухăçлă ĕçленĕ?

## ШУРАЛЕ

*Поэма сыпăкĕ*

Çап-çутă каç. Пĕррехинче
Кăрлай ачи, яш каччă,
Хăла утти тилхепинчен
Турта-турта утатчĕ.

Ĕçре ĕшеннĕ хыççăн кас
Килте выртма аванччĕ.
Анчах та юрлă пурăнăç
Ялан усал, пăтранчăк.

Пире телей çавра курки
Лекмерĕ те, пĕтетпĕр,
Пӳрте хутма вут çук пирки
Çĕрле вăрра çӳретпĕр.

Çап-çутă уйăх айĕнчи
Вăрман чĕнмен, шăп ларнă.
Унта хайхи Кăрлай ачи
Тук-тук шăв-шав кăларнă.

Саланнă сирпĕнсе турпас
Йĕри-тавра çĕр татăк.
Пуçланнă пĕр хăрушă сас
Кĕтмен çĕртен, сасартăк.

Алхаснă хытă шăхăрса,
Йытла вĕрсе кăтартнă,
Качакалла та çухăрса
Пĕччен çынна хăратнă.

Аллисене лаштах ярса
Кăрлай ачи итленĕ,
Хăрасшăн мар, анчах хăпса
Чĕри тăр-тăр чĕтренĕ.

Тăра парать темле амак,
Элес-мелес хăрушă
Чуна сиктермĕш, çăмламас
Хура вăрман пăрушĕ.

Темле хурах-и? Таркăн-и?
Те йĕрĕх-и, эсрел-и?
Этем пек ун пăхкалани.
Этем тесен — хӳреллĕ.

Сăмса тесен, сăмси те ун

Вăлта пек кукăр-макăр.
Ку инкеке курма ан сун,
Курма тивсен — ан макăр!

Алли-ури ун çип-çинçе,
Армак-чармак та хуçăк.
Çунса пăхать çамки çинче
Кăвар пек икĕ куçĕ.

Усал чуна сĕм вăрманта
Пĕччен курас пулсассăн
Тухать хаюллă çынăн та
Питне персе шупка сăн.

Усал шуйттан çамки çинчи
Куççем пăхаççĕ вирлĕ.
Малтан чĕнет Кăрлай ачи:
— Сана кунта мĕн кирлĕ?

— Манран пĕрре те ан шиклен
Этем çури, мăнтарăн!
Анчах та аллăма лексен
Асап курма пултарăн.

Пĕлес килет-и чăннине?
Пĕлес килсен пĕлтерĕп:
Сан пек этем çурисене
Кăтăкласа вĕлерĕп.

Пĕччен çынна курсан вара
Лăх-лăх, их-их кулатăп,
Туй тунă пек çатралăхра
Сике-сике ташлатăп.

— Мана тивме кĕске ăсу,
Тивсен пуçу çухалĕ!
Килет пулсан сан выляссу
Ĕçле вăрман кахалĕ!

Кăрлай ачи каланине
Чăнах та леш итлерĕ,
Тутар ачин чеелĕхне
Хаярлăхне пĕлмерĕ.

Тутар ачи арçурине
Чее суйма пултарчĕ.
Хушша хĕстернĕ савăлне
Пĕрре çапса кăларчĕ.

Шывра çăрттан чее тесен,
Вăрман чейи тил теççĕ,
Анчах ухмах арçурисем
Пурне пĕлсе çитмеççĕ.

Чейисенчен, ăслисенчен
Этем малта, ăнланăр,
Шывсем çинче те çĕр çинче
Курас пулсан сыхланăр!

*Ухсай Якковĕ куçарнă*



## Словарь ĕçĕ

**хăла утти** — саврасый (светло-гнедой) конь
**юрлă пурăнăç** — бедность
**вăрра çÿре** — воровать
**халран кайса тертленнĕ** — мучиться, доводя себя до изнеможения
**тăварлă тар** — соленый пот
**хăрушă сас** — страшный звук
**темле амак** — какой-то недуг
**элес-мелес хăрушă** — черезвычайно страшный
**чуна сиктер** — душа ушла в пятки
**йĕрĕх** — духи
**эсрел** — черт, нечистая сила
**армак-чармак** — растопыренный, корявый
**çунса пăх** — обжигающий взгляд
**алхаснă хытă шăхăрса** — бесновался со свистом
**качакалла çухăр** — вопил как козёл
**пĕччен çынна хăрат** — пугал одинокого путника
**алăсене лаштах яр** — опустить руки
**чĕре тăр-тăр чĕтре** — дрожь в сердце
**усал шуйттан** — злой чёрт
**куççем пăхаççĕ вирлĕ** — смотреть насквозь
**ан шиклен** — не бойся

**этем çури, мăнтарăн** — человеческое дитя, несчастный
**асап курма пултар** — можешь пострадать
**çатралăх** — чаща, валежник
**сике-сике ташла** — танцевать в присядку
**кĕске ăс** — короткий ум
**хĕстернĕ савăл** — зажатый клин

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Кăрлай ачи каçхине вăрмана мĕн тума кайнă? Çав вырăна тупса вулăр.
2. Вутă каснă вăхăтра кĕтмен çĕртен вăл мĕн сассине илтнĕ?
3. Шурале мĕн пек? Тупса вулăр.
4. Шурале мĕнле сасă кăларнă? М.Федоровăн «арçурийĕ» мĕнле сасă кăларнă? Çав вырăнсене тупса вулăр, танлаштарăр.
5. Шуралене тутар ачи мĕнле улталать? Çав вырăна тупса вулăр.
6. Шурале мĕнрен мĕнле майпа пулнине автор ăнлантарать-и?
7. Автор çынсене мĕнле пулма хушать?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Ăнлава малалла тăсăр.*

**Поэма — ...**
**Баллада — …**
**Поэма — …**
**Уйланăш (баллада) — …**

## Проект

Пĕчĕк тĕпчев ĕçĕ туса ирттерĕр. Маларах вуланă М. Фёдоровăн «Арçури» поэмине аса илĕр. Г. Тукайăн «Шурале» поэмине М. Фёдоровăн «Арçури» поэмипе тата А. Пушкинăн «Бесы» поэмипе танлаштарăр, пĕр пеклĕхпе уйрăмлăхсем тупса танлаштару таблицине (сравнительная таблица) тултарăр.

| **Арçури** | **Бесы** | **Шурале** |
|---|---|---|
| | *Авторсем* | |
| М.Федоров | А.Пушкин | Г.Тукай |
| | *Ĕç ăçта пулса иртет?* | |
| | *Мĕн пек?* | |
| | *Мĕнрен пулнă?* | |

# УСАЛТАН ТАР, ЫРĂ ПАТНЕ ПЫР — БЕГИ ПРОЧЬ ОТ ДУРНОГО, ИДИ К ДОБРОМУ

## Александр Кăлкан
## (1911 – 1988)



***Александр Кăлкан (Александр Дмитриевич Антонов)*** *— чăваш сăвăçи, драматургĕ, тăлмач.*

*Вăл Тутарстанăн Пăва районĕнчи Çĕн Мертлĕ ялĕнче çуралнă. Хусанти Чăваш педагогика техникумĕнче тата институтĕнче, Мускаври литература аслă курсĕнче пĕлӳ илнĕ. Шкулта, çыравçăсен пĕрлешĕвĕнче, «Хатĕр пул» журналăн редакторĕнче, «Пионер сасси» хаçат редакцийĕнче, ӳнер управленийĕнче вăй хунă.*

*Александр Кăлкан Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ ӳнер ĕçченĕ ята, «Хисеп палли» ордена тивĕçнĕ.*

*Александр Кăлкан — нумай енлĕ çыравçă. Вăл сăвăсем, юптарусем, пьесăсем çырнă. Çавăн пекех вăл А. Островский, Н. Гоголь, Н. Погодин хайлавĕсене чăвашла куçарнă.*

*Александр Кăлканăн паллăрах хайлавĕсем: «Анисса» (Анисса), «Алим» (Алим), «Авлантарчĕç» (Женили), «Маргарита тавăрать» (Маргарита мстит) пьесăсем, «Автансем» (Петухи), «Наян Кампур» (Лодырь Камбур) юптарусем.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Александр Кăлкан литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
2. Çыравçă ăçта çуралнă? Вăл çуралнă вырăна карта çинче тупăр.
3. Чăваш çыравçи ăçта-ăçта пĕлӳ илнĕ?
4. Вăл камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?
5. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.

## ПАН УЛМИ
*Калав*

Эпĕ ача чух пирĕн пӳрт çумĕнче пĕчĕк сад пахчи пурччĕ. Унта ик-виçĕ тĕп улмуççи, çавăн чухлех чие çырлипе çĕмĕрт тата хурлăханпа хăмла çырли тĕмĕсем ешеретчĕç. Садри улма-çырла лайăх пиçсе пулса çитессе эпир нихçан та кĕтсе тăман. Вĕсем кăшт чăмăртансанах, ешĕллех татса çисе пĕтереттĕмĕр. Пире, ача-пăчана, витаминсем ытларах кирлĕ пулнă, анчах эпир ун чух нихçан та тăраниччен улма-çырла çисе курман. Улма-çырла терĕр-ха! Ун чухне пирĕншĕн кишĕр те уяв çимĕçĕ пулнă. Аттесем кĕркунне Пăвана пукрав ярмăрккине кайсан, эпир вĕсене ялтан пĕр çухрăм хире тухса кĕтсе илеттĕмĕр. Вĕсем вара пире тӳрех кишĕр тыттаратчĕç.

— Манăн кишĕр пысăкрах! — тетчĕ кишĕр пекех хĕрлĕ çӳçлĕ Емельян.

— Манăн кишĕр тутлăрах! — теттĕм эпĕ. Вара эпир пĕр-пĕрин кишĕрне çыртса пăхаттăмăр та:

— Пĕр пекех! — тесе килĕштереттĕмĕр.

Питĕ туслăччĕ эпир Емельянпа. Пĕр-пĕр илемлĕ кĕленче катăкĕ е урăх тĕлĕнмелле япала, калăпăр, яка качă-мăчи, е çутă шапа хуранĕ тупсан, пĕр-пĕринпе пуçма-пуçах улăштараттăмăр. Кусналла е мерелле те яланах пĕрле выляттăмăр. Манăн анне е унăн кукамăшĕ икерчĕ е хуран кукли пĕçерсен те, эпир пĕр-пĕрне хăналамасăр ирттерсе яман.

Пĕррехинче Емельян ман пата йĕкĕр чăмăр пысăкăш хĕрлĕ пан улми йăтса пычĕ.

— Пар пĕккине, — терĕ вăл, эпĕ çаваран тунă йывăç аврăлă пĕкĕпе пусма çинче ухă йĕппи шĕвĕртсе ларнине курсан.

Эпĕ Емельянăн шухăшне тӳрех ăнлантăм: вăл мана пан улми çитерессшĕн.

— Ме, — терĕм, ăна хамăн пĕкке тыттарса.

Емельян чăнах та хăйĕн хĕрлĕ пан улмине çурмаран касрĕ те чи хĕрлĕрех пайне мана пачĕ.

— Çи! — терĕ вăл, мана хăналама пултарнăшăн хытă савăнса. Вара ытарайми пан улмине иксĕмĕр те шатăрт! çыртса илтĕмĕр.

— Питĕ тутлă! — терĕм эпĕ, çур пан улмине самантрах çисе ярса.

— Тата пулсанччĕ! — терĕ Емельян, ман шухăша пĕлнĕ пекех.

— Ăçтан илтĕн эс ăна? — ыйтрăм эпĕ.

— Пан улми сутакан тутарăнне йăкăртрăм, — пĕлтерчĕ Емельян.

— Курмарĕ-и? — сехĕрленсе ыйтрăм эпĕ.

— Курмарĕ, — хуравларĕ Емельян, чеен кулкаласа.

— Ну, курнă пулсан, пушăпа лектеретчĕ, — хушса хутăм эпĕ.

— Лектеретчĕ, — килĕшрĕ Емельян, хĕвелпе сĕвĕнсе пĕтнĕ шĕвĕр сăмсине нăш туртса.

Çак вăхăтра урамра:

— Алма саттам, алма! — тесе кăшкăрни илтĕнсе кайрĕ.

— Пĕлетĕн-и, — терĕ Емельян, — вăл икĕ кĕренке ыраш пуçне пĕр кĕренке пан улми парать. Тулькăш, пирĕн кĕлете питĕрнĕ çав. Уççи — кукаçи кĕсйинче, — хушса хучĕ вăл салхуллăн.

Емельян мана татах пан улми çитерме хатĕррине курсан, эпĕ çемçелсех кайрăм.

— Тăхта! — терĕм ăна. — Пирĕн кĕлет алăкне шалтан сăлăп янă. Эпĕ уçма пĕлетĕп.

— Аçу килте-и?

— Çук.

— Аннӳ?

— Пӳртре ман йĕме сапласа ларать.

— Эппин, кай та пĕр саппун ыраш тултарса тух, — ăс пачĕ Емельян.

Эпĕ, ним шутласа тăмасăр, кĕлетелле чупрăм...

Ĕлĕк пирĕн енче арçынсем те саппун çыхса çӳретчĕç. Йĕм чĕркуççийĕ çĕтĕлесрен тата таса мар алăсемпе сăтăркаласа кĕпе умне вараласран мана та анне шурă пиртен саппун çĕлесе панăччĕ. Акă вăл хăçан чăннипех кирлĕ пулчĕ! Халех пĕр саппун ыраш йăтса каятăп та çур саппун пан улми йăтса килетĕп. Çак шухăшпа хавхаланса кĕçех сарайне чупса çитрĕм. Унтан кĕлет

алăкĕн сăлăпне туртса уçрăм. Тепĕр минутран кĕлете кĕрсе кайрăм та пÿлмерен икĕ луттук ыраш ăсса, саппун арки çине ятăм. Кĕлетрен тухма кăна ĕлкĕртĕм — пăхатăп: алăк умĕнче атте тăра парать!

— Кил-ха, кăтарт-ха: мĕн унта санăн? — ыйтрĕ вăл яланхинчен темле çинçерех тухакан сасăпа.

— Ыраш — терĕм эпĕ, вырăнтан тапранма та хăраса.

— Мĕн тума кирлĕ пулчĕ вăл сана? — каллех ыйтрĕ атте, куç умĕнчех хаярланма пуçласа.

— Тутартан панулми илме, — мăкăртатрăм эпĕ, чутах макăрса ямасăр.

— Эс кам ывăлĕ? — сасартăк ним кĕтмен ыйту пачĕ вăл мана. Анчах эпĕ çухалса каймарăм, ăна хирĕç çийĕнчех:

— Санăн, — тесе хутăм.

— Çук! — терĕ атте, — эс ман ывăл мар. Ман ывăлсем нихçан та кĕлетрен тырă йăтмаççĕ!

Эпĕ, хăранипе, чĕтремех пуçларăм. Атте çакна асăрхарĕ те эпĕ аркă çинчи ыраша çĕре тăкса ярасран хăрарĕ пулмалла.

— Кĕрсе яр пÿлмене каялла, — хушрĕ вăл лăпкăрах сасăпа.

Эпĕ васкаса кĕлете кĕтĕм те саппун çинчи ыраша пÿлмене чашлаттартăм. Кĕлетрен каялла тухнă чух пÿрт пусми еннелле пăхрăм. Унта халь Емельяна курмарăм. Вăл, ман аттене курсанах, тухса шунă пулмалла. Атте хăй те ăна курса юлнă пуль çав. Эпĕ кĕлетрен тухсанах, вăл манран:

— Кам вĕрентрĕ сана? — тесе ыйтрĕ.

Ман аттепе анне эпĕ хамăн айăпа çынсем çине йăвантарнине питĕ юратмастчĕç. Эпĕ урамран киле макăрса кĕрсен, вĕсем мана хамах: «Ху айăплă», — тесе лектеретчĕç. Çавăнпа та эпĕ хамăн айăпа Емельян çине йăвантарма шутламарăм.

— Никам та вĕрентмен, — тесе яваплярăм.

Анчах эпĕ ун пек калани хальхинче аттене килĕшмерĕ пулмалла.

Суять тата! — терĕ вăл, мана ĕнсерен малалла тĕксе ярса.



## Словарь ĕçĕ

**кăшт чăмăртансанах** — начали образовывать завязи
**уяв çимĕçĕ** — праздничная еда
**пукрав ярмăрки** — ярмарка на Покров
**килĕштер** — соглашаться
**тĕлĕнмелле япала** — удивительная вещь
**яка качă-мăчи** — гладкий кварц
**пуçма-пуçах улăштар** — баш на баш
**кусналла е мерелле выля** — играть в бабки или в чижи
**йĕкĕр чăмăр** — два кулака
**пĕкĕ** — дуга
**ухă йĕппи** — стрела
**хăналама пултар** — может угостить
**сутаканран йăкăрт** — своровать у продавца
**кăшкăрни илтĕнсе кай** — услышать крик
**уççи** — ключ
**хушса хур** — добавить
**салхуллă** — грустный
**кĕлет алăкĕ** — дверь амбара
**сăлăп** — задвижка
**хавхалан** — вдохновляться, воодушевляться
**луттук** — лоток, совок
**тăра пар** — стоит
**мăкăртат** — ворчать
**чĕтремех пуçла** — начал дрожать

**чашлаттар** — выливать с шумом, выплескивать
**тухса шу** — сбежать
**явапла — отвечать**
**айӑпа йӑвантар** — валить вину на другого
**ӗнсе** — затылок
**тӗксе яр** — оттолкнуть

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

*Ӑнлава малалла тӑсӑр.*

**Рассказ** – это ... .
**Калав** тесе … .

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Калуҫӑсен (повествователь) сад пахчинче мӗнле ҫимӗҫсем ӳснӗ?
2. Ачасем мӗншӗн улма-ҫырла пиҫсе-пулса ҫитессе кӗтсе тӑман?
3. Пӑвари пукрав ярмӑрккинчен ашшӗ-амӑшӗ ачасем валли мӗн илсе килнӗ?
4. Калуҫӑн тус-тантӑшӗ мӗн ятлӑ?
5. Ачасем пӗр-пӗринпе туслӑ, килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ-и? Вӑл ӑҫтан курӑнать? Ҫав вырӑнсене тупса вуласа парӑр.
6. Пӗррехинче Емельян хӑйӗн юлташне ӑҫтан тупнӑ хӗрлӗ пан улмипе хӑналанӑ?
7. Тутар сутуҫи панулмине мӗнпе улӑштарса парать?
8. Ачасем мӗн тума шутланӑ?
9. Калуҫӑ кӗлетрен ыраш илсе тухма пултарнӑ-и? Мӗншӗн?
10. Ача мӗншӗн айӑпне хӑйӗн ҫине илнӗ?

**Прототип** — реальный человек, облик, поведение, события, жизни которого послужили автору основой для создания образа литературного героя.
**Прототип** — чӑн пурнӑҫри ҫын; ҫыравҫӑ унӑн сӑн-сӑпатне, характерне пӗр-пӗр хайлаври персонажӑн сӑнарне калӑпланӑ чух тӗпе хурать.

## Илемлӗ вулама хӑнӑхатпӑр

Калаври Емельянпа автор хушшинчи калаҫӑвӑн партитурине тӑвӑр, рольпе илемлӗ вуласа парӑр.

### ПАН УЛМИ

*Калав. Малалли*

Ҫав вӑхӑтра эпӗ урасемпе хӑвӑрт ӗҫлемен пулсан, паллах, чикӗленсе кайса, ҫӗре сӑмсапа сухалаттӑм. Анчах, аттерен тарса хӑтӑлас шутпа, эпӗ малалла хыттӑн чупса кайрӑм. Вара, пӗр чарӑнмасӑрах, калинккерен тухса пахчаналла вӗҫтертӗм. Унта эпӗ хамран кӑшт ҫеҫ лутрарах ӳснӗ ҫӗр улми аври хушшине чӑмрӑм та пӑштах пултӑм...

Нумай выртнă-и эпĕ ешĕл йăран хушшинче, сахал-и — ăна калама йывăр, мĕншĕн тесен эпĕ унта çывăрсах кайнă. Вăранасса вара анне сассине илтсе вăрантăм. Вăл лупас хыçне тухнă та:

— Санькка, Санькка, ăçта эсĕ?! — тесе кăшкăрать. Эпĕ симĕс çĕр улми çулçисем хушшинчен пуçа кăларса пăхрăм та, анне пĕчченех тăнине курсан: Кунта эпĕ! — тесе сас патăм.

— Мĕн туса ларатăн унта? Атя пÿрте! — чĕнчĕ анне, ман паталла путене пек йăпăр-йăпăр утса пырса.

— Пымастăп. Атте хĕнет, — терĕм эпĕ, аннен пысăк хура куçĕсенче хÿтлĕх шыраса.

— Çук, хĕнемест. Хам хĕнеттерместĕп, — лăплантарчĕ анне, мана алăран çавăтса.

Пÿрте кĕрсен, эпĕ тĕлĕнсех кайрăм: сĕтел çинче вун икĕ çын çимелĕх яшка кĕрекен йывăç тирĕк тулли пан улми купаланса тăрать. Унта хĕп-хĕрли те, шап-шурри те, сарăрах тĕсли те пур. Пăхса ытармалла мар!

— Сан пан улми çиес килет-и? — ыйтрĕ атте манран.

— Ĕччĕ, — терĕм эпĕ, шултра та илемлĕ пан улмисем çине куçпа çиес пек пăхса.

— Эппин, илсе çи, — хушрĕ атте çав тери кăмăллăн. Ман унран хăрасси таçта кайса кĕчĕ. Эпĕ сĕтел патне хăюллăн утса пытăм та сылтăм алăпа пĕр хĕп-хĕрлĕ пан улмине ярса илтĕм.

— Тата ил, — сĕнчĕ атте.

Эпĕ вара сулахай алăпа та тепĕр панулми чăмăртаса тытрăм. Анчах хĕрлине мар, сарăрах тĕслине суйласа илтĕм.

— Ил, ил. Татах ил, — йĕкĕлтенĕ пек каларĕ атте. Тен, вăл йĕкĕлтемерĕ те пуль, мана çеç çапла туйăнчĕ пуль. Анчах эпĕ пур пĕрех çăткăнланмарăм.

— Кусене çисе ярсан, тен, татах илĕп, — тесе пĕлтертĕм.

— Ара, сана нумай та кирлĕ мар иккен! Ху çапах кĕлетрен ыраш йăтма пуçланă, — каллех манăн «çылăха» аса илчĕ атте. — Эсĕ ирĕк паман пуль-çке ăна, амăшĕ? — хушса хучĕ вăл, анне куçĕнчен чеен пăхкаласа.

— Çук! — терĕ анне. — Анчах вăл текех нихçан та ун пек тумасть. Çапла вĕт, Санькка?

— Ĕччĕ! — терĕм эпĕ, анне ман хута кĕнĕшĕн çав тери савăнса. Вара хамăр мĕнле йăнăш тунине пĕлтерме тата «парăма» парса татма Емельян патне тухса чупрăм.

Унтанпа вăтăр çул ытла хыçа тăрса юлчĕ, анчах пан улми «историйĕ» ахаль иртмерĕ. Ман атте çавăн хыççăн хамăр пахчана кашни çулах çĕнĕрен çĕнĕ улмуççисем лартрĕ. Унпа пĕрле тăрмашса, эпĕ те сад ĕçне питĕ юрататакан пултăм. Каярахпа вара, çине тăрсах, сад пахчи техникумĕнчен вĕренсе тухрăм. Халĕ эпĕ хамăн ватă аттепе пĕрле тăван колхозăн садĕнче ĕçлетĕп. Питĕ чаплă пирĕн колхоз сачĕ, вăл ĕнтĕ çирĕм виçĕ гектар çинче сарăлса ларать.

Пырса курăр ачасем, пирĕн сада, тăраниччен улма-çырла çитерĕп.

## Словарь ĕçĕ

**чикĕленсе кай** — полететь вверх тормашками
**çĕре сăмсапа сухала** — пахать землю носом
**тарса хăтăлас** — сбежать
**калинкке** — калитка
**пахчаналла вĕçтер** — бежать в сторону огорда
**çĕр улми аври хушшине чăм** — укрыться в ботве картофеля
**пăштах пул** — замолчать
**лупас** — амбар
**йăпăр-йăпăр ут** — ходить мелкими шагами
**сас пар** — дать звук
**хӳтлĕх шыра** — искать защиту
**купаланса тăр** — громоздиться
**пăхса ытармалла мар** — не наглядеться
**куçпа çиес пек** — наесться глазами
**хăрасси таçта кайса кĕчĕ** — испуг исчез
**йĕкĕлтенĕ пек кала** — сказать с издёвкой
**çăткăнлан** — жадничать
**çылăх** — грех
**хута кĕр** — заступиться
**хыçа тăрса юл** — остаться позади
**тăрмаш** — возиться

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Санькка ашшĕнчен ăçта тарса пытаннă?
2. Çĕр улми аври хушшинче вăл мĕн вăхăт хушши выртнă?
3. Саньккана кам вăратнă?
4. Санька мĕншĕн килне кĕме хăранă?
5. Пӳрте кĕрсен вăл мĕн курнă?
6. Вăл сĕтел çинчен миçе пан улми илнĕ?
7. Ашшĕ ăна мĕншĕн сĕтел çинчен нумайрах пан улми илтересшĕн пулнă?
8. Ӳссе çитсен Санькка ăçта ĕçлеме пуçланă? Мĕншĕн-ши?
9. Мĕнле шутлатăр, Санька сăнарĕ шухăшласа тупнă сăнар-и? Е автор калаври хăй çинчен çырса кăтартнă-и?

**Психологический рассказ** — это разновидность рассказа, в котором автор изображает и исследует «внутренний мир человека» и «тончайшие движения его души».

**Дидактический рассказ** — это произведение, содержащее поучение, в художественных образах дающее читателям представление об этической норме.

Калавсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Пĕрисем чун-чĕре хусканăвне, ыратăвĕпе савăнăçне кăтартаççĕ. Вĕсене **психологиллĕ** калавсем теççĕ. Теприсем вĕрентсе калаççĕ. Вĕрентнине ваттисен сăмахĕсемпе пĕтĕмлетеççĕ. Кусем вара **дидактикăллă** (ăса вĕрентсе калакан) калавсем пулаççĕ.

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Калаври ашшĕпе Санькка хушшинчи калаçăвăн партитурине тăвăр, рольпе илемлĕ вуласа парăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Санькккан ачалăхĕ мĕнлерех вăхăтра иртнĕ-ши? Çакна мĕнпе çирĕплетме пултаратăр?

## Юрий Скворцов
## (1932 - 1977)



***Юрий Илларионович Скворцов*** *— чăваш прозаикĕ, сăвăçи, тăлмач. Вăл Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи Хурăнкасси ялĕнче çуралнă. Вăтам шкулта, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕнче, Чăвашрадио корреспонденчĕнче, «Тăван Атăл» журналăн яваплă секретарĕнче ĕçленĕ.*

*Çыравçăн пултарулăхĕ анлă, пысăк. Вăл сăвăсем, калавсем, повеçсем çырнă. Чăваш композиторĕсем унăн сăввисемпе юрăсем çырнă. Çавăн пекех Ю. Скворцов Сергей Есенин, Янка Купала сăввисене, серб, венгер, мари çыравçисен хайлавĕсене чăвашла куçарнă.*

*Ю. Скворцовăн пултарулăхĕнче «Укак хурăнĕ», «Хĕрлĕ мăкăнь», «Çын ăшши» повеçсем паллă вырăн йышăнаççĕ. Литература пултарулăхĕнче вĕсем илемлĕ философи йышне кĕреççĕ.*

*Çыравçăн паллăрах кĕнекисем: «Сурăм хĕрĕ» (Девушка с берегов Сормы), «Хĕрлĕ мăкăнь» (Красный мак), «Укак хурăнĕ» (Береза Угахви), «Хĕвеле хирĕç» (Навстречу солнцу), «Çын ăшши» (Тепло людское), «Сарă кунсем» (Светлые дни), «Çул юлташĕ» (Спутник), «Сăваплă вут» (Священный огонь).*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Юрий Скворцов литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
2. Вăл ăçта çуралса ÿснĕ? Çав вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
3. Чăваш çыравçи куçару ĕçĕпе ĕçленĕ-и?
4. Çыравçăн паллăрах кĕнекисене калăр.

## ПАЛЛАМАН АЧА
*Калав*

Çичçырма ялĕн тулашĕнче лапамра ăшăхланса юлнă пăрахăç пĕве пур. Пĕвинче хур-кăвакал çеç шапăлтатать. Ялти ача-пăча шыва кĕме те, пулла та çÿремест унта.

Анчах пĕр вун ик — вун виç çулхи палламан ача эрнере пĕрре те пулин килсе каятех çакăнта. Вăл яланах мăн çул хĕрринчен уй урлă каçса килет те пĕве хĕрринче чарăнать, чĕркуççи таран шыва кĕрсе чавса тăршшĕ авăрлă пĕчĕкçĕ ăскăçпа аппаланать, бидонне темскер тултарса, каялла автобус чарăннă çĕре утать.

— Пулă тытма килет пулмалла ку ача. Хамăр тытмастпăр — таçтан хуларан киле-киле тытса каяççĕ, — тарăхаççĕ Çичçырма ачисем Кольăпа Петĕр. Чăн та, çак ачана пĕве хĕрринче курчĕç те ăна хупăрласа тытрĕç,

бидонне тăпăлтарса илчĕç. Анчах палламан ачан бидонĕнче пăтранчăк шывсăр пуçне урăх ним те пулмарĕ.

— Ура ярса ан пуснă пултăр пирĕн ял пĕви енне урăх! Хĕнетпĕр! — каялла вăркăнтарса пачĕç вара вĕсем ачана бидонне. Ача ним шарламасăрах ăскăçĕпе пушă бидонне йăтрĕ те мăн çул хĕрнелле пăрăнса кайрĕ.

Кольăпа Петĕр тепĕр кунне хăйсем вăлтасем йăтса çак пĕве хĕррине пулла анчĕç. Кăнтăрлаччен ларчĕç вĕсем пĕве хĕрринче — пĕр вăлта хулли те пĕрре хускалса илмерĕ… Ачасем ĕненмесĕр тата ик-виçĕ кун умлă-хыçлă пĕве хĕррине тухрĕç. Пĕр шыв калти те тепĕр шапа кăна тытрĕç вĕсем.

— Ухмаха ернĕ пуль эсир? Мĕн пулли пултăр çав пĕвере? Никам та пулă яман унта! — кулчĕç вĕсенчен ялти ачасем те, çитĕннисем те.

Кольăпа Петĕр, чăн та, ку пĕвене урăх пулла каймарĕç, анчах леш палламан ача çав-çавах бидон йăтса унталла утнине темиçе те курчĕç.

— Тем тесен те, пулă тытать вăл ача. Темĕскер пурах унта… Атя пĕрре сыхласа тăрар — мĕн тытать вăл…— терĕ Петĕр Кольăна.

Кольăпа Петĕр, çав палламан ача тепре килнине курсан, çыран хĕррине хăва тĕмĕ хыçне пытанса ларчĕç.

Акă арçын ача, яланхи пекех, пĕчĕк бидонпа ăскăç йăтса килчĕ те хĕрарăмсем кĕпе çăвакан кĕпер çинче чарăнчĕ. Вăл марлĕрен тунă алтăр пысăкăш ăскăçпа шывран темĕскер ăса-ăса илсе бидона ячĕ. Бидонĕ кĕçех тулчĕ пулмалла. Палламан ача ўкрĕ те каялла кайма ура çине тăчĕ. Çак вăхăтра ун умне Кольăпа Петĕр сиксе тухрĕç.

## Словарь ĕçĕ

**ăшăхланса юл** — сильно обмелеть
**пăрахăç пĕве** — заброшенный пруд
**хур-кăвакал шапăлтатать** — плещутся гуси и утки
**уй урлă каçса кил** — приходить через поле
**пĕве хĕринче чарăн** — остановиться на берегу пруда
**ăскăçпа аппалан** — возится с черпалкой
**хупăрласа тыт** — окружить
**тăпăлтарса ил** — вырвать
**хĕне** — избить
**вăркăнтарса пар** — швырнуть
**хускалса ил** — двигаться
**умлă-хыçлă** — друг за другом
**пĕве хĕррине тух** — приходить на берег пруда
**шыв калти** — тритон
**ухмаха ер** — сдуреть
**тем тесен те** — что ни говорите
**сыхласа тăр** — охранять
**пытанса лар** — спрятаться
**кĕпе çăвакан кĕпер çинче** — помост для стирки белья
**сиксе тух** — выскочить

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?*

**…** — это речевой портрет. Характеристика персонажа литературного произведения через его речь.
**…** — литература хайлавĕнчи персонажа унăн пуплевĕ урлă кăтартса пани.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Çичçырма ялĕнчи пĕвене ялти ача-пăча шыва кĕме çӳрет-и?
2. Кашни эрнерех çак пĕвене кам килсе каять?
3. Пĕвере палламан ача мĕн тăвать?
4. Кольăпа Петĕр мĕншĕн тарăхаççĕ?
5. Çак пĕвере Кольăпа Петĕр мĕн тытрĕç?
6. Ачасем пĕвере пулă çуккине ĕненчĕç-и? Мĕншĕн?

**Литературный образ** — это художественное отражение с помощью слова человеческих характеров, событий, предметов, явлений в конкретной, индивидуально-чувственной форме.

**Литература сăнарĕ** — çынна, çут çанталăкпа чĕр чунсен тĕнчинчи пĕр-пĕр япалана литературăпа ӳнер хайлавĕсенче илемлĕх мелĕсемпе уçă курса сăнлани.

### ПАЛЛАМАН АЧА

*Калав. Малалли*

— А-а, эс каллех килтĕн-и-ха? — вашт! туртса илчĕ Петĕр палламан ача аллинчен бидона, шала пăхрĕ. Анчах унта каллех пăтранчăк шывсăр пуçне урăх нимĕн те çуккипе ним тума аптраса тăчĕ.

— Ан тăкнă пултăр! — кăшкăрса ячĕ арçын ача, бидона ярса тытса.

— Эс кам ачи, ăçтан? — ыйтрĕ Петĕр хаяррăн, бидонне алран ямасăр.

— Хуларан.

— Каллех пулă тытма килтĕн-и?

— Çак пулă-и вара вăл? Пар бидона! — парăнмарĕ ача.

— Хм… Епле чăркăшланать!.. Тыттарса яр ăна, Петĕр, янахран. Тен шпион пуль вăл, — терĕ Коля.

— Эс мĕн ятлă? — ыйтрĕ Петĕр, чăн та, шухăша кайса.

— Женя.

— Миçемĕш класа каятăн?

— Кĕркунне — улттăмĕшне.

— Халь мĕн турăн эс кунта? — шпион тытрăм тесех ачана тĕпчеме пуçларĕ Петĕр.

— Планктон тытрăм.

— Мĕн-мĕн? Çавăн ятлă пулă-и? Ăçта вăл кăтарт-ха? — тепĕр хут бидон ăшне пăхам пек турĕ Петĕр.

— Лайăхрах пăх эс! — тутине мăкăртрĕ палламан ача.

— Хе-е! Эс чĕлхе вылятма юрататăн иккен. Тен, чăнах шпион пуль эс?..

— Нимле шпион та мар… Суккăр мар пулсан, лайăхрах пăх эс...

Хальхинче Коля пĕшкĕнсе бидона пăхрĕ…

— Ха, темскер пур унта… Кур-ха, Петĕр, кур, у-уй, кĕшĕлтетеççĕ!..

Петĕр те тепĕр хут бидон умне пĕшкĕнчĕ.

Чăн та, мĕн кăна çук иккен бидонти шывра…

— Мӗн тӑватӑн вара эс ку шыв пыйти-шӑркипе? — тӗлӗнчӗ хальхинче Петӗр, палламан ача ҫине пуҫне ҫӗклесе.

— Пулӑсене тӑрантаратӑп.

— Мӗнле пулӑсене?

— Ман аквариум пур…

— А-ав мӗн икке-ен…— ура ҫине тӑчӗ Коля. — Пар эс ӑна, Петӗр, бидонне… Илсе кайтӑр хӑйӗн хуртлӑ шывне!

— Нумай-и вара сан пуллисем? — ыйтрӗ хальхинче Петӗр ҫемҫереххӗн.

— Ҫителӗклех, — тавӑрчӗ Женя.

— Тен, пире те паратӑн?

— Пырса пӑхӑр — хӑшӗ килӗшет… Пама пултаратӑп.

— Суятӑн эс!..

— Айтӑр манпа пӗрле.

— Хулана-и?

— Хулана ҫав. Инҫе мар кунтан. Кайма вунӑ пус та килме вунӑ пус пултӑр…

Петӗрпе Коля, чӑн та, Женьӑпа пӗрле хулана кайса курма шутларӗҫ. Хулана ҫитсен, Женя патне кӗчӗҫ.

Женьӑн килӗнче, чӑн та, аквариум пур иккен. Пӗрре кӑна та мар, виҫҫӗ — вун ултӑ литр шыв кӗрекеннинчен пуҫласа ҫичӗ литр кӗрекенни таран. Кунсӑр пуҫне вӑлча сапма, ҫӑвӑрлама янӑ пулӑсем, тин вӑлчаран тухнисемпе тин ҫуралнисем уйрӑм кӗленче савӑтсенче ишсе ҫӳреҫҫӗ.

Тӗпне шакӑ чулӗ, хӑйӑр сарнӑ савӑтсенче кашнинчех шывра ӳсекен мӑк, хупах, упа сарри, хӑмпӑ куракӗ, шапа лӗкки пур. Пӗри тӗпӗнчен ҫитӗнет, тепри ҫиелте ишсе ҫӳрет. Ку куракӑсем хӗвел пӑхнӑ чух шыва кислород кӑлараҫҫӗ иккен, ҫав вӑхӑтрах пулӑшӑн апат та.

Ҫакӑнтан вара Петӗрпе Коля Ҫичҫырма ялӗн пӗви еннелле хуларан бидонпа ӑскӑҫ йӑтнӑ арҫын ача килессе чӑтӑмсӑррӑн кӗте пуҫларӗҫ. Женя килсен, хӗпӗртесе хирӗҫ чупса тухрӗҫ, хӑйсем те унпа пӗрле пӗверен планктон тытрӗҫ.

Петӗрпе Коля хулари «палламан ачапа» ҫывӑх туслашса кайрӗҫ.

## Словарь ӗҫӗ

**пӑтранчӑк шыв** — мутная вода
**аптраса тӑр** — быть в растерянности
**ярса тыт** — схватить
**епле чӑркӑшланать** — артачится
**тыттарса яр ӑна, янахран** — дать по морде
**тутине мӑкӑртрӗ** — надуть губы (обидеться)
**чӗлхе вылят** — болтать
**кӗшӗлтет** — кишит
**пуҫне ҫӗкле** — поднять голову
**ҫемҫереххӗн ыйт** — спросить помягче
**ҫителӗклех** — достаточно
**тавӑр** — вернуть
**вӑлча сап** — метать икру, нереститься
**ҫӑвӑрлама яр** — нереститься
**тин вӑлчаран тух** — только вылупились
**хупах** — лопух
**упа сарри** — папоротник
**шапа лӗкки** — ряска

## Илемлӗ вулама хӑнӑхатпӑр

Калаври Кольӑпа Петӗр тата палламан ача хушшинчи калаҫӑвӑн партитурине тӑвӑр, рольпе илемлӗ вуласа парӑр.

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Калавра пурӗ миҫе сӗнар? Вӗсен ячӗсене каласа тухӑр.
2. Петӗр палламан ача аллинчи бидона мӗншӗн туртса илчӗ?
3. Палламан ача мӗн ятлӑ?
4. Вӑл ӑшӑхланса юлнӑ пӗвене мӗн тума килнӗ?
5. Женьӑн килӗнче ачасем мӗн курчӗҫ?
6. Женя пулӑсем ҫинчен нумай пӗлет-и? Хӑвӑр шухӑша калаври тӗслӗхпе ҫирӗплетӗр.
7. Мӗнле шутлатӑр, Петӗрпе Коля хулари «палламан ачапа» мӗншӗн ҫывӑх туслашаса кайрӗҫ-ши?

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

1. Кольӑпа Петӗр мӗнлерех ачасем? Вӗсем мӗнлерех пулнине автор пуплев урлӑ еплерех кӑтартса парать? Ҫав вырӑнсене тупса вулӑр?
2. Ю. Скворцов ҫырнӑ «Палламан ача» мӗнле калав? Психологиллӗ калав-и? Дидактикӑллӑ калав-и?

Ырӑ (пархатарлӑ) тата сивлек (пархатарсӑр) сӑнарсем пулаҫҫӗ. Ыррисем пирӗн кӑмӑла каяҫҫӗ, пурнӑҫра эпир вӗсем пек пулма тӑрӑшатпӑр. Сивлеккисем хӑйсен киревсӗр ӗҫӗсемпе палӑраҫҫӗ, эпир вӗсене кӑмӑлламастпӑр.

## Халӑх ӑс-хакӑлӗ

*Ваттисен сӑмахӗсен пуҫламӑш пайне тупӑр:*

1. … ыр ятпа асӑнаҫҫӗ.
2. … пӗчӗккине ҫухатнӑ.
3. … ачаран паллӑ.
4. … хӑвна та тиркемӗҫ.
5. … ырӑ ят илеймӗн.

# ÇАКĂ ÇУТĂ ТĔНЧЕРЕ ВĂЙЛИ ÇУК ТА ЭТЕМРЕН — НЕТ СИЛЬНЕЕ ЧЕЛОВЕКА В ЭТОМ МИРЕ НИКОГО

## Петĕр Хусанкай
## (1907 – 1970)



***Петĕр Хусанкай (Петр Петрович Хусанкай)*** *— чăваш сăвăçи, литература тĕпчевçи, публицист, тăлмач. Вăл Тутар Республикин Элькей районĕнчи Сиктĕрме (халĕ Хусанкай) ялĕнче çуралнă. Хусанти педагогика техникумĕнче, Тухăç халăхĕсен педагогика институтĕнче, литературăн аслă курсĕнче пĕлӳ пухнă. «Сунтал» журналта, Мускавра тухса тăнă «Коммунар» хаçатра ĕçленĕ, Чăваш АССРĕн тата РСФСРăн Аслă Канашлăвĕсен депутачĕ пулнă. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă. Вăрçăра çар журналисчĕ, дивизи хаçачĕсен ĕçтешĕ пулнă.*

*Петĕр Хусанкай Паттăрлăхшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденне тата медальсене тивĕçнĕ, Чăваш АССРĕн К.В. Иванов ячĕллĕ патшалăх, Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премисен лауреачĕ.*

*Петĕр Хусанкайăн пултарулăхĕ анлă, пысăк. Лирик, историк, философ, этнограф, критик, фольклорист, чĕлхеçĕ, публицист — вăл сăмах ӳнерĕн пур жанрĕпе те ĕçленĕ. Вырăсла та нумай çырнă. Çавăн пекех вăл А. Пушкин, М. Горький, В. Маяковский, Т. Шевченко, В. Шекспир (пурĕ 178 поэт произведенийĕсене) чăвашла куçарнă. А. Пушкинăн «Евгений Онегин» романне чăвашла куçарни сăвăçа «Аптраман тавраш» сăвăлла роман çырма хавхалантарнă. Хăйĕн хайлавĕсене те куçаруçăсем вырăс, украина, болгар, акăлчан, француз, нимĕç, итали, чех, араб, грузи, тутар тата ытти чĕлхесене куçарнă.*

*Петĕр Хусанкай 50 ытла кĕнеке авторĕ. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Эпир пулнă, пур, пулатпăр» (Были мы, и есть, и будем) сăвă, «Таня», «Магнитту» (Магнит гора), «Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв» (Что такое Родина) поэмăсем, «Тилли юррисем» (Песни Тилли) сăвă ярăмĕ, «Аптраман тавраш» (Род Аптрамана) сăвăлла романĕ.*

*Литературăра палăрнă хайлавсемшĕн П. Хусанкай ячĕпе хисепленсе тăракан профессионаллă çыравçăсен премие парса чыслаççĕ.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Петĕр Хусанкай ăçта тата хăçан çуралнă? Вăл çуралнă вырăна карта çинче тупăр.
2. Çыравçăн паллăрах произведенийĕсене калăр? Эсир унăн хăш хайлавĕсене вуланă?
3. Паллă сăвăçă камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?
4. Вăл çырнă хайлавсене ытти чĕлхене куçарнă-и?
5. Хăй вăхăтĕнче П. Хусанкая «туслăхпа мире упракан элчĕ (посол)» тесе хакланă. Мĕншĕн-ши?
6. Чăваш литературинче Петĕр Хусанкай премийĕ пур-и? Пур пулсан, çак премие камсене тата мĕншĕн парса чыслаççĕ?

## ТЕЗАВРУС ЛИНГВА ЧУВАШОРУМ

Чиновниксем ним вырӑнне хумасӑр
Пире кусран хӑртса виртленӗ чух,
«Час сирӗн чӗлхӗре те тӗп тӑватпӑр!» —
Тесе чӗремӗре витернӗ чух
Вӗреннӗ вырӑс пур усал вӑя
Мухтавлӑ ырӑ ӗҫӗпе питленӗ:
«Чӑваш чӗлхи илемлӗ те пуян
Тезаврус лингве чувашорум».

Ҫапла ят хунӑ латинла вӑл хӑйӗн
Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекине.
Ҫав кӗнеке — ун пурнӑҫӗ, вӑйӗ
Вӑл каҫрӗ пур патшалӑх чӗлхине.
Ҫапла чун кӗртнӗ тӗттӗм тӗрмере
Раҫҫейӗн ҫутӑ ӑсӗсем пире!

### Словарь ӗҫӗ

**хӑртса виртленӗ чух** — позорить, оскорблять
**чӗлхӗре тӗп тӑватпӑр** — уничтожить язык
**усал вӑй** — злая сила
**ырӑ ӗҫпе питле** — осуждать добрым словом
**чун кӗрт** — оживить
**тӗттӗм тӗрме** — темница, тюрьма

### Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Сӑвӑ мӗн ҫинчен?
2. Чиновниксем чӑваш халӑхӗнчен мӗн каласа виртленӗ? Ҫав вырӑна тупса вулӑр.
3. Вӗреннӗ вырӑс ҫынни чиновниксене мӗнпе «питленӗ»?
4. Вырӑс ҫынни чӑваш сӑмахӗсен кӗнекине латинла мӗнле ят панӑ?
5. *«Ҫав кӗнеке — ун пурнӑҫӗ, вӑйӗ»*, — сӑвӑ йӗркисене мӗнле ӑнланатӑр?
6. Сӑввӑн тӗп шухӑшӗ хӑш йӗркесенче палӑрать-ши?
7. Сӑвва автор кама халалланӑ? Эсир ҫав ҫын ҫинчен мӗн пӗлетӗр?

### Хӑвӑра тӗрӗслӗр

П.Хусанкай сӑвва мӗншӗн *«Тезаврус лингве чувашорум»* тесе ят панӑ? Сӑввӑн ячӗ мӗне пӗлтерет-ши?

### Проект

Н.И. Ашмарин словарӗ ҫинчен Интернет уҫлӑхӗнчен информаци шыраса тупӑр, каласа пама хатӗрленӗр.

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Вырăссен паллă ăнлантару словарĕн ятне аса илĕр. Унăн авторĕ кам? Çак словарьте пурĕ миçе сăмах? Çак словаре автор миçе çул хушши çырнă?

## Ӳнер тата сăмах тĕнчи

Н.И. Ашмарина мĕнле художниксем, скульпторсем хăйсен ĕçĕсене халалланă? Интернет уçлăхĕнчен çав ĕçсене тупăр, каласа пама хатĕрленĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене чăвашла куçарăр е тӳр килекен чăвашла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Дурная слава по прямой дороге, а хорошая — в обход.
2. Два языка — два ума, три языка — три ума.
3. Слово ровно золоту.

### Порфирий Афанасьев
### (1942)



***Порфирий Васильевич Афанасьев*** *— чăваш халăх сăвăçи, прозаикĕ, драматургĕ, публицист, тăлмач. Вăл Тутар Республикин Çарăмсан районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕ ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкулта, Хусанти патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Хусанта тухса тăракан «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕнче, тăван ялĕнчи шкулта, Çарăмсан район хаçачĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçатра, «Хатĕр пул» журналта, Чăваш кĕнеке издательствинче, Чăваш писателĕсен союзĕн правлени председателĕнче, Чăвашрадион тĕп редакторĕнче, Чăваш Республикин Пичетпе информаци политикин министрĕн çумĕнче вăй хунă, Чăваш Республикин Мире хӳтĕлекен комитечĕн тата Раççей мир фончĕн ертӳçи пулнă.*

*Литературăри çитĕнӳсемшĕн Порфирий Афанасьева «Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ» тата «Чăваш Республикин халăх поэчĕ» хисеплĕ ятсем панă. Сăвăç çавăн пекех Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ, Чăваш Республикин Патшалăх, Ф. Карим ячĕллĕ, И.Я. Яковлев ячĕллĕ, М.Д. Трубина ячĕллĕ премисен лауреачĕ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.*

*Порфирий Афанасьевăн пултарулăхĕ анлă, пысăк. П.В. Афанасьев поэзире, прозăра, драматургире ăнăçлă ĕçлет. Çавăн пекех вăл В. Шекспир, Л. Леонов, В. Распутин хайлавĕсене чăвашла куçарнă.*

*Сăвăçăн паллăрах кĕнекисем: «Чун çути» (Свет изнутри), «Сан ятупа» (Именем твоим), «Хĕвел хапхи» (Солнечные ворота), «Тав» (Благодарность), «Пурăн, юрату!» (Живи, любовь!).*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Порфирий Афанасьев ăçта тата хăçан çуралнă? Вăл çуралнă вырăна карта çинче тупăр.
2. Литературăн хăш жанрĕсемпе вăл тухăçлă ĕçленĕ?
3. Литературăри çитĕнӳсемшĕн вăл мĕнле хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ?
4. Çыравçăн паллăрах кĕнекисе калăр.

## КĂЙКĂР

*Поэма сыпăкĕ*

### Вутпа чечек

Çавăрттарать тăман,
Çил шăхăрса вĕрет.
Вăй-хал хавшанăран
Канма ларас килет.

Анчах ăçта канас?
Сĕнтĕрвăрри хыçра,
Умра – çиллес тăман
Пăхса та курăнми.

Чăт, Андриян, чăтах,
Унта ав, анăçра,
Чылай йывăртарах –
Тăшман виç çул урать.

Хаяр вăрçа пула
Аслисемпе пĕр тан
Сан авăн çапмалла,
Сан хывмалла капан.

Сан утă çулмалла —
Çитмест арçын алли.
Сан выльăх пăхмалла —
Аш кирлĕ фронт валли.

Вун виççĕри ачан,
Сан вĕренес пулать,
Вĕреннĕ çын анчах
Хăй вăйлине туять.

Ах, çăмăл мар сана,
Чĕрӳ епле чăтать?
Килте ав аçуна
Пит йывăр чир кăшлать.

Ылханлă вăрçăран
Куллен — хура хыпар,
Çав фашиста хăçан
Тĕп тăвĕ Хĕрлĕ çар?

… Урать, урать тăман,
Урать каçса кайса.
Утать-ха Андриян
Мĕнпур вăйне пухса

Йăлт кайнăччĕ халтан.
Сасартăк — çын умра.
Иван-çке ку, Иван!
Пиччеçĕм-мĕн, ара?

— Сана кĕте-кĕте
Шалт ывăнтăм, Энтри,
Аттен унта, килте…
Текех тапмасть чĕри…

Çапла вĕçленчĕç сан
Ачалăх кунĕсем
Ан парăн, Андриян,
Чуна хытар. Тӳссем.

…Эс çĕнтерӳ кунне
Манаймăн нихăçан.
Хитреччĕ çуркунне,
Ем-ешĕлччĕ вăрман.

Пуçтартăн тăрăшса

Эс çеçпĕл чечекне.
Каларăн савăнса:

— Çĕнтертĕмĕр, анне!

## Словарь ĕçĕ

**çавăрттарать тăман** — кружит вьюга
**авăн çап** — молотить хлеб
**çил шăхăрса вĕрет** — ветер свищет
**вăй-хал хавшать** — ослабевать
**капан хыв** — копнить, стоговать, метать стог
**йывăр чир кăшлать** — точит болезнь
**хура хыпар** — страшая весть
**урать тăман** — бушует буран (вьюга)
**халтан кай** — обесилеть
**чĕре тапмасть** — сердце не стучит
**чунна хытар** — становиться тверже, жесче

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Поэма сыпăкĕн партитурине тăвăр. Уçăмлă, ăнлануллă вулама вĕренĕр.

## ЫІйтусемпе ĕçсем:

1. «Вутпа чечек» сыпăкра автор мĕнле сăнарсемпе паллаштарать?
2. Кам вăл Энтри? Кам вăл Иван?
3. Поэма сыпăкĕнчи ĕçсене йĕркипе çырса тухăр.
4. Çил-тăвăла пăхмасăр Сĕнтĕрвăрринчен киле кам утать? Вăл Сĕнтĕрвăррине мĕн тума кайнă?
5. Андриянăн аслисемпе пĕр тан мĕн-мĕн тумалла? Мĕншĕн? Çав вырăна тупса вулăр.
6. Андриянăн ашшĕ ăçта?
7. Андрияна Иван пиччĕшĕ мĕнле усал хыпар пĕлтерет?
8. Поэма сыпăкĕнче миçемĕш çула асăннă? Çав вырăна тупса вулăр.
9. *«Вĕреннĕ çын анчах*
   *Хăй вăйлине туять»,* — поэма йĕркисене мĕнле ăнланатăр?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?*

**…** — реальный человек, облик, поведение, события, жизни которого послужили автору основой для создания образа литературного героя.
**…** — чăн пурнăçри çын; çыравçă унăн сăн-сăпатне, характерне пĕр-пĕр хайлаври персонажăн сăнарне калăпланă чух тĕпе хурать.

**Ĕнен пире!**

Хур кайăк карти пек,
Ылмашăнса
Космонавтсем

Орбитăна тухаççĕ.
Канма тесе каймаççĕ
Космоса —

Унта тĕнче вăрттăнлăхне
Шыраççĕ.

Ай çăмăл мар,
Тап-такăр мар çав çул,
Çапах та ĕмĕт
Яланах çунатлă,
Хăюллă пул,
Пĕр шиксĕр, чăрсăр пул,
Вăл аякран
Çĕр аннене сăнанă.

Çĕр-шывăн паттăр,
Харсăр ывăлне
Калатăп эп
Сума суса, хисеплĕн:
«Пире эс чĕнтĕн
Çӳллĕ тӳпене,
Чун çунатне сарма
Пире вĕретрĕн».

Эс, ĕмĕт-тĕллевне
Курса-пĕлсе,
Ăна парăнтарма
Чи хăюллин кăна
Чĕри хăватлă.

Пăхатăп эпĕ
Андриян çине.
Вăл ик хутчен
Сĕм уçлăха хăпарнă.
Вăл курнă çывăхран
Çăлтăрсене,
Пултарнă кăйкăр,
Ĕнен пире:
Вăй-халлă чăвашсем
Завод лартаççĕ,
Ӳстереççĕ çăкăр.

Пӳлеççĕ Атăла
Хăюллисем,
Ун хăватне
Этемлĕхшĕн кӳлеççĕ.
Эс кур пире —
Шансам та ĕненсем:
Кашни чăваш çынни паян —
Вĕçевçĕ!

## Словарь ĕçĕ

**хур кайăк карти** — караван (стая) диких гусей
**ылмашăн** — меняться
**тĕнче вăрттăнлăхне шыра** — искать тайну вселенной
**ĕмĕт çунатлă** — крылатая мечта
**хăватлă чĕре** — мощное сердце
**сĕм уçлăх** — космос, темный космос
**çăлтăр** — звезда
**чун çунатне сар** — раскрыть душу
**ĕмĕт-тĕллев** — мечта
**парăнтар** — одержать победу

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Поэма сыпăкĕн партитурине тăвăр. Уçăмлă, ăнланулла вулама вĕренĕр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Космонавтсем орбитăна тухнине автор мĕнле кайăксемпе танлаштарать? Мĕншĕн?
2. Космонавтсем космосра мĕн шыраççĕ?
3. Андриян космос уçлăхне миçе хутчен хăпарнă? Автор ăна палăртать-и?
4. Автор «Ĕнен пире!» тесе кама калать?
5. Вăй-халлă чăвашсем мĕн-мĕн тăваççĕ?

6. *«Кашни чăваш çынни паян — Вĕçевçĕ!»,* — поэма йĕркисене мĕнле ăнланатăр?
7. «Кăйкăр» поэмăри Андриян Николаев сăнарĕ пире мĕн тума чĕнекен сăнар?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Эсир А. Николаев çинчен мĕн пĕлетĕр? Вăл ăçта çуралса ÿснĕ?
2. А.Николаев космосра миçе хутчен пулнă?
3. А.Николаевăн космосри ячĕ мĕнле пулнă? Эсир ăна пĕлетĕр-и?
4. Мĕншĕн чăваш космонавчĕн уçлăхри ячĕ кăйкăр пулнă?
5. Пурнăçра чăн пулнă çын илемлĕ произведенин тĕп сăнарĕ пулма пултарать-и? И.Я. Яковлев, К.В. Иванов çинчен çыравçăсем илемлĕ хайлавсем çырнă-и?

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Вырăс литературинче М. Кутузов, А. Суворов, А. Маресьев прототипĕсене кăтартнă хайлавсене аса илĕр. Вĕсен авторĕсем камсем?

## Ӳнер тата сăмах тĕнчи

1. 5-мĕш класс валли хатĕрленĕ «Чăваш литератури» вĕренÿпе вулав кĕнекинчи Н. Овчинниковăн «Салам, Çĕр!» картинине аса илĕр. Унта художник камăн сăнарне кăтартнă?

2. А.Г. Николаев çинчен тата мĕнле художниксем, скульпторсем хăйсен ĕçĕсене хайланă? Интернет уçлăхĕнчен çав ĕçсене тупăр, каласа пама хатĕрленĕр.

# ĔÇ ÇЫННА ИЛЕМ КӲРЕТ — ТРУД КРАСИТ ЧЕЛОВЕКА

## Мария Ухсай
## (1908 – 1969)



***Мария Дмитриевна Ухсай*** *— чăваш çыравçи, драматургĕ. Вăл Чăваш Республикин Куславкка районĕнчи Карач ялĕнче çуралнă. Карачри шкулта, Шупашкарти Чăваш педагогика техникумĕнче, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литератури вĕрентнĕ, Канашри педагогика училищинче пулас учительсене вĕрентнĕ, Ульяновскри Чăваш педагогика училищинче ĕçленĕ. Шупашкара яланлăхах куçса килсен хăйĕн малашнехи пурнăçне йăлтах чăваш литературипе çыхăнтарнă.*

*Мария Ухсай литературăри çитĕнӳсемшĕн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне, Чăваш АССР ӳнерĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята тивĕçнĕ.*

*М. Ухсай пултарулăхĕ анлă, пысăк. Вăл проза жанрĕнче те, драма жанрĕнче те ĕçленĕ. М. Ухсай çырнă хайлавсене чăваш театрĕсен сценисем çинче темиçе хутчен те лартнă.*

*Çыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Хăйă çути» (Свет лучины), «Типĕ çыран хĕрринче» (На берегу сухого обрыва) калавсем, «Кăра çилсем» (Буйные ветры) повесть.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Мария Ухсай литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
2. Çыравçă ăçта çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
3. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.

## ИРХИ СЫВЛĂМ
*Юмах*

Ир тăракан çерçи тулă пĕрчи тупнă тет.
*Халăх сăмахлăхĕнчен*

Пĕр урамра икĕ хĕр ача пурăннă тет. Пĕри Машук ятлă, тепри — Липпа. Машук амăшĕ питĕ вĕçкĕн хĕрарăм пулнă, Липпа амăшĕ ĕçчен çын пулнă.

Пĕрре урамра ачасем вылянă. Липпа пуринчен те савăнăçлăрах пулнă, темиçе тĕрлĕ вăйă пуçласа янă, тĕрлĕрен юрă юрланă. Çав вăхăтра хĕрарăмсем пĕренесем çинче калаçса ларнă.

— Çапах та, — терĕ ларсан-ларсан Машук амăшĕ, — ман хĕр пекки пĕр ача та çук. Ăсли те ăслă, чиперри те чипер!

Чăнах та, Машук кӳпшем питлĕ, пит çăмартисенчен пӳрнепе тĕксенех юн пĕрĕхсе тухас пек. Çуланса тăракан куç хупанкисем тачка, куçĕсем пачах путса кĕнĕ.

Машук амăшĕ каланă сăмахсене Липпа лайăх ас туса юлнă. Киле пырсан вăл хăй амăшĕнчен ыйтнă:

— Анне, эпĕ чипер-и? — тенĕ.

— Çук, эсӗ пӗртте чипер мар, — тенӗ амӑшӗ.
— Чипер пулма пулать-и?
— Пулать…
— Епле?
— Ирсерен пите ирхи сывлӑмпа çусан.
Тепӗр кун Липпа ир-ирех вӑраннӑ та амӑшӗнчен ыйтнӑ:
— Анне, паян сывлӑм ӳкнӗ-и?
— Мӗне кирлӗ вӑл сана?
— Эпӗ пит çӑвас тетӗп.
— Чипер пулас тесен сывлӑм çинчен нихӑçан та çынран ан ыйт. Хӑвах тухса пӑх. Çынран ыйтса тухсан вӑл кӳренме пултарать, — тенӗ амӑшӗ.

Тепӗр ирхине ирех Липпа шӑппӑн тӑнӑ та ерипен пахчана тухса кайнӑ. Пӑхать вӑл — пахчари çӑра ухлӗм çинче ирхи сывлӑм шерепеленсе ларать, ешӗл курӑк кӑваккӑн курӑнать. Липпа ерипен пусса вӑйлӑ ухлӗм патне пырса тӑчӗ, сивӗ пек туйӑнчӗ, çӳçенсе илчӗ, çапах та йӗкӗр ывӑçӗпе курӑка сӑтӑрчӗ. Ывӑç тулли сывлӑм пухӑнчӗ. Çав шывпа Липпа питне çурӗ...

Ыйхи вӗçсех кайрӗ, ирхи сывлӑм вӑй кӗртнӗн туйӑнчӗ, тепӗр хут выртас килмерӗ, пӗчӗк витре илчӗ те вӑл шыв ӑсма кайрӗ.

— Ай-ай, пӗчӗкскер, епле ир тӑнӑ вӑл! — тесе тӗлӗнеççӗ шыв ӑсма аннӑ хӗрарӑмсем.

«Эпӗ ирхи сывлӑмпа пит çума тӑнӑ», — тесшӗнччӗ Липпа, анчах амӑшӗ никама та калама хушманнине аса илчӗ те:

— Мана анне вӑратса шыв ӑсма ячӗ, — терӗ.

Çӳллӗ пӑрӑхра кӗмӗл пек йӑлтӑртатса шыв юхать, валака ӳкнӗ çӗрте чӑл-пар саланса пӗрхӗнет. Тулли валака хӗвелтухӑç хӗрлӗ сӑн ӳкерет.

Липпа ирхи тӗнчене тӗлӗнсе кайса пӑхса тӑрать. Ытла та уçӑ-мӗн ирхине! Витрисене тултарса хӑвӑрт кӑна килне çӗклесе çитерчӗ те шывӑн ирхи юррине тепӗр хут итлес тесе каллех шыв ӑсма кайрӗ.

Вӑл çитнӗ çӗре хӗвел тухрӗ, хӗлхемӗсем шыв юххи витӗр çутатаççӗ, вара шыв ярӑмӗсем асамат кӗперӗ пек выляса тӑраççӗ. Шыв хӗрринче тӑракан йывӑççсем çинче кайӑксем юрланӑ. Янкӑр уçӑ сывлӑшра витре сассисем илтӗннӗ; пӗчӗк хӗр ача ирхи тӗнче илемлинчен тӗлӗнсе кайса пӑхса тӑнӑ.

## Словарь ӗçӗ

**вӑйӑ пуçласа яр** — начать игру
**пӗрене** — бревно
**кӳпшем пит** — полное лицо
**пит çӑмарти** — щеки
**куç хупанки** — веки
**кӳренме** — обижаться
**ерипен тух** — медленно выйти
**ухлӗм** — костёр (трава)
**ыйхи вӗççех кай** — сон улетучился
**шерепеленсе лар** — свисать гроздьями
**валак** — желоб
**хӗвел хӗлхемӗсем** — лучи солнца

## Илемлӗ вулама хӑнӑхатпӑр

Юмахри Липпапа амӑшӗн калаçӑвӗн партитурине тӑвӑр, рольпе илемлӗ вуласа парӑр.

**Сюжет** — это ряд последовательно развивающихся событий, которые составляют литературное произведение.

**Сюжет** — литература хайлавӗнче геройпа пулса иртекен ӗҫ-пулӑмсен йӗрки тата ҫав ӗҫсенче ҫын сӑнарне уҫса пани.

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Пӗр урамра мӗн ятлӑ хӗр ачасем пурӑннӑ? Вӗсен амӑшӗсем мӗнле пулнӑ?
2. Машук амӑшӗ хӑйӗн хӗрӗпе мӗн тесе мухтаннӑ?
3. Машук сӑн-сӑпачӗпе мӗнле хӗр ача? Ҫав вырӑна тупса вулӑр.
4. Машук амӑшӗ каланӑ сӑмахсене Липпа илтнӗ-и?
5. Липпа хӑйӗн амӑшӗнчен мӗн тесе ыйтнӑ?
6. Амӑшӗ Липпана илемлӗ пулас тесен мӗн тумалла тенӗ?
7. Мӗншӗн Липпана амӑшӗ сывлӑм ҫинчен никама та калама хушман?
8. Липпа сывлӑмпа мӗн тунӑ?

## ИРХИ СЫВЛӐМ

*Юмах. Малалли*

Ҫапла кашни ир Липпа хӗвел тухиччен тӑма вӗреннӗ. Урӑх ӑна ирхи сывлӑм ҫӳҫентермен — вӑйпа савӑнӑҫ парса тӑнӑ. Ирхи сывлӑмпа ҫӑвӑнса уҫӑлать, чӗкеҫ пек ҫӑмӑл ӗҫлесе ҫӳрет, шӑпчӑк пек юрлама пуҫлать. Пахчара кӗрен чечек ҫеҫке сурчӗ — Липпа ҫеҫке ҫинчен тумлам-тумламӑн ирхи сывлӑма пуҫтарса питне ҫурӗ — хӑй те чечек пек кӗрен пулчӗ.

Амӑшне ирхи ӗҫсене пуҫтарма пулӑшса пӗтерсен вӑл вуланӑ, уроксене вӗреннӗ. Ирхи ӑс-тӑн уҫӑ, часах пурне те ас туса ӑнланса илет, ҫавӑнпа шкула кайиччен ал ӗҫ тумалӑх та вӑхӑчӗ юлать.

Те чӑнах, те ирхи сывлӑмпа ҫӑвӑннипе, Липпа илемлӗрен илемленсе пынӑ, пӗтӗм ял ӑна Чипер Липпа теме пуҫланӑ, палламан ҫынсем те курсан:

— Ай, чипер-ҫке ку хӗр ача! — тесе тӗлӗнсе юлнӑ.

Ҫул хыҫҫӑн ҫул шурӗ. Липпа тӗрлӗрен ӗҫ ӗҫлеме вӗренчӗ, апат-ҫимӗҫ пӗҫерме-и, тӗрӗ-чӗнтӗр тума-и е касма-ҫӗлеме, е ҫуса якатма — Липпана пӗри те ҫитеймен.

— Ах, ҫак Чипер Липпан аллисем ылтӑн пулӗ, — тесе мухтанӑ ӑна.

Шкулта Липпа урока тӗрӗс те уҫҫӑн каласа панӑ, вӑл тахҫан вӗреннисене те манман, паянхи уроксем пекех пӗлсе тӑнӑ.

Пысӑк праҫниксенче пин-пин ҫын пухӑнакан вӑйӑра Липпа ташӑ-юрӑпа тӗлӗнтернӗ. Ҫамрӑксен пысӑк ушкӑнӗнче Липпа мерчен пек ҫуталса тӑнӑ, кирлӗ чухне ун чӗлхи те питӗ вичкӗн пулнӑ.

Липпапа Машукӑн шкултан вӗренсе тухас кун ҫитрӗ. Ирех тӑчӗ Липпа. Кӗнекисене пӑхрӗ, вуларӗ, вара пахчана тухрӗ.

— Эй, ирхи сывлӑм! Вӑй парсам мана! Эй, чечексем, илем парӑр мана!..

Ҫав вӑхӑтра хӗвел тухрӗ.

— Эй, сарӑ хӗвелӗм, ӑс-тӑн пар мана! — терӗ Липпа.

Кӳршӗ хӗрӗ Машук хӗвел тухнине нихӑҫан та курман, вӑл ҫав вӑхӑтра хуралса пӗтнӗ минтерӗ ӑшне питне чиксе харлаттарса ҫывӑрнӑ. Ун ир-ирех ӗҫлеме тӑрас чӑрмавӗ пулман: ӑна амӑшӗ ачашласа та мухтаса кӑна ӳстернӗ. Амӑшӗ сӑмахне итле-итле Машук хӑйне питӗ чипер те ӑслӑ тесе шутланӑ.

Ирхи сывлӑм типрӗ, шкула каяс вӑхӑт ҫитрӗ. Липпа тап-таса тумланса шкула тухса утрӗ. Машук амӑшӗ ӑна кантӑкран курчӗ те ҫывӑракан хӗрӗ патне чупса пычӗ:

— Тӑр, хӗрӗм, тӑр! Липпа шкула кайрӗ!

Сиксе тӑчӗ Машук. Анасласа ҫӑварне карчӗ, ҫӳҫне уҫма пуҫларӗ, анчах вӑл кӗҫҫе пекех ҫыхланса пӗтнӗ. Машук тутине чалӑштарсах ҫӳҫне тӑпӑлтарма пуҫларӗ. Аран-аран якаткаласа тумланчӗ те шкула чупрӗ.

Экзаменра Липпа хӑй пӗлнипе пурне те тӗлӗнтерчӗ. Мӗн-пур пухӑннӑ ҫын ӑна малалла вӗренме канаш панӑ, ырлӑхпа телей суннӑ. Шкул пуҫлӑхӗ Липпана ылтӑн медаль пама йышӑнни ҫинчен пӗлтернӗ.

Пӗр Машук ҫеҫ экзамен парайман.

## Словарь ӗҫӗ

**ҫӳҫентер** — испытывать дрожь, ежиться
**вӑйпа савӑнӑҫ пар** — дать силу и радость
**ҫӑвӑнса уҫӑл** — освежиться умывшись
**чӗлхи вичкӗн** — остра на язык
**мерчен пек ҫуталса тӑр** — светиться как коралл
**хуралса пӗтнӗ минтер** — испачканная подушка
**харлаттарса ҫывӑр** — храпеть (во сне)
**чӑрмавӗ пулман** — не было препятствия
**анасласа ҫӑварне кар** — зевнуть

Сюжетри ӗҫ пуҫланса кайнине **сюжет пуҫламӑшӗ** (завязка) теҫҫӗ. Ун хыҫҫӑн хайлавра **сюжет аталанӑвӗ** (развитие действия) пулать. Ӗҫ шалтан шала кайса пырать, аталанать, юлашкинчен ӗҫ-пуҫ хӗрсе ҫитет. Ҫак саманта **кульминаци** (хӗрӳ тапхӑр) теҫҫӗ. Ӗҫӗн юлашки тапхӑрне **сюжет вӗҫленӗвӗ** (развязка) теҫҫӗ.

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Липпа ирхине хӑҫан тӑнӑ? Кӳршӗ хӗрӗ Машук хӑҫан тӑнӑ?
2. Липпана ирхи сывлӑм мӗн парса тӑнӑ?
3. Ирхи сывлӑмпа ҫӑвӑннӑ хыҫҫӑн хӗр ача мӗнле ӗҫсем тунӑ?
4. Ялти ҫынсем Липпана мӗншӗн «Чипер Липпа» теме пуҫланӑ?
5. Шкулта Липпа мӗнле вӗреннӗ?
6. Экзамен умӗн Липпа ҫут-ҫанталӑк пулӑмӗсенчен мӗн-мӗн ыйтнӑ? Ҫав ырӑна илемлӗ вуласа парӑр.
7. Липпапа Машук шкула мӗнле паллӑсемпе пӗтерне?
8. Юмаха мӗншӗн «Ирхи сывлӑм» тесе ят панӑ? Ҫак ят юмахӑн содержанине мӗнле уҫса пама пулӑшать?
9. Юмахри тӗп сӑнарсене каласа тухӑр. Вӗсене автор мӗншӗн хире-хирӗҫлесе сӑнласа парать?
10. Автор хӑш сӑнарсене хурласа ҫырать?

11. Ырӑ сӑнарсен ырӑ ĕçĕсене каласа тухăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. М. Ухсай çырнă «Ирхи сывлăм» юмахăн иккĕмĕш пайĕнче танлаштарусем тупăр. Вĕсене автор мĕн тума усă курнă-ши?
2. Ку юмах мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупăр.*

1. … — ĕçÿпе васка.
2. … вăл хăй санран хăратăр.
3. … ĕçлемесен ан та çи.
4. … — кахал пăсать.
5. … пуçра ăс пултăр.

**Александр Кăлкан**

«Эпĕ Тутар Республикине кĕрекен Пăва районĕнчи Çĕнĕ Мертлĕ ятлă ялта çуралнă. Манăн атте эпĕ вунă çулта чухне вилсе кайрĕ. Ку «маян çулĕ» тенĕ выçлăх çулĕсенчен пĕринче, 1921 çулта, пулчĕ. Килте выçă вилесрен мана аслă пичче çăлса хăварчĕ. Вун икĕ çулта эпĕ ялти шкултан вĕренсе тухрăм. Çав çулах Петĕр пичче мана вăтăр çухрăмри Пасарлă Упи ялне илсе кайрĕ. Унта икĕ сыпăклă шкула вĕренме вырнаçтарчĕ.

Манăн хваттер хуçи, Адъютантов Василий, — ырӑ кăмăллă, тÿрĕ чунлă, ăш пиллĕ çынччĕ. Нумай пĕлме юрататчĕ, хваттерте тăракансене хăйĕн çемйипе пĕрле апат çитеретчĕç. Выçă вилесрен, куç чирлесрен мана вĕсемех хăтарса хăварчĕç. Килтен анне апат-çимĕçпе тивĕçтерейместчĕ, хваттершĕн укçине те тÿлейместчĕ. Çапах та хваттер хуçи мана хăваласа кăларса ямарĕ».

*А. Кăлкан*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. «Пан улми» калава кам çырнă? Эсир çак калавăн тĕп шухăшне ас тăватăр-и?
2. Александр Кăлкан литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
3. Александра Кăлкана выçă вилесрен миçе хутчен çăлса хăварнă? Камсем?
4. Пасарлă Упи ятлă ялта А. Кăлкан кам патĕнче пурăннă? Вăл мĕнле çын пулнă?
5. Паллă юптаруçăн ашшĕ «маян çулĕ» текен выçлăх çулĕнче вилсе кайнă. «Маян çулĕ» текен выçлăх мĕне пĕлтерет?

**НАЯН КАМПУР**

*Юптару*

Кампур шăрăхпала аптранă,
Хашкать вăл чӗлхине тăсса.
«Кун пек ӗҫ тухас ҫук-ха манăн,
Вӗрентӗм ӗнтӗ халь ăса:
Хӗле кӗрсессӗн шур юртан
Тăватăп эпӗ хам ҫурта;
Вара чи пăчă вăхăтра та
Мороженăй ҫисе выртатăп», —
Шутлать вăл халӗ кашни кун,
Сăлтавӗ, чăн та, «пысăк» ун.
Анчах так сивӗ хӗл хаяррăн
Килсе ҫитсессӗнех, мăнтарăн,
Хӗссе лартать те хӳрине
Аса илет ăшă ҫу кунне;
Уйăх ҫине пăхса хуллен:
«Ах, сивӗ-ҫке! ҫăва тухсан,
Ятарласах шăмă пухса,
Хама валли шур пӳрт лартатăп,
Вара хӗлле те ыр куратăп…»

Ҫапла ҫул хыҫҫăн ҫул иртет.
Тума шутланă шур пӳрте,
Юлташăм, эс хăвах туян-тăр,
Кампур тăвать тет-ха паян та.
Ахальтен мар калать кӳрши:
— Кун пек наян ăҫта пур-ши?
* * *
Шыраса пăхăр-ха, Кампур,
Тен, сирӗн хушăра та пур?

## Словарь ӗҫӗ

**шăрăхпала аптра** — страдать от жары
**чӗлхе тăс** — высунуть язык
**ӗҫ тухрӗ** — дело выгорело, удалось
**пăчă вăхăт** — душное время
**сăлтав** — повод, предлог, зацепка
**хаяр хӗл** — трескучий холод
**мăнтарăн** — бедный, жалкий, несчастный, горемычный
**хӳрине хӗссе лартать** — прищемляет хвост
**шăмă пух** — собирать косточки
**ыр кур** — наслаждаться, быть счастливым
**хăвах туян-тăр** — сам чувствуешь
**сирӗн хушăра** — среди вас

## Илемлӗ вулама хăнăхатпăр

Юптарăвăн партитурине тăвăр. Уҫăмлă, илемлӗ вуласа парăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Ăнлава малалла тăсăр.*

**Басня** – это **... .**
**Юптару** тесе … .

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Кампур мĕншĕн чĕлхине тăсса хашканă?
2. Вăл çулла мĕн çинчен шутланă?
3. Хĕлле Кампур мĕн çинчен шутланă?
4. Кампур мĕн тума шутланине пурнăçа кĕртнĕ-и?
5. Кÿрши Кампур пирки мĕн калать? Çав вырăна тупса вуласа тупса парăр.
6. Кампур пурнăçри мĕнле çынсене аса илтерет?
7. Юптарури юлашки икĕ йĕрке умĕн автор мĕншĕн çăлтăрсем лартнă? Çак мелпе автор мĕн каласшăн-ши?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Юптарăвăн темине палăртăр.
2. Юптарура автор мĕнле проблема хускатнă?

**Юмор** — особый вид комического, изображение героев в смешном виде. **Сатира** — художественное произведение, остро и беспощадно обличающее отрицательные явления действительности. **Сарказм** — язвительная насмешка, высшая степень иронии.

Кулăш тĕрлĕ пулать: юлташа юратса кулнинчен тăшмана питлесе ятлани таранах. «**Юмор**» сăмах грек чĕлхинчен куçарсан çемçе, ачаш кулăша пĕлтерет. **Сатира** вара питлеве, **сарказм** хаяррăн тиркенине кăтартать.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вырăсла куçарăр е тÿр килекен вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Кахал урине тăхăннă çĕре ĕçчен ĕçне туса пĕтернĕ.
2. Сава хыççăн пуртăпа ĕçлемеççĕ.
3. Сывăракан тилĕ чăх тытмасть.
4. Такăнман лаша çук.
5. Ир тăракан çерçи тулă пĕрчи тупнă.
6. Пысăк ĕç пĕчĕккинчен пуçланать.

**Алексей Воробьев**
**(1922 - 1976)**

***Алексей Александрович Воробьев*** *— чăваш сăвăçи, куçаруçи.*



*Вăл Вăрнар районĕнчи Мăн Явăшра вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Хăйсен ялĕнчи пуçламăш шкулта, унтан тулли мар вăтам шкулта, Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче, Мускаври аслă литература курсĕсенче пĕлӳ пухнă. Канаш районĕнчи çĕр ĕç пайĕнче, Йĕпреçри МТС пуçлăхĕнче, Калининри МТС агрономĕнче, Чăвашрадиовĕн ял хуçалăх кăларăмĕсен редакторĕнче ĕçленĕ. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă, йывăр аманнă. Сăвăçă хăйĕн хайлавĕсенче ял пурнăçĕ, çĕр-анне темисене хускатнă.*

*Алексей Воробьев Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премин лауреачĕ.*

*Унăн паллăрах кĕнекисем: «Туслăх çăлтăрĕ» (Звезда дружбы), «Кăнтăрла» (Полдень), «Йăмра» (Ветла), «Хиртех ман чун» (Сердце мое в поле).*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Алексей Воробьев ăçта тата хăçан çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
2. Литературăн хăш жанрĕсемпе вăл тухăçлă ĕçленĕ?
3. Сăвăçă хăйĕн пултарулăхĕнче мĕнле темăсем хускатнă?
4. А. Воробьев Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă-и?

## ÇĂКĂР

Çĕр чăмăрĕ евĕр çавра
Çĕн çăкăр куратăп умра.
Ун пичĕ — тин тухнă хĕвел,
Сасартăк çуталчĕ тĕпел.
Шăпланчĕ пӳрт ăшĕ пĕр си.
Пылланчĕ вĕри хир шăрши.

Касаççĕ ак, чĕллĕн хураççĕ,
Савса хăналаççĕ: астив.
Мухтав сана, тертлĕ хура çĕр!
Мухтав сана, тырă ăсти.

Çанталăк çулла сивĕ тăчĕ.
Çĕртес пек ислетрĕ йĕпе.
Тĕш мулăн кашни сумлă пăчĕ
Кăçал килчĕ мар-и хĕнпе?

Ĕç ăнчĕ уйра мухтанмалăх.
Тимлерĕ Çĕр чаплă парне.
Савса хапăллать пирĕн халăх:
— Тутанăр чăваш çăкăрне!

Чĕлле эп тытатăп типтерлĕн.
Вăл — çăкăр. Ун ячĕ çӳлте.
Хĕвел пайăрки пек хĕлхемлĕн
Куçать ун ăшши ман ӳте.

Эп ĕмĕт çитнишĕн хаваслă.
Вĕрентнĕ пире ачаран:
«Нихçан çăкăртан ан пул аслă».
Саккун пек вăл пулчĕ ялан.

Кам тиркĕ çĕре? Кам ал сулĕ?
Тек иртмĕ йăран хушăпа.
Çĕр-шывăн шăпи, ун кун-çулĕ
Пулайрĕç пĕр пысăк шăпа.

Шăпамăр сăваплă, куратăп.
Манас-и поэт тивĕçне? —
Тăван ял-йыша эп мухтатăп.
Чыслатăп ун тарлă ĕçне.

Çĕн çăкăр — мĕльюнлă ытарлăх.
Пуян кĕр тимлерĕ парне.
Савса хăналать манăн халăх:
— Тутанăр чăваш çăкăрне!

## Словарь ĕçĕ

**çĕр чăмăрĕ** — земной шар
**çуталчĕ тĕпел** — посветлело в горнице
**пылланчĕ** —стал сладким
**чĕллĕн хураççĕ** — кладут ломтями
**савса хăнала** — угощать
**мухтав сана** — слава тебе
**тертлĕ хура çĕр** — изнурённая земля
**тутан** — попробуй
**çĕртес пек ислетрĕ йĕпе** — лили дожди, будто хотели сгноить
**тĕш мул** — богатство зерновых
**типтерлĕн тыт** — беру аккуратно
**хĕвел пайăрки** — луч солнца
**хĕлхем** — искры
**ĕмĕт çит** — сбылась мечта
**тирке** — придираться, чернить, порочить
**сăваплă шăпа** — счастливая судьба
**тарлă ĕçе чысла** — почитать труд

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Уçăмлă, илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвă мĕн çинчен?
2. Кам вăл тырă ăсти?
3. Сăвăри глаголсем миçемĕш сăпатра? Çак мел лирика геройĕ кам пулнине палăртма пулăшать-и?
4. Сăвăç çăкăра мĕнпе танлаштарать?
5. Мĕншĕн хĕвелпе танлаштарать-ши? Мĕн вăл хĕвел? Хĕвел этеме, тырă-пула, ӳсен-тăрана, чĕр-чуна мĕн парать?
6. Сăвăра автор çăкăра тата ял-йыша мĕншĕн мухтать?
7. Сăвва вуласан куç умне мĕнле ӳкерчĕк тухса тăрать?
8. Сăввăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать? Çав йĕркесене тупăр, вуласа парăр.
9. Сăвăра поэтăн кăмăл-туйăмĕ палăрать-и? Мĕнле?
10. Сăвва мĕншĕн «Çăкăр» тесе ят панă? Автор çакăнпа мĕн каласшăн пулнă-ши?

## Пултарулăх ĕçĕ

*«Çăкăртан асли çук» темăпа пĕчĕк калăпăшлă эссе çырăр.*

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ĕç тата çăкăр çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене аса илĕр. Сăввăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр.*

**Геннадий Волков**
**(1927-2010)**



***Геннадий Никандрович Волков*** *– тĕпчевçĕ, педагог, педагогика ăслăхĕсен тухтăрĕ, профессор, çыравçă, куçаруçă, литература критикĕ, академик. Педагогика ăслăлăхĕнчи çĕнĕ юхăма – этнопедагогикăна — пуçарса яраканĕ.*

*Вăл Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çуралса ÿснĕ. Чăваш педагогика институчĕн физикăпа математика факультетĕнче, Хусанти педагогика институчĕн аспирантуринче вĕренсе тухнă. Чăваш педагогика институтĕнче аслă вĕрентÿçĕре, педагогика кафедрин доценчĕнче, проректорта, Раççей Федерацийĕн çутĕç министерствин наци шкулĕсен ĂТИ секцин ертÿçинче, Эрфуртри аслă педагогика шкулĕнче ĕçленĕ.*

*Геннадий Волков К.Д. Ушинский ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ, Германири Эрфурт университечĕн хисеплĕ тухтăрĕ, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн лауреачĕ, темиçе ылтăн медале тивĕçнĕ. Вăл Чăваш Республикин, Калмăк Республикин, Елчĕк районĕн хисеплĕ çынни пулнă.*

*Паллă академик ачасем валли калавсем, притчăсем çырнă. Унăн хайлавĕсенче чăн пурнăç, ăса вĕрентни, сапăрлăх темисем паллă вырăн йышăнаççĕ. Вăл 500 ытла ăслăлăх ĕçĕн авторĕ. Академикăн паллăрах кĕнекисем: «Этнопедагогика», «Судьба патриарха» роман-эссе, «Асанне калавĕсем»» (Бабушкины сказки), «Туслăхра — вăй» (Сила в дружбе), «Юманпа хĕвел» (Дуб и солнце).*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. «Çамрăкла вĕренни — чул çинче, ватăлла вĕренни — юр çинче», «Чи пысăк инкек» хайласене (притчăсене) кам çырнă? Эсир çак хайласен тĕп шухăшĕсене ас тăватăр-и?
2. Г.Н. Волков педагогика ăслăлăхĕнче мĕнле юхăм пуçарса янă?
3. Литературăн хăш жанрĕсемпе Геннадий Волков тухăçлă ĕçленĕ?
4. Хайла (притча) жанрĕпе ытларах мĕн тĕллевпе усă кураççĕ?
5. *«Пĕрре улталан, иккĕ улталан, виççĕмĕшĕнче ларса йĕрен»* текен шухăш паллă академикăн хăш хайлавĕнчен?
6. *«Тулти çил-тăвăл килтинчен лăпкăрах»* текен шухăш тата хăш хайлавран?
7. Паллă академик ăçта тата хăçан çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.

## ПУЯНЛĂХ ХАКНЕ ĔÇЛЕКЕН ПĔЛЕТ

*Хайла*

Темĕн тума кирлĕ пулнă вара ачине укçа. Ашшĕнчен ыйтса пăхма шут тытнă.

— Çитет сана, ывăлăм, ман ĕнсе çинче ларма, — хуравланă ашшĕ. — Кайса ĕçлесе укçа туп-ха, — тенĕ.

Амăшĕн икĕ хут укçа пулнă тет. Ырă е усал пулас пирки шухăшламасăрах хăйĕн ывăлне шеллесе пĕр хут укçине пачĕ тет. Хут укçи вара те пĕр тенкĕлĕх, те виç тенкĕлĕх пулнă — ăна халĕ тĕплĕн калаймастăп.

Ашшĕ ĕçрен таврăнсан ачи çак укçана ун патне пырса тăсса парать:

— Акă, атте, эпĕ паян ĕçлесе илнĕ укçа, — тет хăй.

Ашшĕ çак укçана илет те кăмакана пăрахать. Укçа пĕр самантрах ялкăшса çунса каять. Ача çакна вырăнтан хускалмасăр тĕлĕнсе пăхса тăрать, кăмакара укçа мар, хурăн хуппи çунать тейĕн.

— Эй, ачам, çу-ук, ку ĕçлесе тупнă укçа мар иккен, — тет ашшĕ кăмăлсăр пулса. «Ашшĕне çамрăклах улталама пăхаканскертен пархатар пулĕ-ши, пулмĕ-ши?» — тесе шухăшлать хăй ăшĕнче.

— Ултавпа наянлăх пĕртăван, вĕсем çынна ырă тумаççĕ. Хăвах кайса ĕçле-ха, ачам, çын пул, — тет вара ашшĕ ывăлне.

Амăшĕ тепĕр кунне каллех ачине шеллесе хăйĕн юлашки укçине парать.

— Аçу килсен хам ĕçлесе тупрăм тесе пар çак укçана, — тесе вĕрентет.

Ашшĕ ĕçрен таврăнсан ачи ун патне пырса çак укçана тыттарать çеç — лешĕ ăна тӳрех кăмакана пăрахать. Ачи хут укçа çунса пĕтессе кĕтсе тăмасть, нимĕн пулман пекех çаврăнса утать.

— Э-э, ачам, каллех ху ĕçлесе тупнă укçа мар ку, — тесе хурать ашшĕ. Хăй ăна хытă çилленет.

Тепĕр кунне ывăлĕн хăйĕнех ĕçлеме каймалла пулать: амăшĕн укçи пĕр пус та юлман.

— Ачам, хăвăнах кайса ĕçлеме тивет пуль, — тет амăшĕ. — Куратăн, аçуна улталама çук, улталасан та — ырри пулас çук, — тет.

Ачи тухса кайрĕ тет. Кунĕпе тар юхтара-юхтара ĕçлерĕ тет. Алли-урри те хăпарса кайрĕ, тет. Ара, алă-ура хăпарасси вăл ĕçленипе çеç мар, ĕçре пиçменнипе те пулать. Аллинче унăн кунĕпе ĕçленĕшĕн илнĕ кĕмĕл укçа — çирĕм пус.

Каç пулсан ачи ĕçрен ывăнса килчĕ тет. Ашшĕ таврăнсан ывăлĕ ун патне хаваслăн чупса пырса çирĕм пус укçине тыттарчĕ тет. Ашшĕ çак укçана илет тет те нимĕн шухăшласа тăмасăрах кăмакана пăрахма тăрать тет. Ачи çакна курсан çирĕм пуслăх кĕмĕл укçа вутра çунманнине манса кайсах ашшĕ патне чупса пычĕ тет те аллинчен ярса тытрĕ тет.

— Мĕн тăвасшăн эсĕ, атте?! — тесе пĕтĕм чун хавалĕпе кăшкăрса ячĕ тет. — Эпĕ ку çирĕм пусшăн кунĕпе тар юхтарса ĕçлерĕм вĕт, — тесе каларĕ тет ачи.

— Халь ĕненетĕп, ывăлăм, — тенĕ вара ашшĕ те хавасланса. — Ку çирĕм пуса ху тертленсе ĕçлесе тупнă иккен. Ĕçлесе тунă пуянлăха ĕçлекен çын кăна хисеплеме пĕлет. Хăй ĕçлеменни çын тунă япалан хакне нихçан та пĕлес çук, — тесе каланă тет вара ăна ашшĕ.



## Словарь ĕçĕ

**ĕнсе çинче лар** — сидеть на шее
**кăмакана пăрах** — бросить в печь
**ялкăшса çунса кай** — сгореть ярким пламенем
**кăмăлсăр пул** — быть недовольным
**вырăнтан хускалмасăр тĕлĕнсе пăхса тăр** — смотреть с удивлением не двигаясь
**ултавпа наянлăх пĕртăван** — обман и лень родственники
**шелле** — жалеть
**нимĕн пулман пек** — как ни в чем не бывало
**çаврăнса ут** — отвернуться

**хытă çиллен** — обидеться
**тар юхтар** — работать в поте лица
**ĕçре пиç** — закаленный в труде

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Хайлавра (притчăра) миçе сăнар?
2. Ача ашшĕнчен мĕн ыйтса пăхма шут тытнă?
3. Ашшĕ ăна мĕн тума хушнă?
4. Ачана шеллесе амăшĕ миçе хутчен укçа панă?
5. Ашшĕ ачи панă укçасене мĕн тунă? Мĕншĕн?
6. Виççĕмĕш хутĕнче ачи ашшĕне мĕнле укçа тыттарнă?
7. Ашшĕ çав укçана мĕн тăвасшăн пулнă?
8. Ашшĕ мĕншĕн ачи панă укçасене çунтарма тесе кăмакана пенĕ?
9. Хайла (притча) авторĕ ашшĕн сăмахĕсене пĕтĕмлетсе мĕн калать? Çав вырăна тупса вуласа парăр.
10. Хайлан (притчăн) тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Хайлавра (притчăра) мĕнле проблема хускатнă?
2. Ку хайла (притча) мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.
3. *«Ĕçлесе тунă пуянлăха ĕçлекен çын кăна хисеплеме пĕлет»* тенине мĕнле ăнланатăр?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Панă сăмахсенчен ваттисен сăмахĕсем пуçтарăр.*

1. Кĕмесĕр, вĕренеймĕн, шыва, ишме.
2. Ырă, усал, илеймĕн, ĕçпе, ят.

### Александр Галкин
### (1928 - 2002)



***Александр Алексеевич Галкин*** *— сăвăçă, чăваш халăхĕн паллă юпатаруçи.*

*Вăл Чăваш Республикин Элĕк районĕнчи Чулкаç ялĕнче çуралнă. Ялти пуçламăш, Юнтапари тулли мар вăтам шкулсенче, Калининăри педагогика училищинче, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Чăваш кĕнеке издательствинче, «Тăван Атăл» тата «Капкăн» журналсенче ĕçленĕ. Обществăллă ĕçсенчен те ютшăнса тăман. Ăна темиçе хут та Чăваш АССР писателĕсен союзĕн правлени членне, Шупашкар хулин Ленин район совечĕн депутатне суйланă.*

*Александр Галкин — нумай енлĕ çыравçă. Вăл — лирик та, прозаик та, юптаруçă та. Ун сăввисемпе Ф. Лукин, Г. Лебедев, Г. Хирпю, А. Асламас тата ытти композиторсем 200 яхăн юрă кĕвĕленĕ. Çавăн пекех çыравçă М. Горький, С. Есенин, А. Пушкин, М. Шолохов хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Хăйĕн хайлавĕсене те куçаруçăсем 30 чĕлхене куçарнă.*

*Александр Галкин 30 кĕнеке авторĕ. Вĕсенчен 5 кĕнеке вырăсла, тутарла 1 кĕнеке тухнă. Çыравçăн паллăрах кĕнекисем: «Сиплĕ сăмах» (Целебное слово), «Тăван тавралăхра» (В родном краю), «Вăйăран вăкăр…» (До добра не доведет), «Аптраман Раман» (Храбрый Ромка), «Шӳтлесе мар…» (Кроме шуток).*

*Александр Галкина Чăваш литературине аталантарас тĕлĕшпе чылай вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçре пысăк активлăх кăтартнăшăн «Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», «Чăваш Республикин халăх поэчĕ» хисеплĕ ятсемпе чысланă.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Александр Галкин литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
2. Паллă юптаруçă ăçта тата хăçан çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
3. А. Галкин çырнă сăвăсемпе хăш композиторсем юрăсем хывнă?
4. Чăваш юпатаруçи камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?
5. А. Галкин хайлавĕсене пурĕ миçе чĕлхене куçарнă?
6. Çыравçăн паллăрах кĕнекисене асăнăр.

### ÇӲПĔ

*Юптару*

Ним хускалмасăр выртакан Çӳппе
Тем тивĕçпе
Çил килнĕ те çĕкленĕ çӳлелле —
Кăвак тӳпенелле.
Вун метр çĕкленсен каланă
Çӳпĕ каçăртса пуçне:
— Çич тӳпере халь эп!
Ман алăра — мĕнпур тĕнче!
— Мĕске-ер? — чăр-р! пăхнă
Çил çутăлтарса куçне. —
Ку çӳллĕше хăпартăн эсĕ ман ĕнсе çинче!
— Ха-ха! — каклиш кăтартнă Çӳпĕ хайхине. —
Эп сансăрах аван çитетĕп тĕпсĕр тӳпене!..
Тарăхнипе Çил чарăннă вĕçме.
Çав самантрах пуçланă Çӳпĕ çĕрелле вĕлтĕртетме…

* * *

Çын хӳттипе çӳле çĕкленнĕ тулăксăр çынна
Эп куртăм урамра ĕнер кăна.
Картлашкапа кĕмсĕртетсе вăл аннă пулмалла,
Ыталаса илсех каламçрĕ манпала.

## Словарь ĕçĕ

**хускаламасăр вырт** — лежать без движения
**тивĕç** — долг
**çĕкле** — поднять
**пуçна каçăрт** — задирать нос (здесь: задирать голову)
**çич тӳпе** — седьмое небо

**ман алăра** — **мĕнпур тĕнче** — в моих руках весь мир
**каклиш кăтарт** — показать кукиш
**çĕрелле вĕлтĕртет** — падать на землю
**çын хÿттипе çÿле çĕклен** — подняться (достичь вершин) под покровительством кого-либо
**тулăксăр çын** — бестолковый
**кĕмсĕртетсе ан** — с грохотом упасть
**ыталаса ил** — обнять

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Юптарăвăн партитурине тăвăр. Уçăмлă, илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Юптарура миçе сăнар? Вĕсен ячĕсене каласа тухăр, вырăсла куçарăр. Мĕншĕн вĕсене автор пысăк сас паллирен пуçласа çырнă?
2. Юптарури сăнарсен ĕç-хĕлне сăнласа парăр. Çÿпĕ мĕн тăвать? Юптарури глаголсене тупса вулăр.
3. Çил мĕн тăвать?
4. Тÿпене çĕкленнĕ Çÿпĕ мĕн каланă?
5. Çÿпĕ каланă сăмахсем Çиле килĕшнĕ-и?
6. Тарăхнă Çил Çÿппе мĕнле тавăрнă? Çав вырăна тупса вуласа тупса парăр.
7. Çÿпĕ пурнăçри мĕнле çынсене аса илтерет?
8. Çил пурнăçри мĕнле çынсене аса илтерет?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен чăвашлипе вырăслин тÿр килĕвĕсене тупăр. Сăвă содержанипе çыхăннă ваттисен сăмахĕсене палăртăр.*

1. Ĕçне кура кашăк шыра.
2. Кахал çынна пăсать, ĕç тăрантарать.
3. Куç хăрать те алă тăвать.
4. Васкакан вакка сикнĕ.
5. Темле пысăк юхан шыв та пĕчĕк шывран пуçланать.

А) Труд человека кормит, а лень – портит.
Ă) Все большое начинается с малого.
Б) Дело мастера боится.
В) Работник с сошкой, лодырь — с ложкой.
Г) Поспешишь — людей насмешишь.

## Пултарулăх ĕçĕ

Юптару тексчĕ тăрăх Çил тата Çÿппе сăнлакан глаголсене суйласа танлаштару таблицине (сравнительная таблица) тултарăр. Çак глаголсемпе уса курса икĕ сăнара танлаштарулла характеристика туса парăр.

| Çил | Çÿпĕ |
|---|---|
| | |

# КАШНИ КАЙĂК ХĂЙ ЙĂВИНЕ САВАТЬ — ВСЯКИЙ КУЛИК СВОЕ БОЛОТО ХВАЛИТ

**Геннадий Волков**



«Манăн çынсен умĕнче калаçура нимĕнле вăрттăнлăх, чее мелсем те çук. Мана асанне, анне, атте мĕн пĕчĕкренех çапла вĕрентнĕ — улталаса, хитре сăмахсем шыраса ан калаç, тĕрĕссине, хăвăн чуну мĕн хушнине, мĕн шухăшланине пĕлтер. Çав сăмахсене мĕн пĕчĕкренех шута илсе пурăнатăп, калаçатăп та. Çаксем темле хисеплĕ ятран та, темле должноçран та хăватлăрах, ĕнентерӳлĕрех, хаклăрах та чыслăрах, сумлăрах иккен. Тата çакна калам. Юрататăп эпĕ çынсене. Пурне те юрататăп. Никам та çĕр çине усал пулса çуралмасть. Мĕн чухлĕ ăна хăвăн ăшшуна, юратăвна паратăн — вăл та пурнăç çине çавăн чухлĕ ĕненӳллĕн, шанчăклăн, юратуллăн пăхать».

*Г. Волков*



## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Кам вăл Геннадий Волков? Вăл педагогика ăслăлăхĕнче мĕнле юхăм пуçарса янă?
2. Эсир Геннадий Волковăн хăш хайлавĕсене вуланă? Каласа тухăр.
3. Г. Волкова асламăшĕ, амăшĕ, ашшĕ çынсемпе мĕнле пулма вĕрентнĕ? Паллă академик вĕсем каланă сăмахсене шута илсе пурăннă-ши?
4. Çынсене юратни çинчен академик мĕн çырать?

## ЫЛТĂН ÇĔР

*Калав*

Ĕлĕк-авал Чăваш çĕрне инçетри пĕр патшалăхран элчĕсем килнĕ. Чăваш Енпе туслă çыхăну пуçарасшăн пулнă вĕсем. Авалхи чăвашсем ĕçчен те сăпайлă çынсем, пултаруллă та тарăн шухăшлавçăсем пулнă, çавăнпа нумайăшĕ вĕсен çĕр-шывĕ еннелле туртăннă. Аслă Атăлĕпе Шур Атăл, ватă юманлăхĕпе хитре çăкалăхĕ, сарă хĕвелĕпе сенкер тӳпи кирек кама та илĕртнĕ. Çепĕç сăмахĕсем, ытармалла мар юрри-сăвви, хӳхĕм тĕррисем…

Чăвашсемшĕн хăйсемшĕн пулсан кӳлĕ хĕрринчи хăмăш çулçиййĕ те, шурлăхри хăяхĕ те пурçăннăн туйăннă, çемçе те ачаш пулнă. Вĕсем хăйсен çĕрĕ çинче ӳсекен курăка чи ешĕлли тесе шутланă. Хăйсен çийĕнчи тӳпене чи сенкерри тенĕ, хĕвел вĕсемшĕн чи сарри пулнă. Атăлĕнчен анлăрах, тарăнрах, аслăрах юхан шыв вĕсемшĕн тĕнчере урăх пулман.

Элчĕсем Чăваш çĕр-шывĕ тăрăх нумай çӳренĕ. Урлă-пирлĕ кумнă, таçта та çитсе курнă. Курни-илтнине хăйсем йăлтах хут çине ӳкере-ӳкере илнĕ, çыра-çыра пынă.

Чăваш патши Атăлтан аякрах мар Виçĕ Кӳлĕ текен вырăнта пурăннă. Патша патне тарçисем пырса çапла кала-кала панă:

— Ютран килнĕ хăнасем пирĕн Атăла питĕ мухтаççĕ. Пирĕн вăрмансенче кайăк-кĕшĕк çав тери йышлă пулнинчен тĕлĕнеççĕ. Хĕрсен юррисене çыра-çыра илеççĕ. Вĕсен тĕррисене ӳкереççĕ, тĕрленĕ сурпансене темĕн чухлĕ ылтăн укçа пара-пара туянаççĕ. Хăйсен патшине илсе кайса кăтартасшăн. Ваттисен сăмахĕсене çыра-çыра илеççĕ. Сăпайлăхпа кăмăл тасалăхĕн йăлисене мухтаççĕ.

Çакă чăваш патшине тарăн шухăша янă. Чылайччен шухăшласа ларнă хыççăн вăл вĕсене хăй патне чĕнтернĕ. Патша кусене ăшшăн саламланă. Хăваланă. Сим пыл, юрай сăри ĕçтернĕ, тултармăш, шăрттан астивтернĕ. Турăх çитернĕ. Çичĕ тĕрлĕ какайпа çичĕ тĕрлĕ курăкран салма яшки пĕçерттернĕ. «Салма яшки — салам яшки», — ăнлантарнă вăл. Хаклă йышши япаласем парнеленĕ. Ахах-мерчен, тĕрлĕ йышши шăрça — хĕрĕсене савăнтарма. Чăваш ăстисем кĕмĕлтен, ылтăнтан тунă савăт-сапа — арăмĕсене мухтантарма. Кашнине пĕрер хутаç йăвача тыттарнă — ачисене рехетленме.

## Словарь ĕçĕ

**элчĕ** — посол
**туслă сыхăну пуçар** — установить дружественные связи
**сăпайлă çынсем** — скромные люди
**тарăн шухăшлавçăсем** — глубокомыслящие
**çĕр-шыв еннелле туртăн** — тянулись в эту страну
**çепĕç сăмах** — доброе слово
**хӳхĕм тĕрĕ** — красивые узоры
**хăмăш сулçи** — листья камыша
**шурлăхри хăях** — болотная осока
**пурçăннăн туйăннă** — как шёлк
**урлă-пирлĕ кумнă** — ходить вдоль и поперёк
**патша** — царь
**тарçă** — слуга
**ютран килнĕ хăна** — чужеземец
**сурпан** — женская головная повязка в форме узкого полотенца с вышитыми концами
**ылтăн укçа пара-пара туян** — покупать на золотые монеты
**сăпайлăх** — скромность
**кăмăл тасалăхĕн йăлисем** — традиции нравственности
**тарăн шухăша яр** — задуматься
**сим-пыл** — медовый напиток
**юрай сăри** — пиво, хранящееся под снегом
**тултармăш** — крованая колбаса
**шăрттан астивтер** — попробовать шыртан
**ахах-мерчен** — жемчуга-кораллы
**йăвача тыттар** — вручить колобок
**рехетлен** — наслаждаться

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Чăваш çĕрне элчĕсем мĕнле тĕллевпе килнĕ?
2. Авалхи чăвашсем мĕнле халăх пулнă?
3. Ытти халăха чăваш çĕрĕнче мĕн-мĕн илĕртнĕ? Çав вырăна тупса вулăр.

4. Чăвашсемшĕн хăйсен çĕрĕ çинче ÿсекен курăк, хăйсен çийĕнчи тÿпе мĕнле шутланнă? Хĕвел мĕнлерех пулнă-ши?
5. Элчĕсем чăвашсем патĕнче мĕн-мĕн курнă? Вĕсем курни-илтнине мĕн туса пынă?
6. Чăваш патши ăçта пуранннă?
7. Чăваш патшине тарçисем мĕн-мĕн пĕлтернĕ? Çав вырăнсене тупса вулăр.



8. Чăваш патши элчĕсене мĕн тума хăй патне чĕнтернĕ?
9. Патша элчĕсене мĕнпе-мĕнпе хăналанă? Мĕнле кучченеçсем парса янă? Çав вырăна тупса çырса илĕр.

## ЫЛТĂН ÇĔР

*Калав. Малалли*

Ют патшалăх çыннисем килнелле кайма пуçтарăннă. Вĕсене Атăл хĕрринче пысăк кимĕ кĕтсе тăнă. Хăнасем кимĕ еннелле утма тытăннă. Акă вĕсем пусман малтанхи картлашки еннелле урисене тăсаççĕ. Ăсатакан чăвашсем вĕсене самантлăха чарăнма ыйтаççĕ. Лешсем тĕлĕнеççĕ.

Чăвашсем аякран килнĕ хăнасене йăвашшăн кăна пушмакĕсене хывма сĕнеççĕ. Пушмак çумне çыпçăннă пылчăк таткисене хăйпăта-хăйпăта илеççĕ. Шурă пурçăн тутăрсемпе пушмак ăшĕнчи, тĕпĕнчи айккинчи тусана шăла-шăла тасатаççĕ те тутăрĕсене тирпейлесе кĕсйисене пуçтарса чикеççĕ. Тап-таса пушмакĕсене чăвашсем хăйсемех типтерлĕн тăхăнтартса яраççĕ хăнасене. Ӳпкев тавраш ан пултăр тесе-ши, тата тепрер енчĕк ылтăн укçа тыттараççĕ кусене.

— Мĕнле йăла ку сирĕн, чăвашсен? — шалт тĕлĕнсе ыйтаççĕ хăнасем.

Лешсем вара ак мĕнле хуравлаççĕ:

— Эсир çав тери чечен те тулăх Чăваш çĕр-шывне куртăр, тĕнчери чи илемлĕ çĕр-шывпа паллашрăр. Пирĕншĕн çак çĕртен хаклăраххи нимĕн те çук. Çак çĕр çинче вăрман пек пусси-пуссипе пăри кашлать, пăрçа ÿсет... Вăрмансенче пин çулхи юмансем саркаланса лараççĕ, çăкалăхра вара кунĕпех пыл хурчĕсем çепĕççĕн сĕрлеççĕ… Кунта ÿснĕ çĕмĕрт турачĕсем çине эпир хамăр ачасен шăнаршисене çака-çака янă. Сăпка юрри юрласа вĕсене çывăрттаратпăр. Тăван çĕр çинче пин çула çитнĕ юмансенчен çурса хăма тăватпăр, çав хăмаран тупăк туса çак çĕре тĕрĕллĕ сурпан сырнă асаннемĕрсемпе кукамайăмăрсене пытаратпăр. Тăван çĕрте çăва та тăван. Çак çĕр çинче эпир хамăрăн чĕвĕл чĕкеç чĕлхемĕрпе калаçса чуна пусаратпăр, вăййăра та, туйра та хамăр юрăсене юрласа йăпанатпăр, юпа уйăхĕнче вара ваттисене асăнатпăр… Ыйăнсан çак çĕр çине выртса канатпăр. Çак çĕр çинчи улăхсенче пирĕн выльăх кĕтĕвĕсем кĕшĕлтетеççĕ. Айлăмсенчен сăрталла хăпаракан сукмаксене, тикĕс уй-хиртен юманлăха кĕрекен çулсене пурне те пирĕн маçаксен урисем, асаттесен урисем, хамăрăн урасем, пирĕн ачасен тяпписем таптаса хытарнă. Чăваш çĕрĕ — пирĕншĕн атте те, анне те, тăван пичче те. Ку çĕр сăваплă та таса.

Тăван çĕрĕн тусанĕ те тăван, пылчăкĕ те пылак. Унăн нӳрлĕ тăмĕ — ылтăн, типĕ чулĕ — кĕмĕл… Эсир пирĕншĕн хисеплĕ хăнасем пултăр, сирĕншĕн нимĕнле хаклă парнесем те шел мар. Анчах та Чăваш çĕрĕ пирĕншĕн чи хакли, сире эпир унăн куçа курăнман тусан пĕрчине те пама пултараймастпăр. Çавăнпа та сирĕн пушмакăрсем тап-таса. Сывă пулăр! Такăр çулпа утма пӳртĕр эппин сире…

## Словарь ĕçĕ

**самантлăха чарăнма ыйт** — попросить остановиться на минутку
**пушмакĕсене хывма сĕн** — предложить снять обувь
**çыпçăннă пылчăк татки** — слипшиеся комки грязи
**тирпейлесе пуçтарса чик** — аккуратно сложить
**енчĕк** — кошелёк
**шалт телĕн** — удивляться
**шăнарши** — колыбель
**маçак** — кукаçи (дедушка со стороны матери)
**тусан пĕрчи** — пылинка
**такăр çулпа утма пӳртĕр** — в добрый путь

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Хăнасем кимĕ çине ларас умĕн мĕн пулса иртет? Çав вырăна тупса вулăр.
2. Чăвашсем хăйсен çĕр-шывĕ çинчен мĕн каласа ăнлантарнă? Çав вырăна тупса илемлĕ вуласа парăр.
3. Авалхи чăвашсене автор мĕнлерех кăтартать? Эсир вĕсене мĕнле сăнлана пулăттăр?
4. Автор Чăваш çĕршывĕнчи халăх çинчен мĕнле кăмăлпа çырать?
5. Калавăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать?
6. Калава мĕншĕн «Ылтăн çĕр» ят панă?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Ку калав мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.
2. *«Тăван çĕрĕн тусанĕ те тăван, пылчăкĕ те пылак. Унăн нӳрлĕ тăмĕ — ылтăн, типĕ чулĕ — кĕмĕл…»* тенине мĕнле ăнланатăр?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Панă сăмахсенчен ваттисен сăмахĕ пуçтарăр, вырăсла куçарăр.*

Кăмака, курман-илтмен, Мускава, çинче, кăмак, выртнă, çитнĕ, куракан-илтекен.

**Юхма Мишши**
**(1936)**

***Юхма Мишши (Михаил Николаевич Ильин)*** *— чăваш халăх çыравçи, историкĕ, сăвăçи, юптаруçи, драматургĕ, очерк ăсти.*



*Вăл Патăрьел районĕнчи Сăкăт ялĕнче çуралса ӳснĕ. Патăрьелĕнчи вăтам шкулта, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче, Театр ӳнерĕн патшалăх институчĕ çумĕнчи пултарулăх курсĕнче пĕлӳ пухнă. Шкулта ачасене вĕрентнĕ, Чăваш кĕнеке издательствинче, «Вучах» хаçатра ĕçленĕ. Сыравçă хайлавĕсене çĕр ытла чĕлхене куçарнă.*

*Юхма Мишши А.Г. Николаев космонавт тата Митта Ваçлейĕ ячĕпе хисепленекен премисен лауреачĕ. Çавăн пекех вăл Пĕрлешӳллĕ Нацисен Йĕркелĕвĕн парнипе ылтăн медальне тивĕç пулнă. Ăна Тĕнчери литературăн К. Симонов, В. Пикуль, А. Фадеев ячĕллĕ, эрменсен Паруйр, азербайджансен Самед Варгун ячĕллĕ парнине, нимĕçсен «Çĕнĕ йĕркелĕх» парнине, турккăсен «Тĕрĕк тĕнчишĕн тунă пысăк ĕçсемшĕн» хисеп парнине тивĕçтернĕ. Вăл Шупашкар хулин хисеплĕ çынни.*

*Юхма Мишши истори романĕсем, легендăсемпе мифсен пуххисем, эпоссем çырнă. Чăваш композиторĕсем унăн сăввисемпе чылай юрă хывнă.*

*Вăл 200 ытла кĕнеке авторĕ. Сыравçăн паллăрах кĕнекисем: «Çăлтăрсем чĕнеççĕ» (Звезды зовут), «Мускав çулĕ» (Дорога на Москву), «Эльпи чечекĕсем» (Цветы Эльби), «Кăвак çĕмрен» (Голубая стрела), «Еткер» (Наследие), «Авалхи чăвашсем» (Древние чуваши).*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Юхма Мишши литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
2. Сыравçă ăçта çуралнă? Вăл çуралнă вырăна Чăваш Республикин картти çинче тупăр.
3. Юхма Мишшин хайлавĕсене хăш-хăш чĕлхене куçарнă?
4. Вăл мĕнле премисене тивĕçнĕ? Мĕншĕн?
5. Сыравçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.

**ХАКЛĂ ÇĔРĔМ-ШЫВĂМ**

Савнă çĕрĕм-шывăм, мĕн тери аван
Эс çумра пулсассăн манпала ялан.
Пĕр санпа савнатăп, сансăр тунсăхлатăп,
Санпа çеç пуласчĕ ĕмĕр-ĕмĕр ман.

Чун-чĕре ăшши эс, тăванах кĕтес,
Маншăн çут пуласлăх — тăванах кĕтес.
Сансăр тунсăхлатăп, сан патна васкатăп,
Сар хĕвел эс маншăн, тăванах кĕтес.

Хаклă çĕрĕм-шывăм, питĕ савăнса
Сан çинчен юрлатăп юрă мухтаса.
Сан патна васкатăп, сансăр тăраймастăп,
Ĕмĕр-ĕмĕр пурăн эс телей курса.

## Словарь ĕçĕ

**çумра пулсассăн** — если ты рядом
**сансăр тунсăхлатăп** — без тебя грущу
**чун-чĕре ăшши** — тепло души
**тăван кĕтес** — родная сторона
**çут пуласлăх** — светлое будущее
**сансăр тăраймастăп** — не могу обходиться без тебя

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Уçăмлă, палăртуллă вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвă мĕн çинчен?
2. Сăвăç хăйĕн Тăван çĕр-шывне мĕнле сăмахсемпе мухтать? Çав вырăнсене тупса вулăр.
3. Эсир Тăван çĕр-шыва мĕнле сăмахсемпе мухтанă пулăттăр? Кластер туса çырăр.
4. Сăвăç Тăван çĕр-шывне мĕн сунать-ши?
5. Сăвва вуласан куç умне мĕнле ÿкерчĕк тухса тăрать?
6. Сăввăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать-ши?
7. Сăвăра поэтăн кăмăл-туйăмĕ палăрать-и? Мĕнле?

## Пултарулăх ĕçĕ

Эсир Тăван çĕр-шыва мĕн суннă пулăттăр? Хăвăр шухăшăра хушу наклоненийĕнчи глаголсемпе усă курса çырса кăтартăр.
Тĕслĕх: *Тăван çĕр-шывăм яланах илемлĕ пул, ĕмĕр пурăн…*

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене чăвашла куçарăр е тÿр килекен чăвашла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Всякий кулик свое болото хвалит.
2. Родина — мать, чужбина — мачеха.
3. Своя земля — свой прах.
4. Нет ничего дороже родного гнезда.
5. Много стран прошел, а добро лишь на Родине нашел.



## Николай Симунов
## (1937 – 1997)

***Николай Васильевич Симунов*** *— чăваш çыравçи, прозаикĕ. Вăл Тутарстанăн Пăва районĕнчи Хирти Кушкă ялĕнче çуралнă. Ачалăхĕ тăван ялта иртнĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан ашшĕ вăрçа тухса каять. Виçĕ уйăх иртсен вăл вăрçăра хыпарсăр çухалать. Амăшĕ вара пилĕк ачана выçлăхпа тертлĕ пурнăçа пăхмасăр ура çине тăратма хал çитернĕ. Çамрăк Коля çемьери пурнăç йывăр пулсан та пĕлÿ илме тăрăшнă. Элшел вăтам шкулĕнче,*

*Пăва ветеринари техникумĕнче, Хусан ял хуçалăх институтĕнче, Чĕмпĕр педагогика институтĕнче пĕлӳ пухнă. Молдавире, хăй тăван ялĕнче шкулта ĕçленĕ. Анчах Николай Васильевичăн ачаранах амаланнă хайлавçă пулас ĕмĕчĕ пулнă. Вăл çырнисене Пăвари «Ялав» хаçатра пичетлеме тытăннă. Райхаçат çыравçăшăн хĕсĕк пулма пуçланă, унăн ĕçĕсем пысăк хĕнпе пичетленнĕ. Çавна курах вăл Шупашкара куçса кайнă, Çĕнĕ Шупашкарти 9-мĕш професиллĕ училищинче вăй хунă.*

*Н. Симуновăн паллăрах хайлавĕсем: «Тымар» (Корень), «Малтанхи çăлтăрсем» (Ранние звёзды), «Çил мĕн тĕслĕ» (Ветер какого цвета) повестьсем, «Ан йĕр эсĕ, Лена» (Не плачь ты, Лена) роман. Çыравçă произведенийĕсенчи тĕп темăсем — паянхи пурнăç ыйтăвĕсем, тăлăх-туратсен шăпи, юлхавпа ĕçченлĕх, юратупа савăнăç.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Н.В. Симунов ачалăхĕ мĕнлерех иртнĕ?
2. Пулас çыравçă ăçта-ăçта пĕлӳ пухнă?
3. Вăл литературăн хăш жанрĕсемпе тухăçлă ĕçленĕ?
4. Хăйĕн пултарулăхĕнче çыравçă мĕнлерех темăсем хускатнă?

## САЛАМ КАЛА

*«Сурпан тĕрри» драма сыпăкĕ*

Вылякансем:

**Катя** - Сантăрпа Наçтук хĕр ачи

**Василиса** — çамрăк хĕр ача, тăлмачă. Ют чĕлхесен институтĕнчен вĕренсе тухнă. Катя пултарĕ (упăшкин йăмăкĕ)

**Сеньор** — тыткăна лекнĕ çын, Аргентинăра асапланать

**Сеньора** — Аргентинăра пурăнакан миллионер

Аргентина, Буэнос-Айрос хули. Халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм тĕнчери выставки. Совет Союзĕн павильонĕ. Тĕрĕсен уйрăмĕ. Чăваш тĕррисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Чăваш çĕр-шывĕнчен килнĕ тĕрĕ ăсти Екатерина Александровна Сурбанова витринасем çине экспонатсем вырнаçтарать. Чăваш тумĕпе. Аргентина музыки йăвашшăн илтĕнет.

**Катя** *(юрлать, юрлана май çаврăнкаласа илет).*

Тĕрĕ тĕрлет чăваш пики
Асаннесем вĕрентнĕ пек:
Чечек пек курăнтăр кĕпи, —
Сурпанĕ хӳхĕм пултăр тет.
Сурпан тĕрри — чăваш тĕрри
Ăçта кăна çитмерĕ-ши:
Чăваш çыннин кун-çул йĕрри
Кам чĕрине витмерĕ-ши?

*(Юрлама чарăнса)* Халăх курма пуçтарăнать — тăлмачă çаплах çук-ха. Аргентина çыннисен кăмăлне епле тивĕçтерĕп-ши?

**Василиса** *(Шăппăн кĕрет. Чăматанне кĕтессе лартать те Екатерина Александровнăна ыталаса илет).* Инкеçĕм, чунăм, сывлăхпа-и? Акă эпĕ те çитрĕм!

**Катя** *(савăнса)* Василиса, хĕрĕм! Чăн-чăн хĕвел пулса тухрăн ман тӳпене! Халь кăна аса илсеттĕм *(Ыталашса çаврăнкалаççĕ, юрлаççĕ).*

Хăш чĕлхепе вулас килет
Вула чăваш тĕррисене:
Сăмахсăрах алла илеç
Вĕсем çынсен чĕрисене!
Сурпан тĕрри — пурнăç тĕрри
Ăçта кăна çитмерĕ-ши:
Чăваш çыннин кун-çул йĕрри
Кам чĕрине чĕртмерĕ-ши?

**Василиса** *(пукан çине ларать).* Кăштах сывлăша çавăрса ярам-ха. Çитессĕн шанманччĕ, çапах сиккипе вĕçтерсе килтĕм.

**Катя** *(юнашар ларать).* Ма манпа пĕрлех килмерĕн?

**Василиса.** Санпа пĕрле ман мар, Васильева тăлмачăн килмеллеччĕ. Виçĕм кун грипп чирĕ вырăн çине вырттарчĕ ăна. Çавăнпа килеймерĕ.

**Катя.** Эсĕ мĕншĕн виçĕм кунах килмерĕн? Василиса ята Васильева хушаматпа арпаштарса янă апла? Эпĕ сана кĕтсе ларатăп.

**Василиса.** Çук, арпаштарман. Санпа пĕрле чăнахах та Васильева хушаматлă хĕр ача килмеллеччĕ. Эпир унпа ют чĕлхесен институтĕнче пĕрле вĕреннĕ. Лайăх çын вăл.

**Катя** *(кăмăлсăрланса).* Эпĕ сана ыйтнăччĕ-çке. Мĕншĕн çав Васильевăна янă-ха? Мĕн те пулин сиксе тухман-ши?

**Василиса.** Пĕр этем ман çинчен çăхав çырнă. Ман атте вăрçă вăхăтĕнче фашистсене сутăннă имĕш.

**Катя.** Сан аçу ăçта, мĕнле майпа хыпарсăр çухални пуриншĕн те паллă вĕт. Кама мĕн кирлĕ тата?

**Василиса.** Сĕлĕх Парамунĕн Якурĕ çырнă. Кайран паллă пулчĕ.

**Катя.** Вăл ăçтан пĕлнĕ эсĕ Аргентинăна каяссине?

**Василиса.** Хулана тухсан Якура курнăччĕ. Мускава мана шыраса килнĕ иккен. Качча илесшĕн мана, чĕркуçленсех йăлăнчĕ. Эпĕ хирĕçлерĕм. Тавăрма шут тытнă-тăр.

**Катя.** Качча илесшĕн-тĕк, ма каясшăн мар? Качча кайма сан та вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Текех вун çиччĕре мар. Паракантан ил, çапакантан тар тенĕ.

**Василиса.** Пĕлнĕ Якура кайиччен пĕлмен явăла каятăп луччĕ. Сĕлĕхсен ячĕсене илтсенех çӳç-пуç вирелле тăрать ман.

**Катя.** Арман чулĕ витĕр тухмасăр çăкăр çăвара кĕмест çав. Кам шухăшланă? Çум курăкне никам та лартса ӳстермест. Сана качча илетĕп тени те пуш сăмах кăна-тăр. Тип шар кăтартса намăса хăварма та совеç çитерĕç вĕсем. Сĕлĕхсен йăхĕ-тĕпĕ çапларах вĕсен.

**Василиса.** Çынна ыр туса савăнтарнă йăх мар ĕнтĕ.

**Драма** — один из трех основных родов (наряду лирикой и эпосом), представляющий собой произведения, построенное в форме диалога и предназначенные для исполнения на сцене.

**Выляну (драма)** — каланупа (прозăпа) тата çуйланупа (лирикăпа) пĕр ретре тăрать; сцена çинче лартмалли хайлав.

## Словарь ĕçĕ

**тыткăна лекнĕ** — попал в плен
**пĕтĕм тĕнче** — весь мир
**тĕрĕсен уйрăмĕ** — художественное отделение
**сурпан тĕрри** — узоры
**кăмăла тивĕçтер** — удовлетворить желание
**инке** — жена старшего брата, жена дяди (тетя)
**сывлăш çавăрса яр** — передохнуть
**сиккипе вĕçтерсе кил** — прибежать
**çăхав çыр** — писать жалобы
**фашистсене сутăннă имĕш** — предаться фашистам
**хирĕçле** — отрицать
**пĕлмен явăл** — незнакомый дъявол
**çӳç-пуç вирелле тăрать** — волосы встали дыбом
**арман чулĕ** — жернова
**тип-шар кăтарт** — мучить
**сĕлĕхсен йăхĕ-тĕпĕ** — пиявочный род (кровососущих)

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Драма сыпăкне рольпе илемлĕ вулăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Ĕç хăш хулара пулса иртет?
2. Катя Аргентинăна мĕнле тĕллевпе килнĕ?
3. Василиса мĕншĕн Катьăпа пĕрле килеймен?
4. Якур Василиса пирки мĕнле çăхав çырнă? Мĕншĕн?

### САЛАМ КАЛА

*«Сурпан тĕрри» драма сыпăкĕ. Малалли*

Алăкран ватă çын туянланса кĕрет, питĕ япăх тумланнă, кĕлмĕç пекех.

**Сеньор** *(сарлака хĕреллĕ çĕтĕк шлепкине хывса пуç таять, сывлăх сунать).* Телейлĕ кун пултăр, синьоринăсем!

**Василиса** *(Аргентина чĕлхипе).* Тавтапуç сире, сеньор, ырă суннăшăн. Кунĕ сирĕншĕн те телейлĕ пултăр.

**Сеньор** *(куçлăхне тăхăнса экспонатсене пăхса çаврăнать, чăваш сурпанĕ тĕлне çитсен чĕркуçленсе ларать те сурпан вĕçне виçĕ хутчен чуп тăвать, куççульне аллипе шăлать).* Чăваш сурпанĕ вĕт ку! Турăçăм, ăна курса вилме те патăн иккен (куççульне шăлать).

**Катя** *(тĕлĕнсе).* Эсир чăвашлах калаçатăр мар-и, сеньор?

**Сеньор** *(çаплах куççульне шăлса).* Начар калаçсан та, чăвашлах калаçатăп-ха, хĕрĕм. Миçе çул иртрĕ унтанпа. Калаçма та манса кайрăм ĕнтĕ.

**Василиса.** Аванах калаçатăр-ха, сеньор. Мĕнле майпа Аргентинăна килсе тухнă вара эсир? Хăвăр хăш енчи чăвашсем пулатăр?

**Сеньор.** Чăваш мар эпĕ. Чăвашсем хушшинче çуралса ӳснĕ мариец. Атăл тăрăхĕнчен. Эсир хăш енчи чăвашсем?

**Катя.** Эпир те Атӑл тӑрӑхӗнчен. Элькеш текен пысӑк ял ҫинчен илтнӗ пулӗ? Ҫав ялтан. Шупашкартан инҫе мар вӑл.

**Сеньор.** Пӗлнӗ пулсан та манса кайнӑ ӗнтӗ. Хӗрӗх ҫул ытла иртрӗ унтанпа. Хамӑн ята та астумастӑп халь.

**Катя.** Элькешре пӗтӗм тӗнчипе чапа тухнӑ тӗрӗ фабрики пур, ку тӗрӗсене ҫавӑнта тӗрленӗ. *(Тухать.)*

**Сеньор** *(тӗрӗсене тыткаласа пӑхать)*. Ҫын алли мар, хӗвел тӗрленӗ пек ку тӗрӗсене.

**Василиса** *(кулкаласа)*. Екатерина Александровна тӗрленӗ тӗрӗсем кусем. Эсир ҫакӑнта ҫити епле майпа килсе тухнӑ вара?

**Сеньор.** Тӑван ҫӗр-шывне пӑрахса хӑй ирӗкӗпе кам килӗ кунта? Ҫав урнӑ Гитлер пӗтерсе хучӗ пирӗн пурнӑҫа.

**Василиса.** Сан пеккисем татах та пур-и кунта?

**Сеньор.** Ун чухне эпир нумайӑнччӗ, ҫирӗм ҫын та пуль. Халь пӗлместӗп. Кайран никама ту курман.

**Василиса.** Эсир тыткӑна лекнӗ апла?

**Сеньор.** Вӑрҫӑн малтанхи кунӗсем пирӗншӗн ӑнӑҫлах килмерӗ ҫав. Пирӗн полк вутлӑ унка лекрӗ. Ӗҫме-ҫиме, вӑрҫӑ хатӗрӗсем пӗтсе ҫитрӗҫ. Танксене хирӗҫ чӑмӑрпа ҫапӑҫаймастӑн-ҫке.

**Василиса.** Пурпӗрех тыткӑна парӑнмалла марччӗ.

**Сеньор.** Пире, пӗр ҫирӗм ҫынна, йывӑр аманнӑран ним туйми выртаканскерсене, тыткӑна илсе кайнӑ. Пурте пекех чӑвашсемччӗ. Кӑштах сывалсан пире чуралӑха сутса ячӗҫ.

**Катя** *(кӗрет)*. Василиса, ҫавӑнта пӗр дама тем каласшӑн, тухса калаҫ-ха. Эпӗ нимӗн те ӑнланмастӑп.

**Василиса.** Халех, Екатерина Александровна. Сеньора итлесе йӑлтах манса кайрӑм пулмалла. *(Тухать.)*

**Катя** *(сеньор патне пырса)*. Чӑваш Енрен тетӗр апла?

**Сеньор.** Пире кӑштах сывалма пуҫлаканскерсене Италие илсе кайрӗҫ. Унта ман пек аманса тыткӑна лекнисем темиҫе ҫӗр ҫын та пурччӗ. Вӑрах тытмарӗҫ пире Италире.

**Катя.** Мӗншӗн? Ним уссӑр ҫитерсе вырттарасшӑн пулман-тӑр.

**Сеньор.** Вӑл вӑхӑтра тыткӑна лекнисем партизан ушкӑнӗсем йӗркелени ҫинчен калаҫатчӗҫ. Хӑранӑ пуль пиртен. Эпир партизансемпе ҫыхӑнма пултарнӑ-ҫке.

**Катя.** Унтан ӑҫта ячӗҫ сире?

**Сеньор.** Темиҫе ҫӗр ҫынна карап трюмне хупса океанурлӑ илсе кайрӗҫ. Икӗ уйӑха яхӑн уҫӑ сывлӑша кӑлармарӗҫ. Мӗн чухлӗ ҫын вилчӗ. Чунӗсем тухайманнисене кӑшкӑрта-кӑшкӑртах йӗкехӳресем кӑшлатчӗҫ. Темиҫе пин ҫынран ик ҫӗре яхӑн кӑна юлтӑмӑр.

**Катя.** Эсир епле сывӑ юлнӑ-ха?

**Сеньор** *(куҫне шӑлкаласа)*. Пӗлместӗп. Асапланас кунӑмсем пӗтмен пуль. Аргентинӑна ҫитсен пире уран руди кӑларакан шахта хуҫине сутса ячӗҫ. Ҫав кунран пуҫласа хӗвел ҫути курма та ҫӳле улӑхман.

**Катя.** Пӗрмаях ҫӗр айӗнче ӗҫлеттернӗ-и сире?

**Сеньор.** Çапла. Халĕ акă, ĕçleme вăй пĕтсе çитсен, кăларса ячĕç. Çӳретĕп çапла ыйткаласа.

**Катя.** Пенси тавраш паммаççĕ-им? Выставка курма епле кĕртрĕç-ха сире? Кунта кĕрсе курма укçа нумай илеççĕ-çке.

**Сеньор.** Куракансем чăваш тĕррисене пысăк хак пачĕç. Тӳсеймерĕм, юлашки укçапа килсе курас терĕм. Халь ĕнтĕ вилсен те хăрамастăп, çуралнă çĕр-шыва кайса курнă пекех пулчĕ.

Сцена хыçĕнче хĕрарăм ют чĕлхепе хыттăн калаçать. Ăна Василиса лăпкă сасăпа ăнлантарать.

**Хĕрарăм сасси** *(çине тăрса).* Миçе пин песо кирлĕ? Халех тарçăсене киле мăшăр патне чуптаратăп.

**Сеньор** *(Катьăна ăнлантарса парать).* Выставкăри япалисем ку сеньоринăна килĕшнĕ пуль, укçалла туянасшăн. Вĕреннĕ, хăнăхнă вĕсем пур япалана та укçа виçипе виçме. Пире те укçалла туяннă вĕсем, пасарта выльăхсене туяннă пек.

Василисăпа сеньора кĕреççĕ.

**Василиса** *(шутсăр тарăхса).* Екатерина Александровна, çак хĕрарăм пирĕн тĕрĕсене туянасшăн.

**Катя** *(шухаша кайса).* Куçарса пар эсĕ ăна: пирĕн тĕрĕсене туянма укçа çитмест унăн.

**Сеньор** *(хăраса).* Тархасшăн, асăрханарах калаçăр. Екатерина Александровна, миллионерсем вĕсем.

**Сеньора** *(тарăхса, сеньор çинелле кăтартать).* Çак ыйткалакан вырăнне хуратăр-им мана? Кирлех тĕк выставкăна йăлтах сутăн илме пултаратăп эпĕ.

**Катя** *(мăн кăмăллăн утса пырать те чăваш сурпанне сеньора умĕнче саркаласа).* Каçарсамăр та, сеньора, çак тĕрĕ йăпанмалли япала мар, вăл — чăваш халăхĕн историйĕ. Истори сутăнманнине хăвăрах пĕлетĕр. Ăна укçапа хакламаççĕ….

## Словарь ĕçĕ

**кĕлмĕç** — нищий, попрошайка
**пуç тай** — склонить голову
**ăнăçлах килмерĕ** — нет удачи
**унка лек** — попасть в окружение
**чун тух** — умереть
**йĕкехӳресем кăшлатчĕç** — грызут крысы
**çӳле улăхман** — не поднимались
**çӳретĕп ыйткаласа** — попрошайничаю
**тӳсеймерĕм** — не смог стерпеть
**выльăхсене туяннă пек** — будто покупали животных
**укçа виçипе виç** — мерить деньгами
**асăрханарах калаç** — быть внимательным в разговоре
**сутăн ил** — покупать
**йăпанмалли япала** — игрушка
**мăн кăмăллăн** — гордоеливо

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Драма сыпăкне рольпе илемлĕ вулăр.

## ЫЇйтусемпе ĕçсем:

1. Чăваш тĕррисен высавкинче Василисăпа Катя кампа паллашаççĕ?
2. Аргентинăра пурăнакан Сеньор ăçтан пулнă?
3. Вăл мĕнле майпа Аргентинăна лекнĕ?
4. Сеньор хăйĕн Тăван çĕр-шывне чăнах та юратни драмăн хăш йĕркисенче палăрать? Çав вырăна тупса вуласа парăр.
5. Куракансем чăваш тĕррисене мĕнле хак панă?
6. Чăваш тĕррисене туянакан текенсем пулнă-и?
7. Мĕншĕн Катя Чăваш тĕррисене укçапа хаклама хушмасть?

**Комедия** — жанр драматургии, изображающий такие жизненные положения и характеры, которые вызывают смех.

**Трагедия** — жанр драматургии, в основу которой составляют общественные конфликты, коренные проблемы человеческого бытия, столкновение личности с судьбой, обществом, миром. Трагедии обычно заканчиваются гибелью главного героя.

**Комеди** — драма тĕсĕ; трагедие хирĕçле жанр; унта характерсене, ĕç-пуçа, хирĕçўсене кулăшла, камитле йĕркелеççĕ.

**Трагеди** — драма тĕсĕ; пьесăри герой пысăк та усал вăя хирĕç кĕрешсе вилнине сăнлакан хайлав.

**Хамид Алимджан**
**(1909 - 1944)**



***Хамид Алимджанович Азимов*** *— узбексен паллă сăвăçи, драматургĕ, литература критикĕ, фольклорисчĕ, узбек литературин классикĕ. Вăл Узбекистанра Джизакере çуралнă. Джизаке шкулĕнче, Самарканд училищинче, унтан университетĕнче, педагогика академийĕнче вĕреннĕ. Журналистра, редакторта ĕçленĕ.*

*Хамид Алимджан пултарулăхĕ анлă, пысăк. Вăл сăвăсем, поэмăсем, истори драми, литература статйисем çырнă. Çавăн пекех вăл А. С. Пушкинăн «Кавказский пленник» повеçне, «Русалка» драмине, М. Ю. Лермонтовăн «Герой нашего времени» романăн «Бэла» сыпăкне, А.М. Горькийăн «Челкаш» калавне узбекла куçарнă.*

*Çыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Симург», «Айгуль и Бахтияр», «Край», «Счастье», «Зайнаб и Аман», «Слезы Роксаны» поэмăсем.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Хамид Алимджан хăш халăхăн сăвăçи?
2. Литературăн хăш жанрĕсемпе сăвăç тухăçлă ĕçленĕ?
3. Паллă сăвăç хăш çыравçăсен хайлавĕсене узбекла куçарнă?

**РОССИЯ**

Эй, Россия! Россия! Хăватлă, чипер çĕр,
Эсĕ ăслă та вĕççĕр çак пĕлĕт пекех.
Сар хĕвел те çурма çулĕнчен иртеймесĕр
Çутатса кăтартаймĕ сана талккăшпех.
Поездсем темиçе кун чупса пăшăхаççĕ
Анăçран тухăça васкаса иртнĕ чух.
Кайăксем те анса темиçе хут канаççĕ —
Санăн анлă çĕрне ансатах каçма çук.

Сан вăю пур усал-инкеке те çĕнтерĕ,
Хĕвелӳ пур тĕнчешĕн пăхать юратса.
Ирĕкпе телей çурчĕ туса эс çĕклерĕн,
Пĕр кил-йыш пек пурнатпăр унта савăнса.
Кун-çула сан паха сăпкунта пуçламашкăн,
Юрруна итлеме — питĕ пысăк хисеп.
Килсерен, аслă Пушкин ятне асăнсассăн,
Навон сăввине те кунта эп илтеп.

Аслă шухăшпала эс мана хавхалатрăн,
Ас тăватăп эп санăн вăрманусене.
Эс Мускав патĕнче тăшмана çапса ватрăн,
Куртăм эп сан хаяр, вут-кăварлă хĕçне.
Çав хĕллен тӳсме çук шартлама кунĕ
Кайăксем патлатса ӳкнĕ чух çĕр çине
Санăн ывăлусен чĕтренмерĕ те чунĕ,
Хуса ячĕç вĕсем тăшман çарĕсене.

Хĕвелтен çутăрах юрату вучĕ санăн,
Ун шевли айĕнче сивĕ юр ирĕлет.
Анчах эс çилленсе тавăрма пуçласассăн
Тăшман вăйĕ тусан пек вĕçет çилпеле.
Эй, Россия! Россия! Хăна анчах мар эп,
Эсĕ — манăн çĕр-шыв, килĕм-çуртăм эс ман.
Пĕр тумлам таранччен юнăма саншăн парăп,
Эпĕ — сан ывăлу, эп ӳтленнĕ санран.

*П. Хусанкай куçарнă*



## Словарь ĕçĕ

**хăватлă** — могучий
**çурма çул** — пол дороги
**талккăш** — площадь
**чупса пăшăх** — запыхаться от бега
**пысăк хисеп** — счесть и слава
**шартлама кун** — трескучий мороз
**кайăксем патлатса ӳкнĕ чух** — птицы падают замерво
**чĕтрен** — дрожать

**чун** — душа
**çилленсе тавăр** — отомстить

**ӳтлен** — полнеть, поправляться, прибавлять в весе

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Уçăмлă, палăртуллă вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвă мĕн çинчен?
2. Сăвва чăвашла кам куçарнă?
3. Раççей питĕ пысăк пулнине сăввăн хăш йĕркисем палăртаççĕ? Çав йĕркесене тупса илемлĕ вуласа парăр.
4. Халăхсен туслăхĕ çинчен сăввăн хăш йĕркисенче асăннă?
5. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине сăввăн хăш йĕркисенче асăннă? Вуласа парăр.
6. Сăввăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать? Çав йĕркесене тупăр, вуласа парăр.
7. Сăвăра поэтăн кăмăл-туйăмĕ палăрать-и? Мĕнле?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Тăван çĕр-шыв çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене аса илĕр.*

## ВĔРЕННИНЕ ПĔТĔМЛЕТНИ

1. *Чăвашла тата вырăсла терминсен тӳр килĕвĕсене тупăр.*

| | |
|---|---|
| 1) Юптару | а) Речевая характеристика |
| 2) Халăх юрри | ă) Сравнение |
| 3) Пуплев характеристики | б) Басня |
| 4) Уйланăш | в) Духовное завещание |
| 5) Танлаштару | г) Народная песня |
| 6) Выляну | д) Баллада |
| 7) Халал | е) Драма |

2. *Тĕслĕхсенчи хайлавсенчен хăшне Çеçпĕл Мишши çырман?*

а) «Эпĕ вилсен…»
ă) «Арçури»
б) «Чăваш чĕлхи»
в) «Чăваш ачине»

3. *Хайлавсен авторĕсене палăртăр.*

| | |
|---|---|
| 1. «Арçури» поэма | а) Спиридон Михайлов-Янтуш |
| 2. «Чăваш халăхне панă халал» халал | ă) Михаил Федоров |
| 3. «Сĕтел хушшинче» очерк | б) Геннадий Волков |
| 4. «Хам çинчен» очерк | в) Иван Яковлев |
| 5. «Ылтăн çĕр» калав | г) Никифор Охотников |

4. *Н. Никольский çырнă «Чăваш характерĕ» хайлав жанрне палăртăр.*

а) юмах
ă) очерк
б) выляну
в) сăвă

5. *Хăш сăввине П. Хусанкай çырнă?*

а) «Çӳпĕ»
ă) «Тезаврус лингве чувашорум»
б) «Çăкăр»
в) «Сас паракан пулмарĕ»

6. *Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.*

1) Хутла вĕренес (а) _______ эпĕ хӳмесем çине тĕрлĕ (ă)_________ ӳкерме юрататтăм. Пĕррехинче ун пек (б)_________ атте мана хытă ятланăччĕ. Анчах манăн хутла вĕренес (в)_________ ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ.

— Хутла вĕренес килет! Хутла вĕрент-ха, — тесе хытă (г)_______.

*(С. Михайлов-Янтуш «Хам çинчен» очерк сыпăкĕ)*

_Суйламалли вариантсем_:

а) Юрланипе, килнипе, ӳснипе, ташланипе, юлташпа.

ă) Эрешсем, ӳкерчĕксем, юлташсем, кĕнекесем, чечексем.

б) Вуланăшăн, ĕçленĕшĕн, сикнĕшĕн, аппаланнăшăн, кăшкăрнăшăн.

в) Юлташăм, кăмăлăм, çырулăхăм, ачалăхăм, çамрăклăхăм.

г) Калаттăм, ташлаттăм, макăраттăм, сикеттĕм, кулаттăм.

2) Пуçарулăх — чăваш характерĕнчи чи паллă (а) _______ пĕри. Хыт кукарлăх мар, пуясшăн çунни мар, (ă)_________ пурăнни мар. Чăваш, никама та пăхăнас марччĕ тесе, (б)_________ пулма тăрăшать.

Чăваш (в)_________ хăй нумай хушă вăй хурса ĕçленине (г)_______ салатса пĕтересшĕн мар, унпа (д)_______ усă курасшăн, тирпейлĕ пурăнасшăн.

*(Н. Никольский «Чăваш характерĕ» очерк сыпăкĕ)*

_Суйламалли вариантсем_:

а) Чечексенчен, уйрăмлăхсенчен, калаçусенчен, сăмахсенчен, килсенчен.

ă) Кулса, çырса, чечекленсе, ташласа, хытса.

б) Сыхă, хытă, хаваслă, перекетлĕ, вăйлă.

в) Этемми, çынни, пулли, хули, кĕнеки.

г) Вуласа, тăрăшса, ахаль, ĕçлесе, каласа.

д) Хитрен, ăслăн-тĕплĕн, каласан, пысăккăн, кĕскен.

7. *Панă йĕркесене вуласа тухăр, хайлав жанрне палăртăр.*

Ним хускалмасăр выртакан Çӳппе  
Тем тивĕçпе  
Çил килнĕ те çĕкленĕ çӳлелле —  
Кăвак тӳпенелле.  
Вун метр çĕкленсен калаҫ  
Çӳпĕ каçăртса пуçне:  
— Çич тӳпере халь эп!  
Ман алăра — мĕнпур тĕнче!

Вариантсем: *а) гимн; ă) сăвă; б) юптару; в) выляну (драма).*

8. *Çак йĕркесен авторĕсем камсем?*

1) Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан хытă тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьенĕн лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать.

2) «Чăваш чĕлхи илемлĕ те пуян  
Тезаврус лингве чувашорум».  
Çапла ят хунă латинла вăл хăйĕн

Чăваш сăмахĕсен кĕнекине.

3) Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ —
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!

4) Мĕнрен пулнă арçури
Ял хыçĕнчи çырмари?
Асаттесем ас тăваççĕ:
Арçынтанах пулнă, тет,
Энтри ятлă çынтан, тет.

*Вариантсем:* Çеçпĕл Мишши, Геннадий Волков, Константин Иванов, Иван Яковлев, Петĕр Хусанкай, Михаил Федоров.

9. *Чăваш сăвăçи Порфирий Афанасьев хăйĕн пĕр поэминче чăвашран тухнă паллă космонавт çинчен, Андриян Николаев çинчен, çырнă. Мĕн ятлă-ши çак поэма?*

   1) «Нарспи»
   2) «Ирхи сывлăм»
   3) «Арçури»
   4) «Кăйкăр»

10. *Сăвăсене вуласа тухăр, темине палăртăр.*

1) Хаклă çĕрĕм-шывăм, питĕ савăнса
Сан çинчен юрлатăп юрă мухтаса.
Сан патна васкатăп, сансăр тăраймастăп,
Ĕмĕр-ĕмĕр пурăн эс телей курса *(Юхма Мишши).*

2) Чĕлле эп тытатăп типтерлĕн.
Вăл — çăкăр. Ун ячĕ çўлте.
Хĕвел пайăрки пек хĕлхемлĕн
Куçать ун ăшши ман ўте *(Алексей Воробьев).*

3) Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем
Парсам пăлхавлă чунăма.
Пар чăнлăх, савăнăç, илем,
Пар ирĕк — çутăрах çунма *(Митта Ваçлейĕ).*

**ТУПМАЛЛИ**
**СОДЕРЖАНИЕ**

Халăх сăмахлăхĕ — Устное народное творчество ……………….........
Литература юррисем — Авторские песни ……………………………….
Пĕлĕве сутăн илеймĕн — Знание за деньги не купишь ……………
Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ — Симбирская чувашская школа ……….
Тăван кил — ылтăн сăпка — Родной дом — золотая колыбель ….
Тăван чĕлхе — эс чи пахи — Родной язык — святой язык …………….
Чăваш халăх пултарулăхĕ, йăли-йĕрки — Обычаи и традиции чувашского народа ……………………………………………………………………...
Усалтан тар, ырă патне пыр — Беги прочь от дурного, иди к доброму …
Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен — Нет сильнее человека в этом мире никого ……………………………………………………………………...
Ĕç çынна илем кӳрет — Труд красит человека …………………………….
Кашни кайăк хăй йăвине сават — Всякий кулик своё болото хвалит ….
Вĕреннине пĕтĕмлетни ……………………………………………………